32-203
31

Ç. П. ПЕТРОВ

# ЙАЛХУÇАЛĂХНЕ ЙЕРТСЕ ПЫРАССИНЕ ВĂЙЛАТАССИШĔН

Хакĕ 30 пус

ЂĂВАШИСТАТ × 1932 × ШУПАШКАР

Ҫ. П. ПЕТРОВ

# ЙАЛХУҪАЛӐХНЕ ЙЕРТСЕ ПЫРАССИНЕ ВӐЙЛАТАССИШӖН

ПСК(п)П ЂӐВАШ ОПКОМӖН ҪЕКРЕТ-
ТАРӖ ПЕТРОВ Ҫ. П. ЙУЛТАШ ИЙУ-
ЛӖН 30-ЂЕ ОПКОМӐН 3-МӖШ ПЛЕНӐ-
МӖНЂЕ ТУНӐ ТОКЛАТА, ТАТА ИЙУ-
ЛӖН 26-ЂЕ ПАРТТИН ШУПАШКАР
ХУЛИНЂИ АКТИЗӖПЕ ПӖРЛЕ ПУЛН Ӑ
ОПКОМ ПЎРОВӖНЂЕ КАЛАНӐ СӐМА-
ХА ҪЕКРЕТТАРИАТ ҪЫРСА ПЫНӐ
ТӐРӐХ П. ИВАНОВ ЙУЛ. ТЎРЛЕТСЕ
ҪЫРНӐ

ЂӐВАШИСТАТ 1932 ШУПАШКАР

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары
Канашская, 16

# Совет сойусӗнҙи колхос хуҫалӑхӗ ӳссе ҫирӗпленсе пыраҭ.

Йулташсем! Колхоссемпе совхоссем йалхуҫалӑхӗнҙе тӗппипех ҫӗнтерсе илҙӗҫ. Совет сойусӗ сотсиалисӑм ҫулӗ ҫине татӑклӑнах тӗрекленсе тӑҙӗ. Кунпа пӗрлех пирӗн ума йалхуҫалӑхне йертсе пырас пӗлӗшпе ҫӗнӗ сатаҙсем тухса тӑраҫҫӗ. Какановиҙ, тата Молӑттӑв йулташсем парттин пӗтӗм Украинӑри 3-мӗш конферентсинҙе тухса каланӑ сӑмахсем пире йалхуҫалӑхне, колхос строиттӗлствине йертсе пырассине вӑйлатма хушаҫҫӗ.

Ҫак пленӑма епӗр йалхуҫалӑхне хӑпартас, тырпулсене пухса кӗртес, тырпул хатӗрлев кӑмпанипе кӗр акине иртерес, тата ҫав ӗҫсене тунӑ майӑн пирӗн колхоссемпе совхоссене хуҫалӑх тӗлӗшӗнҙен ҫирӗплетес ыйтусене сӳтсе-йавма пухрӑмӑр.

Сотсиалисӑм строиттӗлствин никӗсӗ ҫӗршыва сотсиалисӑмла интустрилесе пыни пулаҭ. Интустрийе, уйрӑмӑнах шултра интустрийе пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӳстерсе пырассишӗн пирӗн партти мӗн пур вӑйпа кӗрӗшет. Ҙӑн та, пӗремӗш петтилеткӑра йӑвӑр промышлӗннӑҫа поҙшевикла хӑвӑртлӑхсемпе ӳстерсе пытӑмӑр. Ҫак тапхӑрта йӑвӑр промышлӗннӑҫ ҫирӗп ура ҫине тӑҙӗ. Ку ӗнтӗ пӗтӗм халӑх хусалӑхне технӗккӑла реконструксилесе ҫитерме хамӑр ҫӗршывра кирлӗ пек никӗс хывнине, шултра машшинлӑ интустрин никӗсне хывнине пӗлтерет. Ку сотсиалисӑм малалла хӑвӑртгӑн ҫӗнтерсе пырассине татса паракан ҫӗнтерӳ пулаҭ.

Кунпа пӗрлех тата акӑ мӗн палӑртмалла. Интустрийе малашне те пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе илсе пырас тесен, пирӗн йалта ӗҫлессине аванлатмалла. Йалхуҫалӑхне ӳстерсе хӑпартса пымасӑр промышлӗннӑҫа пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӳстерсе пыма пулмасҭ. Ҫакӑн пирки парттин пӗтӗм Украинӑри 3-мӗш конферентсинҙе Молӑттӑв йул. акӑ мӗн калаҭ:

> „Поҙшевиксен акӑ мӗн астӑвас пулаҭ: йалхуҫалӑхне хӑпартса пымасан пирӗн промышлӗннӑҫ строиттӗлстви те малалла кайма пултараймасҭ, унсӑрӑн сотсиалисӑмла интустрин пысӑк хӑвӑртлӑхсем те пурнӑҫа кӗрсе пыма пултараймаҫҫӗ“.

Ҫакна ӑнланса илмелле. Промышлӗннӑҫ ӗҫлекен ҙӗр тавара нумайӗшне йалхуҫалӑх параҭ. Промышлӗннӑҫра ӗҫлекен рапоҙҙисем йалхуҫалӑх протуксипе тӑранса пурӑнаҫҫӗ. Ку пит те ӑнланмалла ӗнтӗ. Анҙах кулленхи ӗҫре ӑна нумайӗшӗ ӑнланмаҫҫӗ, йе манаҫҫӗ.

Пӗрӗмӗш петтилеткӑна пурнӑҫа кӳртме тытӑннӑ вӑхӑта илсе пӑхар. Ун ҙухне колхоссем шутсӑр сахал пулнӑ. Йалхуҫалӑхӗнҙе вакӑран та вакӑ сапаланҙӑк хуҫалӑхсемҙҙӗ. Вӗсем таварлӑ про-

туктси пит те сахал кăларнă. Çак йапала сотсиалисăм строиттĕлствине ђăрмантарса тăнине аван астăватпăр. Партти шултра промышлĕннăçа пысăк хăвăртлăхсемпе ӳстерсе пырассишĕн кĕрешнипе пĕрлех, йалхуçалăхне хăпартас ыйтăва çивĕђђĕн кăларса тăратрĕ. ПСК(п)П Тĕпкомĕн 1928 ç. нойапĕр уйăхĕнђе пулса иртнĕ пленăмĕнђе Сталин йул. акă мĕн каланă:

„Пирĕн, интустри пĕтĕм хуçалăха, çав шутран йалхуçалăхне йертсе пыраканĕ пулаť, интустри сапаланђăк хуçалăхлă йалхуçалăхне коллективисатси никĕсĕ çинђе урăхлатса çĕнетме май параканĕ пулаť, теççĕ. Ку пит те тĕрĕс. Çакăнтан пирĕн пĕр минутлăха та ђакмалла мар. Анђах çакна та астăвас пулаť. Йенђен интустри йертсе пыраканĕ пулаť пулсан, йалхуçалăхĕ интустрин никĕсĕ, интустрин протуксине çăтакан рынăк, интустрине ђĕрĕ тавар, протоволђстви параканĕ, пирĕн хуçалăха кирлĕ опорутăванисене (машшин таврашне) илсе килме експăртла тавар параканĕ пулса тăраť. Йалхуçалăхне пит те кайа йулнă технĕккă условисенђе хăварса, йалхуçалăхне реконструксилемесĕр, ăна интустри патне çывхартмасăр, çавна май интустри вађђи йалхуçалăхлĕ никĕсе хывмасăр интустрине хăйне малалла ӳстерме пулаť-и? Çук, пулмасť. Кунтан вара йалхуçалăхне çĕнĕ технĕккăла никĕс çинђе реконструксилессине васкавлăн туса пыма, ăна мĕнле пулсан та ытларах машшинсем парас сатађ тухса тăраť. Анђах çак сатађа пурнăçлас тесен пирĕн интустрин ӳсse пырас çĕрте васкавлă хăвăртлăх кирлĕ“.

Малалла:

„Йалхуçалăхне майĕпе, анђах пĕрмайах, çине тăрсах çĕнĕ технĕккăла никĕс, шултра происвотствăлла никĕс çине куçарса пымалла, ăна сотсиалисăмла промышлĕннăç патне çывхартмалла. Йе çак сатаđа пурнăçлатпăр—вара сотсиалисăм татăклăнах çĕнтерессi шанђăклă пулаť, йе епĕр çакăнтан пăрăнатпăр, çак сатаđа пурнăçламастпăр—вара кăпиталисăм патне çавăрăнса пырасси хăтăлмалла мар йапала пулаť, тет Сталин йул.

Унтан вара мĕн куратпăр. Хресђенсене йертсе пырас çĕрте ленинла политтĕке тытса пынă, промышлĕннăç, уйрăмăнах шултра промышлĕннăç пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пынă никĕс çинђе йал сотсиалисăмлă улшăнса пырас çул çине тăђĕ. Вăтам хресђенсем йала коллективлас çул çине татăклăнах тăђĕç. Еçхресђенсен йышлă масси талкăшпех колхоса куçнă никĕс çинђе кулаксене класĕпех пĕтерес çул çине куçрĕ. Колхоссем хăвăрт йышланса ӳссе пыни, совхоссен строиттĕлствине сарса йани тĕш тырă хуçалăхне хăпартма, унăн таварлăхне ђылай ӳстерме май пађĕç. Ку пире сотсиалисăм строиттĕлствине пысăк хăвăртлăхсемпе туса пыма май пађĕ.

1932 ç. Совет сойусĕнђе çур тыррисем акнă пĕтĕм çĕртен пилĕк пайран тăвата пайне совхоссемпе коллоссем акса хăвар ђĕç. Ку, Совет сойусĕ йалхуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетес çул çине татăклăнах тĕрекленсе тăнине пĕлтерет.

1931-мĕш çулта пилĕк пысăк районсенђе: Вăтам, тата Анат Атăлра, кăнтăр йенђи Уралра, Хĕвеланăç Çĕпĕрте, тата Касакстанра çанталăк уйар тăнипе тырпул нађар пулђĕ. Анђах патшалăх пулăшу панипе асăннă районсем çураки кампанине тивĕçлĕн иртерђĕç. Паллах, йалхуçалăхĕнђе харпăрлă хуçалăхсем пуç пулса тăнă пулсан, çак çўлерех асăннă районсенђе тырă нађар пулни шутсăр хытă сисĕнтернĕ пулĕђђĕ. Йалхуçалăхĕнђе колхоссемпе совхоссем пуç пулса тăнипе çеç, паллă районсенђе тырă пулман пулсан та епĕр 1931-мĕш çул 1930-мĕш çулхинђен нумайтарах тырă хатĕрлеме пултартăмăр, тырă пулман районсене пысăк пулăшу пама пултартăмăр, кăçалхи çуракине ăнăçлăн иртертĕмĕр, çуракинђен полђшевикла çĕнтерўсемпе тухрăмăр.

Тепĕр йенђен, 1931-мĕш çулта тырпул тăвакан пысăк районсенђе тырă пулманни, вăл економĕклĕ ыйту çеç мар, хамăрăн шалти политтĕкла ыйту çеç те мар, вăл Совет сойусĕн тĕнђе лару-тăрăвĕ йенђен илсен пысăк ыйту. Тырă нађар пулнă районсенђе патшалăх кирлĕ пулăшу парайман, кăçалхи çуракине ăнăçлăн иртереймен пулсан, тĕнђери пуршуаçи пирĕн çинђен темĕн тĕрлĕ киревсĕр елеклеме тапратасси никамшăн та çекрет мар. Хамăр çĕршывра кулак хăйĕн поçитсине тĕреклетме тăрăшни те никамшăн та çекрет мар. Тĕнђери пуршуаçи, хамăр çĕршывра кулак пирĕн пĕђĕк çитменлĕхсем те Совет сойусне хирĕç кĕрешўре усă курма тăрăшни те никамшăн та çекрет мар.

Анђах колхоссемпе совхоссем йалхуçалăхĕнђе пуç пулса тăнипе, акротехнĕккăла ĕçсене пурнăçа кўртсе пынипе тырă пулман районсенђе выçă ларма памарăмăр, çуракине ăнăçлăн иртертĕмĕр, Совет сойусĕ йахуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетес çул çине татăклăнах тĕрекленсе тăђĕ. Çапла вара тĕнђери пуршуаçине Совет сойусĕнђен мăшкăлама, тăрăхлама, Совет сойусĕ çинђен елеклеме памарăмăр. Тĕнђери пролеттариата татах тепĕр хут, Совет влаçĕ темĕн пек пысăк йăвăрлăха та çĕнтерме пултарнине кăтартрăмăр.

## Айакран йалхуçалăх протукси кўрекен респуплĕкрен таварлă протукси кăлараканĕ пулса пыратпăр.

Пĕтĕм Совет сойусĕн халăх хуçалăхĕнђе тунă çĕнтерўсен, уйрăмăнах шултра интустрин полђшевикла çĕнтерўсен никĕсĕ çинђе, парттин ленинла çулйĕрне тĕрĕс пурнăçласа пынă никĕс çинђе Ђăваш респуплĕкĕ те йалхуçалăхне çĕнĕ, машшинлă технĕккă йенĕпе реконструксилес, ăна çўлĕ сыпăка хăпартас тĕлĕшпе пысăк çитĕнўсем турĕ.

Йалхуçалăхне 1930-мĕш çулђен илсе пăхсан мĕн куратпăр? 1929-мĕш çулăн октăпĕрĕн 1-мĕш тĕлне коллективисатси мĕн пурĕ те 3,65% кăна пулнă. Ђас-ђасах тырă пулман. Айакран пĕрмайах вăрлăх кўрсе тăнă. Сухапуçĕ, виçĕ пусуллă уй йалхуçалăхĕнђе пуç пулса тăнă. Трактăр ĕмĕтре çеç пулнă.

Халĕ мĕн куратпăр? Халĕ ĕç йăлтах урăхла тăрăт. Халĕ кол-

лективисатси 40 проҫҫӑнран иртрӗ. Виҫӗ ҫул хушши умлӑ-хыҫлах ҫанталӑк условисем йурӑхлӑ пулмарӗҫ, ҫи кирлӗ вӑхӑтра ҫумáр пулмарӗ. Ӑна пӑхмасӑр епӗр иртнӗ ҫул унҫҫен малтанхи ҫулҫҫен ҫылай нумай тырӑ туса илтӗмӗр. 1931-мӗш ҫулхи тырпул хатӗрлев планне унҫҫенхи ҫулпа танаштарсан виҫӗ хут ытла пысӑкрах. Апла пулсан та тырпул хатӗрлев планне 1932-мӗш ҫулӑн йанварӗн 10-мӗш тӗлне тултартӑмӑр. Ӗлӗк Ҫӑваш ҫӗршывне ҫӑннипех те ҫухӑн ҫӗршыв, тесе шутланӑ. Халӗ пирӗн ҫине урӑхла пӑхаҫҫӗ. Иртнӗ ҫул пысӑк районсенҫе тырӑ пулман пулсан, Ҫӑваш республӗкӗ ку тӗлӗшпе телейлӗ вырӑн йышӑнса тӑраӗ. Епӗр тырпул пулман районсене пулӑшу кӑтартрӑмӑр, пулӑшу памалла пулнӑ та. Ҫаксем вӗсем колхос строиттӗлстви ҫӗнтерсе пынин, акротехнӗккӑла ӗҫсене ҫине тӑрсах пурнӑҫланнин, йалхуҫалӑхӗ ҫӗнӗ, машшинлӑ технӗккӑ никӗсӗ ҫинҫе реконструксиленсе пынин ҫимӗҫӗсем пулаҫҫӗ. Пирӗн ҫӗнтерӳсем парттин ҫулйӗрӗ тӗрӗсси ҫинҫен каласа параҫҫӗ. Анҫах ҫакна практӗкла ӗҫре пурӗш те кирлӗ пек ӑнланса илмен, йе манаҫҫӗ.

Ҫуракине илер. Ҫӑн та хӑшпӗр районсем ҫураки планне тултараймарӗҫ, план уйрӑм култтурӑсем тӑрӑх тулман, ҫураки вӑрӑма тӑсӑлҫӗ, акротехнӗккӑла ӗҫсене пурнӑҫлас ҫӗрте пысӑк ҫитменлӗхсем пур (вырӑнӗ-вырӑнӗпе акасухана йапӑх туни, вӑрлӑха тасатса акманни т. ыт. те). Ку ҫитменлӗхсем ҫинҫен уҫҫӑмӑнх каламалла. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем пулсан та, епӗр ҫураки кампанинҫен полшевикла ҫӗнтерӳсемпе тухрӑмӑр. Епӗр РФССР Ҫӗрӗҫ кӑмиссариаҫӗ, тата крайри оркӑнсем панӑ плана ытлашшипех тултартӑмӑр. Акакан ҫӗр талкӑшне ҫылай ӳстертӗмер. 1931-мӗш ҫул ҫуртри тыррисем 348,462 кектар акса хӑварнӑ пулсан, кӑҫал 380,379 кектар акса хӑвартӑмӑр. 1931-мӗш ҫул колхоссем 88,034 ка акнӑ пулсан, кӑҫал вӗсем 174,062 ка акса хӑварҫӗҫ. Совхоссем 2169 ка вырӑнне 4,685 ка акса хӑварҫӗҫ. Тулӑ акакан ҫӗр лаптӑкне ӳстертӗмӗр. Ҫылайӗшӗсем „пирӗн ҫӗр ҫинҫе тулӑ пулмаӗ“, тесе калаҫаҫҫӗҫ. Иртнӗ ҫул тулӑ аван пулҫӗ. Иртнӗ ҫул тулӑ 9,861 кектар акнӑ пулсан, кӑҫал 19,750 кектар акса хӑвартӑмӑр. Технӗккӑлӑ култтурсене пӗлтӗрхинҫен ҫылай акса хӑвартӑмӑр. 1931-мӗш ҫул нумай пусуллӑ уй 468,872 кектар пулнӑ, кӑҫал ӑна 703,872 кектара ҫитертӗмӗр. Йалхуҫалӑхӗ ҫултан ҫул машшинлансах пыраӗ. Кӑҫал пирӗн 8 МТС ӗҫлет. МТС кӗрекен колхоссем 23,906 кектар вырӑнне кӑҫал 46,136 ка акса хӑварҫӗҫ. Колхоссем йалхуҫалӑхӗнҫе йертсе пыракан вӑй пулса тӑҫӗҫ. Колхоссем вӗсем уйрӑм хуҫалӑхран нумай тупӑшлӑраххине кӑтартрӗҫ.

Петтилеткӑна кӗнӗ вӑхӑтра сылтӑм оппортуниссем „йалхуҫалӑхӗ кайалла ҫакса пыраӗ“, „Ҫӑваш республӗкӗ таварлӑ протукси кӑларакан районтан айакран ҫимӗҫсем кӳрсе килекен район пулса пыраӗ“, тесе сӗпӗлтетрӗҫ. Пирӗн ҫитӗнӳсем оппортунисла теорисене пуҫпех ҫапса салатрӗҫ. Халӗ хӑйуллӑн калама пултаратпӑр. Пирӗн республӗк айакран ҫимӗҫсем кӳрсе тӑракан районран коллективисатси никӗсӗ ҫинҫе хӑй таварлӑ протукси кӑларакан район пулса пыраӗ. Ҫак пирӗн йалхуҫалӑхӗнҫе иртнӗ тапхӑрта тунӑ тӗп ҫӗнтерӳ пулаӗ.

# Кашни пуҫахшăн, пĕрҫĕшĕн кĕрешмелле.

Ҫапла ĕнтĕ тырпул пухса кĕртес кампанине пысăк ҫĕнтерусемпе кĕтĕмĕр. Пирĕн тырпул пухса кĕртес кампанине ăнăҫлăн иртерсе ку таранҫҫен тунă ҫитĕнӳсене ҫирĕплетсе татах пысăк ҫитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле. Тырпула пухса кӳртесси пĕтĕм йалхуҫалăх ҫулĕнҫи ĕҫе татса парать. Ҫавăнпа ĕнтĕ партти Опкомĕ ҫак ĕҫ тавра пĕтĕм вăйа мопилисатсилет, ку ыйту пирĕн кун йĕркинҫен татăлмасть. Партти Опкомĕн иртнĕ пленăмĕ ҫураки кампани мĕнле иртни ҫинҫен, тырпул пухса кӳртес ыйтăва тĕплĕн сӳтсе-йавса татăклă кăтартусем парса хăварҫĕ. Ҫак ыйту тăрăхах ийулĕн пуҫламăшĕнҫе парттин райкомĕ ҫекреттарĕсен канашлăвне иртертĕмĕр. Ҫак ыйтăвах Тĕпĕҫтăвкомĕн IV-мĕш ҫеҫҫийĕ сӳтсе йаврĕ. Ийулĕн 8-мĕшĕнҫе Шупашкар хулинҫи партти активне, тата Тĕпĕҫтăвкомăн комунисла фрактсине пĕрле пухса татах сӳтсе-йаврăмăр. Районсене уполномоҫҫăнăйсем ҫылай кăларса йатăмăр. Вĕсемсĕр пуҫне партти Опкомĕн пӳро ҫленĕсем, ОКК преҫитиум ҫленĕсем пур районсенҫе те пулҫĕҫ. Вĕсем партти Опкомĕ кăтартса панисене вырăнсенҫе мĕнле пурнăҫланине тĕрĕсленипе пĕрлех пулăшу кăтартрĕҫ.

Районсенҫен таврăнсан, ийулĕн 26-ҫе Опком пӳровĕ тырпул пухса кӳртесси, тырпул хатĕрлесси, колхос строиттĕлстви ҫинҫен Шупашкар хулинҫи партти активĕпе пĕрле пухăнса сӳтсе-йаврĕ.

Районсене тĕрĕсленĕ, колхоссенҫе пулнă хыҫҫăн мĕн куратпăр? Тырпул пухса кӳртес кампанине ҫителĕклĕ хатĕрленменнипе кĕни курăнҫĕ. Ҫакна май тырпул пухса кӳртес ĕҫре пысăк ҫитменлĕхсем пурри палăрҫĕ. Иккĕмĕш пленăмранпа пĕр уйăх кăна иртрĕ пулсан та, партти Опкомĕн пӳровĕ васкавлăн 3-мĕш пленăм пухас тесе йышăнҫĕ. Ку пленăма ҫленсемсĕр пуҫне райĕҫтăвком претҫегаттĕлĕсене, ҫĕрпайĕн саветушҫисене, колхоссойус претҫегаттĕлĕсене, тата районри хаҫат регакгăрĕсене пухрăмăр. Мĕншĕн апла? Мĕншĕн тесен васкавлăн пленăм пухса, пленăма районри рукковоттитĕлсене ҫĕнсе пĕтĕм вăйа тырпул пухса кӳртес ĕҫри ҫитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме мопилисатсилессишĕн, ытти ĕҫсенҫе, тырпул хатĕрлес, кĕраки кампанине иргерес ҫĕрте ҫакнашкал ҫитменлĕхсем тăвасран вырăнсене асăрхаттарасшăн епĕр. Опкомăн иккĕмĕш пленăмĕ тырпул пухса кӳргесси ҫинҫен татăклă кăтартусем парса хăварҫĕ. Пĕтĕм вăйа хурса ҫинҫех ҫав кăтартусене пурнăҫланă пулсан, ҫитменлĕхсем сахал пулнă пулĕҫҫĕ. Анҫах нумай районсене „вырăнтан хусканма“ ҫылай нумай вăхăт кирлĕ пулҫĕ. Ниме йурăхсăр, киревсĕр йапала вăл. Йулташсем вăхăта уссăр нумай иртерҫĕҫ. Йагарлансах тытăнсан ҫитменлĕхсене пĕтерме вăхăт пур. Анҫах пĕтĕм вăйа мопилисатсилени кирлĕ.

Тырпула пухса кӳртес кампани умĕнҫе пит те пысăк сатаҫсем тăраҫҫĕ. Тĕп сатаҫ вăл—тырпул тăкакĕпе кĕрешесси.

Партти Тĕпкомĕ акă мĕн калană:

„Кăҫалхи ҫул тырпула уйхиртен пуҫтарса кĕрес кампанире вăйа—иртнĕ кампанисенҫе пулнă тĕп ҫитменлĕхсене

пĕтерес ĕçе хумалла, вăл çитменлĕхсем: тырра, кăшмана, ђĕкĕнтĕре т. ыт. технĕккăллă куђттурсене нумай тăккаласа пĕтерни, тырпул пуçтарса кĕрес ĕç нумайа тăсăлни, трактăрсен, лашасен вăйне нађар органисатсилени, ĕçе органисатсилеме пĕлменни, „конвейăрлă“ йĕркепе ĕçлени, вырнă тырăсене çĕмелсемпе суратсене лартманни пулнă“.

Малалла:

„Тырпул пуçтарса кĕрес пĕтĕм ĕçĕн тĕп вырăнне—**тырпул тăкакĕпе кĕрешессине хумалла**“, тенĕ.

Çак сатађа пурнăçлас, тесен çӳлтен пуçласа вырăнсене çитеђђен ĕçе лайăх органисатсилемелле, тырпула вăхăтра вырса пуçтармалла.

Пĕр ђăваш респуплĕкéнђе кăна акротехнĕккăла ĕçсене çителĕклĕн пурнăçламаннипе, сийен кӳрекен хурткăпшанкăсемпе тивĕçлипе кĕрешменнипе, пуринђен ытла тырпула тăккаланђăклă вырса пуçтарнипе, èçе пуçтарусăр тунипе 4 мĕлйун пăт ытла çухататпăр.

Ђылай колхоссем ђăн та пођшевикла паттăрлăхпа кĕрешеççĕ. Сăмахран, Кĕçĕнйелђĕк р-ђе „Канаш“ колхоç ыраша 5 кун вырăнне 4 кунта вырса пĕтернĕ. Çав районтах „Паххăр“ колхос 7 кун вырăнне 5 кунра, „Тимирйаççĕв“ колхос 6 кун вырас вырăнне 5 кунра вырса пĕтернĕ. Машшинсене илсен, малта пыракан колхоссем кунне 7—10-шер кектар выраççĕ. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарнĕђђĕствă, малта пыраканĕсем кайра пыраканĕсене пулăшасси сарăлса та сарăлсах пыраť. Акă тĕслĕхсем. Ейпеç колхосĕ (Йĕпреç районĕ) утă çулма тухаđђен колхоçнĕксен пуххинђе ССРС Халăх кăмиссарĕсен канашĕпе партти Тĕпкомĕн постановленине сӳтсе-йавнă. Вĕсем утăна 10 кун вырăнне 8 кунра çулса пуçтарнă. Пĕтĕм ĕç сотсиалисăмла ăмăртупа утарнĕђђĕствă йенĕпе пулса пынă.

Кивĕ-Акташри „Кунер“ колхоса (Сĕнтĕрвăрри районĕ) илер.

Ку колхосра та парттипе правиттĕлствă постановленине колхоçнĕксем тĕплĕн сӳтсе-йавнă. Колхосра мĕн çуркуннеренпех 4 происвотствă прикати. Тырпул тăкакĕпе кĕрешессине тĕп вырăна хурса кĕрешеççĕ: тырă вырмалли машшинсем çумне тырă пĕрђисем пухакан йешђĕксем туса лартнă, пионер отређĕ вырнă хыççăн пуђахсене пухма пионерсенђен ушкăнсем органисатсиленĕ. Прикатăсем, прикатăсенђе ђленсем хушшинђе сотсиалисăмла ăмăрту вирлĕн пыраť. Шиппăв йул. пуç пулса тăнă 3-мĕш номĕрлă прикатă нихăш прикатăран малта пыраť. Шиппăв йул. кам мĕн ђухлĕ вырнине çеç мар, тата кам мĕнле вырнине тĕплĕн шута илсе пыраť.

Колхоссем пĕр-пĕрне пулăшассине илес. Пăрађкав районĕнђе ийулĕн 26-мĕш тĕлне 43 колхосран 19-шĕ тырă вырса пĕтернĕ. Малта пыракан колхоссем ытти колхоссене пулăшма тытăннă, вĕсем хăйсем вырса пĕтернĕ хыççăн 20 тырă вырмалли машшин ытти колхоссене тырă вырма панă. Пăрађкав районĕнђех 3-прикатă Вăрнар районĕнђи колхоссене пулăшас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Сăмахран, Аслă-Ађкеш колхосĕнђен Вăрнар районĕнђи Мыçлетс колхосĕнђе пĕр прикатă ĕçленĕ. Ку прикатă мĕн тупса палăртнă? Мыçлетс колхосĕн правленинђе йут етемсем, кулаксем ларнă.

Колхос правлени Пăраҫкав районĕнҫен килнĕ колхосла прикатă ҫинҫен „утăна ҫулаççĕ те, хăйсем патне илсе кайаççĕ“ тесе киревсĕр сăмах сарма тытăннă. Прикатăна ĕçлеме паман, хăваласа йанă.

Тепĕр прикатă Сийавă колхосĕнҫен Кăкшăм колхосĕнҫе ĕçленĕ. Прикитă ҫăн-ҫăнах маттур ĕçленĕ. Унăн маттур ĕçе ҫинҫен ҫак тĕслĕхсем те аван кăтартса параççĕ. Прикатă ĕçĕ тытăнсан колхосран тухма сайавлени панисем, 6 хуçалăх сайавленисене кайалла илнĕ. Прикатăн пĕр ҫленне Кăкшăм колхоçнĕкĕсем претçетаттĕле суйласа лартнă. Колхоссем хăйсен тыррине вырса пĕтернĕ хыççăн, уйрăм хуçалăхпа пурăнакан ҫухăнпа вăтамсене пулăшаççĕ. Сăмахран, Шăнкăртам районĕнҫе „Танк“ колхос хăйĕн тыррине планпа палăртса хунинҫен пĕр кун ҫурă малтан вырса пĕтерсе ҫухăнсемпе вăтамсене пулăшма 16 колхоçнĕк, пĕр тырă вырмалли машшин уйăрса панă.

Малта пыракан колхоссем „Малтанхи тырра—патшалăха“, тенĕ лосăнка патшалăха тырă пама (сутма) тытăнҫĕç те.

Çак тĕслĕхсем, тата ытти çавăн пек паттăрлă ĕçĕн нумай тĕслĕхĕсем колхоссем тĕрекленсе пыни, колхоçнĕксен политтĕкла хастарлăхĕ ÿсни ҫинҫен, парттин авторитеҫĕ колхоçнĕксен умĕнҫе виçесĕр пысăкки ҫинҫен аван каласа параççĕ.

## Тырпул пухса кӳртес кампанин малтанхи урокĕсем.

Çӳлерех епĕ çитĕнӳсем, паттăрлă ĕçĕн тĕслĕхсем ҫинҫе ҫылай ҫаранса тăтăм. Анҫах кунта пирĕн ĕç пур çĕрте те йап-йака, аван пырать тесе калама пулмасть. Пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул пухса кĕртес кампанийе çителĕклĕ хатĕрленменнипе кĕтĕмĕр. Тырпул пухса кĕртес кампани малтанхи кунĕсенҫи уроксем ку ĕç çителĕклĕ пыманни ҫине кăтартса параççĕ. Ку ыйту ҫинҫе ытларах ҫаранса тăма лекет. Мĕншĕн тесен, епĕр çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерсе тырпул пухса кĕртес, тырпул хатĕрлес кампанисенҫен поҫшевикла çĕнтерĕвĕсемпе тухассишĕн кĕрешетпĕр.

Çуракине илсе хаҫхи вăхăтра çитеҫҫен йĕрлесе тухсан мĕн куратпăр? Ҫи малтан çум çумлассине илер. Çум çумлассине нумай çĕрте тĕсне тăвас тесе кăна тунă вĕт. Ҫылай çĕрте ку ĕçе халĕ те туса пĕтермен. Тутаркас, Шăмăршă районĕсенҫе çур тыррисем çум айĕнҫе. Тутаркаспа Шăмăршă районĕсенҫе кăна-и? Çук, вĕсенҫе çеç мар, ытти районсенҫе те çум айне пулнă тырăсем нумай. Çум çумлас ĕçе çелтен çеç ăнланаççĕ. Çум çумласси тавра акротехнĕккăна пурнăçлассишĕн ҫăнҫăн акитатсилени çук. Çум курăкĕсене илер-ха. Уйар çанталăкра вĕсем тырпула пĕтĕмпе хуплаcа илеççĕ. Çумăрлă çанталăкра çĕрĕн пĕтĕм сĕткенне ĕмсе, тырпула каллех пĕтĕмпе хупăрласа илеççĕ. Колхоçнĕке, ĕçхресҫенне çакăн ҫинҫен тĕплĕн каласа ăнлантарсан çумламасăр тăма пултараççĕ-и вĕсем? Çук, çумламасăр ҫăтма пултараймаççĕ. Анҫах çакăн ҫинҫен путлĕн, тулăклă каласа ăнлантарни çук. Хăшпĕр çĕрте „утмăл турата çумлама йурамасть, ăна çумласан тырă тымар-

та тытăнса тăраймасť", тесе калаççĕ. Акă мĕнле тискерлĕх пур. Çак тискерлĕхе отпор памаççĕ вĕт. Çум çумласси вак-тĕвек, пĕҫĕк ĕç мар. Ку ыйту çине пўрне витĕр пăхни пулмалла мар. Çум çумлассине йатарласах туни тырпулăн пысăк тухăçлăхĕшĕн кĕрешни пулаť. Çум çине талкăшпе наступлени тумалла.

Халĕ тата утă çулассине илер. Утă çулса пуçтарасси вăрăма тăсăлҫĕ. Çапла епĕр утăна икĕ хут çулассине пурнăçлаймастпăр, тепĕр йенҫен вăхăтра утă çулма тытăнмасăр утăн сĕткенне нумай çухататпăр. Мĕншĕн кайа йулса çулаççĕ? Мĕн, вăхăтра утăна тухма условисем çук-и мĕн? Условисем мар, сăлтав урăхра. Акă Тутаркаспа Шупашкар районĕсем пĕрешкел условисенҫе пурнаççĕ. Тутаркас районĕ çулса пĕтерни 3—4 кун çитет, Шупашкар районĕ утă çулма çеç йăраланса тухаť. Çавна май вара вăхăтра тырă вырма тухаймаççĕ. Шупашкар районĕнҫе тырă вырас ĕç ҫăн та наҫар пыраť. Пĕтĕмешпе илсен, утă çулассине вăхăтра туса иртерейменĕмĕр.

Малалла машшинсене йусасси çинҫен. План тăрăх машшинсене йусаса пĕтернĕ. Анҫах ҫăннипе илсен ун пек мар. Йусаса хатĕрлесе çитермен машшинсем халĕ те пур. Машшинсем тĕрлĕрен пайсем çитменнипе уссăр выртнисем те нумай. Йалхуçалăх снапшенин Ҫăваш оттелени колхоссене машшинсем тăратас тĕлĕшпе йапăх ĕçлет. Пĕр районта машшинсем нумай, склатсенҫе выртаççĕ, тепĕр районта çав машшинсемех çитмеççĕ.

Пур пек машшинсемпе те пур çĕрте те кирлĕ пек усă курмаççĕ. Пĕр колхосра тырă вырмалли машшинпа кунне 7—8 кектар, тепринҫе аран-аран 3—4 кектар выраççĕ. Епĕр Никиттĕн йул. пĕр колхосра пултăмăр. Ку колхосра тырра çурлапа выраççĕ. Колхоçнĕксем, — машшин ĕçлемест, теççĕ. Машшина кўлтертĕмĕр. Вырма тытăнҫĕç, ҫăн та машшин тырра сапалатса выраť. Машшинăн хăшпĕр пайĕсем çитмеççĕ мĕн иккен. Кайран колхоçнĕксем хăйсемех,—ку пайне çуна тимĕрлеме илнĕ, ку пайне ватса пăрахнă та йусаттарман, теççĕ. Пире районсенҫен „машшинсене пурне те йусаттарнă,“ тесе своткăсем параççĕ. Выранĕ вырăнĕпе ав мĕнле йусаттараççĕ. Тепĕр тĕслĕх. Патăрйелне çитетпĕр.— „Машшинсене пĕтĕмпех йусаса ларгнă“, теççĕ. Йураť. Пĕр тимрĕç лаççине пыратпăр, унта 3—4 тырă вырмалли машшин йусава кĕтсе лараççĕ. Выранĕ-вырăнĕпе машшина хирĕç пынисем те тĕл пулкалаççĕ. Вĕсем „кăçал ыраш вăрăм, çăра, машшинпа вырма май çук“, теççĕ. Наҫар тырра каллех машшинпа вырма май çук, пулмалла вара теççĕ. Апла пулсан, мĕнле тырра машшинпа вырма пулаť?! Пĕрисем ăнланса илеймен пирки машшинпа ĕçлеме килĕшмеççĕ, теприсем кулак акиттатси хыççăн кайса машшинпа ĕçлессине хирĕçеççĕ. Парттийтсăсем, комсомолĕссем çакнашкал киревсĕр шухăша отпор памаççĕ.

4—5 çул кайарах йал машшинсем çитменнипе аптраҫҫĕ. Халĕ машшинсем нумай. Ĕлĕкрех хресҫен вăл машшинсем, уйрăмăнах трактăр çинҫен шухăшлама та пултараймăн. Халĕ ҫас-ҫасах çав машшинсене мĕнле пăхаççĕ? Машшинсене пуçтарусăр тытаççĕ. Кĕçĕнйелҫĕк районĕнҫе пĕр колхосра авăн çапмалли машшин пылҫăк çинҫе лараť, тутăхса пĕтнĕ, машшин ăшне арпа тулса

ларнă. Ун пекки пĕр Кĕçĕнйелђĕк районĕнђе кăна мар, нумай çĕрте машшинсене çапла „усраççĕ“. Кун пек йапалана ђăтма çук. Тепĕр йенђен машшинсене ĕçленĕ ђухне хытă çĕмĕреççĕ. Ку ĕнтĕ машшинсемпе ĕçлеме пĕлменнинђен те нумай килет. Машшин сухапуçĕ мар. Машшина пĕлни кирлĕ. Районри оркăнсем машшинсемпе ĕçлеме пултаракан ăстаçăсене хатĕрлесси çине çителĕклĕ пăхмаççĕ. Машшинсемпе ĕçлеме тĕрлĕрен ăстаçăсем хатĕрлес плана пĕр район та тултарман.

Йалхуçалăхĕнђе тăракан ђи пысăк ыйту—тырпултухăçне хăпартасси пулаť. Тырпул тухăçлăхĕ хăпараť, анђах пит те пĕђĕккĕн. Йалхуçалăхĕнђе машшинсемпе, трактăрсемпе ĕçлесси, çĕре химиллĕ çемçетмеллисемпе усă курасси хăвăрттăн ӳссе пыраť. Çак условисенђе йалхуçалăх тухăçлăхне ӳстерме пур майсем те пур. Тырпул тухăçлăхне хăпартассине йалхуçалăхĕнђе ĕçлекенсем умне тĕпри сатађ туса лартас пулаť. Уйар çанталăкпа кĕрешес ыйтăва татма та пођшевикла тытăнма вăхăт çитрĕ.

Пирĕн партти орканисатсин XVI-мĕш конферентси те çапла каласа хăварђĕ:

„Парттипе совет рапотнĕкĕсенђен нумайĕшĕ йалхуçалăх ĕçĕнђе акакан çĕр лаптăкне сарассине çеç тĕп сатађ вырăнне хунине, ĕçĕн пахалăхĕ, çав çĕрсенђен ытларах тупăш кăларасси çинђен, акнине пĕтĕмпех, тата хăй вăхăтĕнђе, тăккаламасăр пуçтарма кирли çинђен ыттисенђен сахалтараххăн шутланнине палăртса, 1932-мĕш çулхи йалхуçалăх кампанийе тăрăх панă кăтартусем çинђен Опкомăн 5-мĕш пленăмĕ йышăнăвне пĕтĕмпех ырласа, конферентси **хађхи вăхăтра пирĕн ĕçсен тĕп вырăнĕ—тырпул тухăçлăхшĕн кĕрешесси, тырпул тухăçлăхне хăпартасси тырра, пуçтарса кĕртессине орканисатсилесси пулаť**“, тесе татса уççăн калаť.

Тӳррипех каламалла, çак решшенине пођшевикла пурнăçлани çук. Тырпул тухăçлăхне хăпартас ыйтăва пођшевикла ăнланса илни колхоçнĕксен çеç мар, хăшпĕр парттийтсăсен пуçĕнђе те çук. Тырă вăрлăхне имçам шывĕпе ђӳхени çинђен районсем аван своткăсем пађĕç. Ĕçре йăлтах урăхла. Шăмăрша, Шăнкăртам районĕсенђе сĕлĕне кĕркунне сухаласа хăварнă çĕр çине акнă. Сĕлĕ аван, анђах хăшпĕр çĕрте шутсăр вутă пуђахиллĕ. Мĕншĕн тесен сĕлле çуса акман.

Рынкă салинђи колхосăн кăçал тулă нађар.—Мĕншĕн нађар пулнă, тесе ыйтатпăр. Пĕр колхоçнĕк,—тулă вăрлăхĕ формалин шывĕ çинђе ытларах тăнă, çитменнине тулă ђĕрех пулнă май формалина ытларах сăрхăнтарнă, çавăнпа нађар, тет. Колхоçнĕк тулă мĕншĕн нађар пулнине пĕлет, акрономсем хăй вăхăтĕнђе çакăн çинђен ăнлантарса паман. Суха тăвас ĕçе илер. Çураки сухине ђылай çĕрте йапăх тунă. Сăмахран, Çĕрпӳ совхосĕ шăйăрлђăксем нумай хăварнă, нађар сӳренĕ. Сӳренĕ хыççăн тăпра муклашкисем пуç пек выртаççĕ. Ирхи çĕртме тăвас плана пĕр район та тултарман. Ђылай çĕрте кĕрхи çĕртмене халĕ те сӳресе пĕтермен. Тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн, акă мĕнле кĕрешетпĕр халĕ. Çав хушăрах пĕр кектартан 18—20 ђентнĕр тырă илекен колхоссем те пур. Вĕсене партти XVI-мĕш конферентсинђе

илсе кăтартнăҫҫĕ. Анҫах ҫав колхоссен оппăтне пухас, ăна ытти колхоссене сарас тĕлĕшпе никам та нимĕн те туман. Оппăтлă стантси те йапăх ĕҫлет-ха.

Халĕ, тата тырпул тăкакĕпе кĕрешессине илер. Партти Тĕп-комĕпе ССРС Халăх кăмиссарĕсен канашĕ ҫак ыйту тырпул пухса кĕртес ĕҫре тĕп вырăн йышăнса тăмалла, терĕ. Ҫак ыйту пиркийех партти орканисатсин XVI-мĕш конферентсинҫе Опко-мăн отҫоҫĕнҫе ҫапла каланă:

„Тырпул пухса кĕртес кампанийе мĕнле иртертĕмĕр? Паллах, иртнĕ ҫулхипе танаштарсан ҫылай пысăк ҫитĕнӳсем турăмăр. Апла пулсан та ку ĕҫре пирĕн пысăк ҫитменлĕхсем пулҫĕҫ. Тырă пухса кĕртес ҫĕрте Ҫăваш республĕкĕ мĕн ҫухлĕ те пулин тырă ҫухатма пултарни ҫунҫен шухăшлама май та ҫук, ăна никам та ĕненмелле мар. Анҫах та ĕҫре ҫапла пулса тăҫĕ. Епĕр тырпула ҫылай тăккалантарса хăвар-тăмăр. Кăна текех ҫăтма ҫук. 1932-мĕш ҫулта ҫак пысăк ҫитменлĕхе пĕтермелле. Пĕтерес тесен, ăна халех шута ил-мелле.“

Вырăнти орканисатсисем ҫакна мĕнле шута илнĕ? Парттипе правиттĕлствă кăтартăвĕсене мĕнле пурнăҫлаççĕ? Наҫар пурнăҫ-лаççĕ.

Хăшĕсем—пирĕн ҫĕр пĕҫĕккĕ, ҫав пĕҫĕк ҫĕр ҫинҫе тырă нумай ҫухалĕ-ши текелесе пуплеççĕ. Ĕç патне кун пек пыма йурамасť. Йенҫен пирĕн ҫĕр сакал пулсан, ăна тата лайăхрах ĕçлемелле.

Тĕслĕх, тырă вырмалли машшинсем ҫумне тырă пĕрҫисем пухакан йешҫĕксем туса лартассинех илер. Ун пек йешҫĕксем сайра хутран ҫеç тĕл пулаççĕ. Мĕнле тумаллине колхоçнĕксем пĕлмеççĕ, акрономсем ăнлантарса паман, пирĕн пиҫет те шар-ламасť. Йешҫĕк пĕҫĕк ыйту мар, вăл республĕке темиçе вунă пин пăт ытлашши тырă паракан йапала.

Парттипе правиттĕлствă „конвейăрлă“ йĕркепе ĕçлени пул-малла мар, вырнă тырра ҫыхса ҫинҫех ҫĕмеле, сурата купаласа пымалла, терĕ. Хăшпĕр колхоссем „конвейăрлă“ йĕркепе ĕçлеççĕ. Йатне „конвейăр“ тесе паман, анҫах плана ҫав йĕркепе тунă.

Тырă вырасси ҫылай колхоссенҫе вăрăма тăсăлни куç умĕн-ҫех. Ку каллех тырпула ҫухатма пултарať. Тырă вырма вăхăтра тухмарăн—санăн тырă тăккаланať; тăрлавсăр ĕçлетĕн—тырă йухať, каллех тăккаланҫăк; вырнă тырра кĕлтене ҫыхса ҫинҫех ҫĕмеле купаламарăн—санăн каллех тăккаланҫăк. Тырă вырас вăхăта кĕс-кетесси ҫине ҫителĕклĕ пăхмаççĕ. Тырпул тăкакĕпе кĕрешни мĕн тери пысăк сатаҫ пулса тăнине кирлĕ пек ăнланса илни ҫук.

Малалла, капан-сĕкĕрт * тăвассине илер. Хăшсем „капан-сĕкĕрте халĕ ççç туман, ăна ĕмĕртенпех тунă, капан-сĕкĕрт тăвасси темĕн пек йăвăр ĕçех мар“, тесе шутлаççĕ. Ҫапла шутлани пĕре те тĕрĕс мар. Мĕншĕн тесен халĕ капан-сĕкĕрт тăвас ĕç те урăхла

*) Ҫĕмел тăвас ыйтăва тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен ăнланаççĕ. Пĕрисем уйрине те, анкартинҫине те ҫĕмел, теççĕ, теприсем капан, теççĕ. Уйра ҫĕмел, сурат тăваççĕ. Ҫĕмел-сурат пĕр лавран ытла пулмасť. Анкартинҫисене капан, сĕкĕрт, тесе калаççĕ.

тăрат. Уйрăм хуçалăхпа пурăннă ҫухне 4—6 лавран капан лартнă. Халĕ шултра хуçалăхра 4—6 лавлă капансем лартни тупăшлă мар. Тырра пĕҫĕк-пĕҫĕк капансене лартса тухсан, вырăн та нумай кирлĕ, тырра çумăр та ытларах йĕпетет, кайăк-кĕшĕксем те ытларах кишеклеççĕ. Халĕ капансене-сĕкĕртсене авăн çапмалли машшина пăхса лартмалла. Пĕр капанта-сĕкĕртре пĕр кун, йе çур кун çапмаллăх пултăр. Ырана капан тĕп хăварма кирлĕ мар, çумăр пулсан тырра йĕпетет. Ку ыйтăва тĕплĕнрех шутласа пăхмалла. Капансене-сĕкĕртсене мĕнле лартсан тупăшлăрах? Калăпăр, икĕ йенҫе капан-секĕрт, варăнҫе авăн çапмалли машшин ваҫҫи вырăн хăвармалла. Ку пĕр йенҫен кĕлте çĕклеме инçе утма кирлĕ маррипе ĕç вăхăтне уссăр сайа йанинҫен хăтарат. Тепĕр йенҫен тырра тăккалантармаст. Есĕр хăвăрах аван пĕлетĕр, кĕлтене инçе çĕклемелле пулсан, темле тăккалантарас мар тесен те тырă йухат, çитменнине ҫи шултра пĕрҫĕсем йухаççĕ.

Халĕ пур çĕрте те пекех кĕлтесене уйран анкартине турттараççĕ. Калăпăр, уҫҫасткă йалтан 2—3 çухрăмра, 50—60 актар, йе ытларах шутланат. Кĕлтене 2—3 çухрăм турттарма кирлĕ-и, йе ăна майлаштарса вырнă уҫҫасткăрах çапма пулат? Çак ыйтăва та тĕплĕн шутласа пăхмалла.

Епĕ вырса пуçтарнă тырпула вăрласран, вут-кăвартан сыхлас ыйту çинҫе уйрăмăнах ҫарăнса тăрасшăн. Иртнĕ çул çак уҫҫасткăра мĕнле киревсĕр ĕçсем пулҫĕç? Вырăнĕ вырăнĕпе тырпул тухăçлăхне ҫăннипе кăтартманнисем пулҫĕç. Тырпул тухăçлăхне шута илесси çирĕп пулман. Тырпул тухăçлăхне шута çирĕп илменни кулак акитатси хыççăн кайакан, патшалăх интересĕсемпе колхоçнĕксен интересĕсене хирĕç тăратма пăхакан елементсене тырпула унталла-кунталла салатма çăмăллатат.

Çакнашкал киревсĕр ĕçсем кăçал та, тырпул пухса кĕртес кампанин малтанхи кунĕсенҫех палăраççĕ. Тырпул тухăçлăхне шута илес ыйтăвпа пĕр район та тулăклăн интересленмест. Ҫылай çĕрте ҫăнҫăн тухăçлăха патшалăхран пытарма пăхни те сисĕнет. Сăмахран, Шăмăршă райплан претçетаттĕлĕ:

— Кăçал кектартан пĕр 7—8 ҫентнĕр илепĕр пулмалла, тет.

— Ăçтан пĕлетĕн, тесе ыйтатпăр.

— Йалсоветҫĕсем тăратнă çветĕнисенҫен, тет.

— Ҫăннипе илсен миçе ҫентнĕр пулат, пĕр кектартан 11—12 ҫентнĕр тухма пултарат-и? тесе ыйтатпăр каллех.

— Тухат те пулĕ, тет.

Тырпул тухăçлăхĕпе акă мĕнле интересленеççĕ. Çакăн пек ĕçленине киревсĕр ĕç тенĕ хайар йат паратпăр. Урăхла йат пама çук. Мĕншĕн тесен, вăл патшалăха та, колхоссене те сийенлĕ ĕç. Ăна кăçал ӳссе çеçкеленме памалла мар. Тырпула унталла-кунталла салатма памалла мар. Вăрласа пĕтересрен, вут-кăвартан хытă сыхламалла. Кулак колхоса хирĕç, ăна сăтăр тăвассишĕн тĕрлĕ майсемпе кĕрешет. Вăл уйри, йе çĕмеле лартнă тырра тĕртсе çунтарма та пултарат. Çавăнпа та тырпула вут-кăвартан сыхлассине çирĕп орканисатсилемелле.

Çак çитменлĕхсем мĕнрен килеççĕ? Вĕсем йертсе пырас ĕçре ысăк çитменлĕхсем пурринҫен килеççĕ. Тырпул пухса кĕртесси,

ăкакпа кĕрешесси çинҫен нумай калаççĕ, ресолюутсисем те сахал мар çыраççĕ. Анҫах ĕçе виттĕр пĕлсе татăклăн, куллен йертсе пыни, ĕçе тĕплĕн орканисатсилени çитмест. Епĕ ку ыйту патне малалла татах çавăрăнса пырса, унта тĕплĕнрех ҫарăнса тăратăп.

Татăклăн йертсе пыман майĕпе ĕнтĕ колхоссенҫе пысăк çитменлĕхсем пур, уйрăм хуçалăхсем хушшинҫе тырă выраcси йулса пыраť.

Пĕр 200 ытла колхосра происвотствă прикатисем çук. Хăшпĕр колхоссенҫе пĕр йышпа пĕр уҫҫасткăра ĕçлекен прикатăсем выраннe пĕр пускилтен, кўршĕсенҫен 3—4 кил пĕрле ĕçлеççĕ.

Çуракине ушкăнлă стелшҫăнă урлă туса пынă пулсан, халĕ ҫылай колхоссенҫе нимĕнле стелшҫăнă та çук. Тутаркас районĕнҫе пĕр Турай уҫҫасткинҫе кăна 20 колхосра стелшҫăнă çук. Хĕрлĕҫутай районĕнҫе ушкăнла стелшҫăнă вырăнне хăш колхоссенҫе пĕҫҫеншерлĕ стесшҫăнă, кашни киле анан-анан касса панă.

Еçе шута илсе пырасси наҫар. Кам мĕн ҫухлĕ ĕçленине çырса пыраççĕ пулсан, мĕнле ĕçленине хисепе илмеççĕ, интересленмеççĕ. Хăшпĕр çĕрте 1931 ç. ийуль уйăхĕнҫен пуçласа çак çулăн апрел уйăхне çитиҫен кам мĕн ҫухлĕ, тата мĕнле ĕçленине пĕррe те çырса пыман.

Ҫылай колхоссенҫе ĕç нормисем пĕҫĕккĕ. Пĕр колхосра кектара 10 çын, йунашар колхосрах 20 çын выраççĕ. Йе тата машшинпа вырса пăрахнă тырра 200 кĕлте çыхаççĕ, çав вăхăтрах алăпа вырса 150—200 кĕлте тăваççĕ. Нўшлĕ вырса пăрахнă тырра çыхма та çурлапа вырса çыхас ҫухлех вăхăт кирлĕ вара? Хăш колхосра мĕнле ĕçлеççĕ, ĕç нормине çав, йе ку колхосра мĕнле тусан йурăхлăрах ыйтупа пĕр колхоссойус та лармасť.

Çак ыйтусем, тата тупăша валеçесси, вĕсем пурĕш те колхос строиттĕлствине татса паракан ыйтăвĕсем пулаççĕ. Вĕсем çине çăмăллăн, çелтен çеç пăхни, ĕçĕн хурмине çеç туни пулмалла мар.

Паллах, епĕр кăçал пĕлтĕрхипе танлаштарсан аванрах ĕçлетпĕр, çитĕнўсем те пĕлтĕрхинҫен пысăкрах. Ăна пăхмасăр хамăран çитменлĕхсем çинҫен уççăмăна хçивĕҫҫĕн калаçатпăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен епĕр ку таранҫҫен тунă çитĕнўсем çинҫе ҫарăнса тăма шутламастпăр. Тата пысăкрах çĕнтерўсем тăвас шутпа ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, çĕнтерме мĕн пур вăйа пухатпăр.

## Тырпул хатĕрлев планне тултарасси — колхоссен ҫи малтан тумалли ĕç.

Тырпул хатĕрлесси тырпул пухса кĕртес ĕçпе таҫҫăн çыхăнса тăраť. Çавăнпа та епĕр çак пленăмра тырпул хатĕрлес ыйтува та сўтсе йаватпăр. Тырпул хатĕрлес ыйту кăçал урăхла тăраť. Совхоссемпе колхоссем йалхуçалăхĕнҫе татăклăнах çĕнтерҫĕç, Кăçалхи çуракинҫе ССРС мĕн пур çĕрсенҫен 80% совхоссемпе колхоссем акса хăварҫĕç. Парттипе правиттĕтствă колхоссем, тата ĕçхресҫенĕ тăрăх тырпула хатĕрлемелли плана ҫакарса совхоссем тăрăх хатĕрлемелли плана ўстерҫĕ, тата тырпул хатĕрлес, вăрлăх фонҫĕсене тăвас плансене тултарнă хыççăн

(1933 çул йанварĕн 15-ђен пуçласа) колхоссем, колхоçнĕксем, ĕçхреçђенĕсем хăйсен ытлашши тыррине нимĕн ђарусăр сутма пултараççĕ. Ку колхоссем, уйрăм колхоçнексем колхос хуçалăхне çирĕплетессипе, колхос хуçалăхĕн таварлăхне хăпартассипе, тырпул хатĕрлес планпа, тата вăрлăхфонтне хăвăртрах тултарассипе интересленнине ӳстерет. Çак майпа пирĕн тырпула хăвăртрах пĕр тăккаланђăксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешес çĕрте усă курма пĕлмелле. Кашни колхос протукси нумайрах кăларса патшалăха та ытларах парсан, вара колхосăн хăйĕн те, колхоснĕксен те протукси нумайрах пулаť. Тӳррипех каламалла, парттипе правиттĕлствă постановлеисем çинђен ĕçхалăх массисене нађар ăнлантарса пыратпăр. Ку пирĕн ĕçре пысăк çитменлĕх пулса тăраť.

Тырпул хатĕрлесси пит те пысăк политтĕкла камппани, вăл пĕтĕм халăх хуçалăх планĕн пĕр пысăк пайĕ пулса тăраť. Ку ĕç мĕн тери пысăккине лайăхрах кăтартас тĕлĕшпе епĕ Ленин вĕрентнине илсе кăтартассишĕн. В. И. Ленин акă мĕн каланă:

„Протоводствi фонђĕ çирĕп пулсан кăна рапођђисен патшалăхĕ екконоěк йенђен çирĕп ура çине тăма, шултра промышлĕннăçа майĕпе пулсан та ура çине тăратма, тĕрĕс финанслă çиçтемă тума пултараť".

Совхоссемпе колхоссем йалхуçалăхĕнђе пуç пулса тăни, тырпул хатĕрлес планне тултарнă хыççăн колхоссем, колхоçнĕксем, ĕçхресђенĕсем хăйсен тыррине пасар хакĕпе сутма пултарни кăçал тырпул хатĕрлес ĕçе нумай аванрах, хăвăртрах иртерме май параççĕ. Анђах кунтан „тырпул хатĕрлес план хăй тĕллĕнех тулса пыма пултараť", тенĕ шухăш пулмалла мар. Ку, вăл оппортунисла, шутсăр сийенлĕ шухăш. Унпала пољшевикла хайарлăхпа кĕрешмелле.

Ђăн та, колхоссемпе совхоссем йалхуçалăхĕнђе татăклă çĕнтерӳ турĕç. Тĕш тырă тăвакан, промышлĕннăç ваљђи ђĕр тавар тăратакан йалхуçалăх районĕсенђе пĕтĕмĕшпе илсен кулака класĕпех пĕтернĕ. Анђах кулакла елементсен йулашкисем пурха. Çакна пĕр минутлăха та манма кирлĕ мар. Пирĕн Ђăваш рес пуплĕкĕнђе 50% ытла уйрăм хуçалăхлă хресђенсем. Тата çакна та манмалла мар.

„Колхоссенђе хирĕçӳсем пурри паллах ĕнтĕ вăл. Паллах ĕнтĕ колхоссенђе харпăрлăх йăлисемпе пĕрле кулакла йăласен йулашкисем те пур. Колхоссем çирĕпленсе, машшинланса пынă май çав йăласем пĕтмеллех" (Сталин—ССРС-ĕн çĕр ĕçĕнђи политтĕкĕ çинђен).

Кăçал тырпул тухăçлăхĕ те пĕлтĕрхинђен авантарах курăнаť. Анђах ку каллех план пĕр кĕрешӳсĕр, нимĕнле йăвăрлăхсăр хăй тĕллĕнех пулассине пĕлтермест.

Кăçал лайăхрах ĕçлес тесен, пирĕн иртнĕ çулхи çитменлĕхсене, уйрăм вырăнсенђе тунă йăнăшсене пĕтĕмпе шута илсе, вĕсене кăçал текех тумалла мар.

Иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмесен, вĕсенђен политтĕклă, практеклĕ вывăтсем тумасан, ђеретри тырпул хатĕрлев камппа-

нийе ӑнӑçлӑн иртерме пулмасӑ. Партти Тӗпкомӗн решшенинҫе акӑ мӗн каланӑ:

«Пирӗн иртнӗ çулхи тырпул хатӗрлевӗн тӗп йӑнӑшӗ, пуринҫен ытла Украинӑпа Уралра, ак çакӑ пулнӑ—тырпул хатӗрлес плана районсемпе колхоссем тӑрӑх ӗçе тӗплӗн тунӑ йӗркепе мар, çтихийлӑ, пӗртанлӑ йӗркепе валеççе парса пурнӑçа кӳртсе пынӑ, кашни район ларутӑруне уйрӑмӑн хисепе илмесӗр, кашни колхос пурнӑçне уйрӑмӑн хисепе илмесӗр ӗçлесе пынӑ».

Çак вӑл Украинӑпа Уралшӑн çеç тӗрӗс-и? йе вӑл пире те тивет? Вӑл пире те тивет. Иртнӗ çул çак йӑнӑша пирӗн районсем çеç мар, Снапшени кӑмиссариаҫӗ те турӗ. Партти Опкомӗ çак ӗçе хутшӑнса йӑнӑша вӑхӑтра тӳрлетрӗ. Пӗр йӑнӑш тунипех те иртмерӗ Снапшени кӑмиссариаҫӗ кайранрах кашни района кулаксем çине мӗн ҫухлӗ хумаллине çӳлтен кӑгартса паҫӗ. Ку ӗçе каллех парттин Опкомӗн хутшӑнмалла пулҫӗ. Йуратӑ, Опком çинҫех тӳрлатрӗ.

Районсем тырпул хатӗрлев планне вырӑрсене мӗнле çитерҫӗç? Тырпул тухӑçлӑхне, кашни колхоса мӗн ҫухлӗ тырӑ кирлине, мӗн ҫухлӗ выҫӑх пуррине хисепе илмесӗр, вӗсене лайӑххӑн пӗлмесӗр плана вырӑнсене антарҫӗç. Çакна май вара пӗр йалсоветҫӗн, колхосӑн план тултарма çӑмӑлтарах, теприсен йӑвӑртарах пулҫӗ.

Кӑçал çак йӑнӑша тӑвасран халех хытӑ асӑрхаттаратпӑр. Партти Тӗпкомӗ çапла калатӑ:

„Тырпул пуçтарса кӗртес, тырпул хатӗлевне, тупӑша валеçес ҫухне çак йӗркене тытса пырас пулатӑ: тырӑ лайӑх акса хӑварнӑ, лайӑх пуçтарса кӗнӗ, патшалӑх тырпул хатӗрлев планне йӗркеллӗ тултарнӑ колхоссен хӑйсене тыткалама кирлӗ тырпулӗ çакна май нумайтарах пулмалла“.

Тырпул хатӗрлев планне кашни районӑн условисене, уйрӑмлӑхсене хисепе илсе, тӗплӗн пӗлсе тумалла. Ку респуплӗкри оркӑнсемшӗн те, районри оркӑнсемшӗн те татӑклӑн йертсе пыма пӗлнине тӗрӗслемелли ексамӗн пулатӑ. Халӗ тӳррипех каламалла. Есӗр районсенҫе тырпул тухӑçлӑхӗпе те кирлӗ пек интересленместӗр, план тӑвас ӗçе те йатарлансах тытӑнман.

Тырпул хатӗрлев планне 1933 ç. йанварӗн 1-мӗш тӗлне тултармалла. Кунта уйрӑмӑнах, иртнӗ кампанире парттин çулйӗрне пӑсса ӗçлесе йӗнӑшсем туни çинҫе ҫаранса тӑма лекет. Хӗрлӗҫутай, Елӗк тата Вӑрнар районӗнҫе тырпул хатӗрлес ӗçе массӑллӑ ӗç урлӑ туса пырас ҫухне атминистраттивлӑ меслетсемпе ӗçлесси çелте тӑнӑ. Вӗсем тырпул хатӗрлессипе коллективисатси проҫҫӑнне вӗрсе хӑпартма тӑрӑшнӑ. Çакна май киревсӗр ӗçсем нумай пулнӑ: вӑтам хресҫенсем çине çирӗп сатани хунисем ҫылай пулнӑ, колхоса кӗрсен çирӗп сатанирен хӑтарнӑ; çав хушӑрах кулаксем ҫылайӗшӗсем çирӗп сатанинҫен пӑрӑнса йулнӑ; колхоçнӗксемпе ӗçхресҫенӗсемпе ирӗксӗрлесе ӗçленӗ; ҫылай колхоссенҫе хуçасӑрлӑхлӑ йертсе пынӑ май тырпула унталла-кунталла салатса пӗтернӗ. Елӗк районӗ плана мӗн пурӗ те 90,5% кӑна тултарнӑ. Партти Опкомӗ ку районсем пирки вирлӗ решшени йышӑнҫӗ,

хăшпĕр руководититтĕлсене парттирен кăларђĕ, хытă йатламалла турĕ. Шутпала ытти районсем ҫак «ĕҫрен» тивĕҫлĕ уроксем туйанса ҫитменлĕхсене, йăнăшсене хăвăрт тӳрлетмелле пулнă. Анђах Вăрмар, Вăрнар, Патĕрйел районĕсем, тата Ђăвашколхоссойусĕ Хĕрлĕђутайпа Елĕк районĕсенђи урока хисепе илмерĕҫ. Ҫак районсенĕ Коҫин йулташ комиҫҫиĕ тĕрĕслесе тухнă хыҫҫăн мĕн куртăмăр? Хăшпĕр колхоссенђе тырпула унталла-кунталла салатса пĕтернĕ, тырпул тухăҫлăхне валеҫес ҫĕрте парттин кăтартăвĕсене киревсĕр пăснă. Хăшпĕр колхоссем: «хамăра ытларах пултăр, патшалăха сахалтарах парсан та йурать», тесе ĕҫленĕ.

Патĕрйел районĕнђе ҫапман тырră пулнă, ҫав хушăрах хăшпĕр колхоссем патшалăха памасăр турткаланса тăнă. Тырпулăн ђăн-ђăн тухăҫлăхне кăтартман. 7 районта кăна 2.400 тоннă кăтартмасăр хăварнă. Партти Опкомĕ пĕрре ҫеҫ мар асăрхаттарнă. Йулташсем тӳрленме шутламарĕҫ. Кун хыҫҫăн мĕн тумалли йулђĕ? Пуршуаллă туртăмпа кĕрешменшĕн, тырпула салаттарса пĕтернĕшĕн, парттин Опкомĕн кăтартăвĕсене пурнăҫламаншĕн хăшпĕр йулташсене хытă айăпласси кăна йулђĕ. Партти Опкомĕ ђăн та ҫапла турĕ. Вăрмар райкомĕн ҫекреттарне Шветсов йулташа ĕҫрен кăлартăмăр, райĕҫтăвком претҫетаттĕлне Иванов йул. хытă йатламалла турăмăр, районри колхоссойус правленине салатса йарса, унăн малтанхи претҫетаттĕлне сута памалла турăмăр. Патĕрйел райкомĕн пӳроне хытă йатламалла турăмăр, райĕҫтăвком претҫетаттĕлне Ҫмирнов йул. парттирен кăлартăмăр. Вăрнар райкомĕн пӳроне йатламалла, райĕҫтăвком претҫетаттĕлне Сахарăв йул. асăрхаттарса хытă йатламалла турăмăр т. ыт. те. Паллах, пĕр самантра темиҫе ҫынна парттирен кăларса пăрахни, ђылайĕшне хытă йатлани йăвăр йапала вăл. Анђах урăхла мерăсем йышăнма май пулман. Кăҫал ҫакнашкал пуласран йулташсене халех хытă асăрхаттаратпăр. Ҫӳлерех асăннă районсенђи киревсĕр ĕҫ кăҫал пирĕншĕн пуриншĕн те тивĕҫлĕ урок пулмалла.

Иртнĕ ҫул тыră илекен вырăнсенђе шут ĕҫĕ йапăх тăнă. Ҫак майпа кулаксемпе тĕреклĕ пурăнакансем ђухăнсен, йе вăтамсен шуђĕпе тыră парса промтаварсем илни те сахалах пулман. Шут ĕҫĕ йапăх тăнă, тата ĕҫе пӳрократла туса пынă пирки, тырпул Сойусĕ нойапĕрĕн 21-мĕш тĕлне мĕн ђухлĕ тыră хатĕрлени ҫинђен панă своткăра 2,569 тоннă ђăн хатĕрленинђен сахалтарах кăтартса панă. Тырпул Сойусех Тутаркас районĕ ҫентăпĕрĕн 21-мĕш тĕлне 2222,8 тоннă хатĕрленĕ, плана 99,5% тултарнă, тесе кăтартать. Ђăннипе 1788,8 тоннă хатĕрленĕ, плана 70,7% тултарнă пулнă. Шут ĕҫĕ нађар пырас хăрушлăх кăҫал та пур. Сăмахран, малта пыракан колхоссем тыră пама тытăнђĕҫ, тыră илекен вырăнсенђе квитантсисем ҫук.

Пĕлтĕр ђылай ҫĕрте колхоссене патшалăха сутнă тырăшăн вăхăтра укҫа паман. Тыră илекен вырăнсем колхосăн тыră укҫине тӳррех патшалăх панкне куҫарса панă. Патшалăх панкĕ колхоса нимĕн пĕлтермесĕр тыră укҫинђен колхос патшалăха тавăрмалла укҫа-тенкине тытса йулнă. Кăҫал ҫакăн пек хăтланни пулмалла мар. Тыră парсан кохоссене ҫинђех укҫан тӳлемелле.

Тырпул хатĕрлев планне ăнăҫлăн тултарасси йенђен илсен,

йала промышлённăç таварёсем тăратас ыйту уйрăмăнах пысăккăн тухса тăрать. Колхоссен суту-илўне сарнă май вăл пушшех те кирлё. 3-мёш кварттăлта йала промтавар тăратасси нумай аванланать. Йала промтаварсем тăратассине вăйлатни йалти пётём ёçсене лайăхлатма аван условисем туса парать, пуринђен малтан тырпул хатёрлев планне ăнăçлăн тултарма пулăшать. Пирён йенђен çак майсемпе кирлё пек усă курма пёлни кирлё. Йал вађђи уйăрса хунă таварсем урăх çёре каймалла мар, вёсем пётёмпех йала çитмелле. Партти, тата Совет орканисатсисен йал вађђи уйăрнă таварсемпе мёнле усă курнине тёрёслесех тăмалла, ку таварсене урăх çёре салатакансене хытă айăпламалла. Йала йаракан таварсен фонтне ўстерес тёлёшпе промкопператси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл ёçе çине тăрсах тытăнсан йала кирлё таварсем: хатёр тумтирсем, катка-пиђкесем, ухватсем, турђкасем, пуртă тавраш ёсем т. ыт. темён ђухлё кăларма пултарать. Анђах промкопператси ку тарана çитсе нимён те шарламасть-ха. Ăна йăвăр ыйăхран вăратмалла.

Кулленхи ёçре йалта револђутсиллё саккунлăха пăснисем сахал мар пулаççё. Револђутсиллё саккунлăха çирёплетессишён хытă кёрешмелле. Анђах кунпа пёрлех клас тёлёшёнђен йут етемсем револђутсиллё саккунлăхăн хўтлёхёнђе пытанса йулма хăтланниненђен хытă сыхланмалла. Иртнё çул пăрăнђăк тăваканёсем, урра наступлени тăваканёсем, кăçал вёсем халсăрланса алăсене усаççё, кулаксен умёнђе ђакас çулпа пыма тытăнаççё, револђутсиллё саккунлăхпа пёркенсе кулакла çирёп сатани парасран пăрăнма пăхаççё. Кулаксем, тата тёреклё пурнаксем револђутсиллё саккунлăхпа çирёп сатанинђен пăрăнса йулма тăрăшни куç умёнђех. Кулака, тёреклё пурнаканне çирёп сатани памалла. Анђах çирёп сатанийе çўлтен мар, ăна йалсоветђёсен памалла.

Тырпул хатёрлев камппанин технёккăллă никёсне орканисатсилесси паллă ыйтусенђен пёри пулать. Ку ыйту тырпул хатёрлев планне тултарассипе çеç мар, вăл хатёрленё тырпула пăхса усрас, çухатупа кёрешес сатађпа та тађђăн çыхăнса тăрать. Çак йенђен илсе пăхсан пирён хатёрленў питех те çителёклё мар. Тырпул склађёсене йусаса хатёрлесе çитермен. Тарасасем, кире пуканёсем çителёклё мар. Вăрмар районёнђе 8 лавлă опос пырсан, тырпул хатёрлекен оркăнăн куçё-пуçё саланса кайнă. Çёр, йе пин лавлă опос килсен мён тăвёç вёсем.

Илсе килнё тырпула хăвăрт илмелле. Тырă леçме килекенсем çине пўрократла пăхнине тёппипех пётермелле. Çак майпа патшалăх панкё кантурён тырă илекен пунктсем çумёнђи кассăсен йышне ўстермелле. Тўррипех каласан, тырă леçме килекенсене пăхасси нађăр тăрать. Сăмахран, Шупашкара хёрлё опос килсен столовăйри çынсем „тырă леçме килнисене мёнле хакпа çăкăр памалла-ши? Те çирёп хакпа, те комерђђёски хакпа“, тесе тавлаша тăраççё. Хăшёсем хёрлё опоссене мусăкпа кётсе илнипе ёç те пётет, тесе шутлаççё. Мусăкпа çур ёç те пулмасть. Тырă леçме килнё колхоçнёксем, ђухăнпа вăтамсем вађђи ђайнăйсем, столовăйсем, промтаварсем, вулав çурђёсем, тёрлёрен справккă

параканĕсем, револютсиллĕ саккунлăха ăнлантарса параканĕсем пулмалла.

МТС, совхоссем, колхоссем патшалăха сутакан тырăн пахалăхĕ çине ђасђасах çителĕклĕ пăхман пирки те тырпула ђылай çухататпăр. Ђасђасах ђĕрĕ тырă параççĕ, вара склата хурсан çав тырă ђас хĕрсе кайаť, кăвакарма пуçлаť. Тепĕр ђух çӳп-çаплă тырă илсе килеççĕ. Мĕнле тырă памаллине колхос правленисене, МТС-н, совхос рапотнĕкĕсене, çавăн пекех колхоçнĕксене те, ђухăнсемпе вăтамсене те тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Тырпул хатĕрлев каппанине массăллă политтĕклĕ ĕçе сарса пынă, ĕçе сотсиалисăмла меслетсемпе орканисатсиленĕ никĕс çинђе иртерсе, плана çанталăк уйар тăнă, çул лайăх ђухне тултарма тăрăшмалла. Çакна лайăх ăнланса илмелле. Массăллă политтĕкла, ăнлантарса парас ĕçе сарса йарса çеç çак политтĕкла камппани тавара пĕтĕм вăйа пухма, кулаксемпе, спеккулянтсемпе ăнăçлăн кĕрешсе пыма пулаť. Кулаксемпе, çпеккулянтсемпе, илсе сутаканĕсемпе шутсăр вирлĕн кĕрешмелле. Тырпул тухăçлăхне çпеккулянтсен аллине салатса йама памалла мар. Çпеккулятсен аллине пĕр ђентнĕр тырă та каймалла мар. Колхоссенђе тырпул хатĕрлев планне ăнăçлăн тултарас тесен, пирĕн ђи малтан колхос активĕ çине тайăнмалла. Йал уполномођђăннăйĕсене уйрасси çине уйрăмăнах пикенмелле. Уполномођђăннăйсене колхоçнĕксенђен—активиссенђен, иртнĕ çул çак фронтра паттăр кĕрешнисенђен уйăрмалла.

Ку ĕçре харпăрлă хуçалăхсене хак паманни, вĕсене манса хăварни пулмалла мар. Харпăрлă хуçалăхсем халĕ çурри ытла йышăнса тăраççĕ. Вĕсен хушшинђе тырпул хатĕрлес ĕçе орканисатсилесси колхоссенђе ђылай йăвăртарах. Харпăрлă хуçалăхсен пĕр кектартан кӳршĕ колхосран кайа мар патшалăха тырă сутмалла. Харпăрлă хуçалăхсем хушшинђе тырпул хатĕрлесси контрактатси йенĕпе пыраť. Вĕсем контрактатси тăрăх хăйсем çине илнĕ опесаттĕлствăна пурнăçламаллах.

Пĕтĕм Совет сойусĕнђи районсем тырпул хатĕрлев планне тултарсан, вăрлăх фонђĕсене туса çитерсен, 1933-мĕш çулăн йанварĕн 15-ђен пуçласа колхоссем, колхоçнĕксем, харпăрлă хуçалăхсем хăйсен ытлашши тыррине пасар хакĕпе пĕр ђарусăр сутма пултараççĕ. Тырпул хатĕрлев планне, вăрлăх фонтне тултарађђен тырпула салатса йама памалла мар. Колхоçнĕксене, уйрăм хуçалăхсене тырпул суту-илӳвĕн йĕрки çинђен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Çак ĕç нађар тăраť-ха.

Малта пыракан колхоçнĕксем патшалăха тырă пама тытăнђĕç. Çакна кура хăшпĕрисен пуçĕсем çавăрăнса кайасран халех хытă асăрхаттаратăп. Иртнĕ çул çавăн пек пулса тăђĕ вĕт. Авкустăн вăта çĕрне çитиђђен тырпул хатĕрлесси хăй тĕллĕн пулса тăђĕ. Çав хăрушăх кăçал та пур. Ăна мĕнле пулсан та халех сирмелле.

Тырпул хатĕрлев планне тăвасси çинђе татах ђарăнса тăрасшăн. Ку пит те ответлă тапхăр. Плана тĕплĕн, кашни районăн, кашни йалсовеђĕн, кашни колхосăн уйрăмлăхсене хисепе илсе тумалла. Плана аван туса, ăна вăхăтра вырăнсене çитерсен, тата

вырӑнсенҫе актива ҫирӗп пӗрлештерсен, куллен татӑклӑн йертсе пырсан тырпул хатӗрлев планне йанварӗн 1-ҫен мар, унтан маларах та пурнӑҫлама пултаратпӑр. Йалсене йатарланса уполномоҫҫӑннӑйсем йама та кирлӗ пулмасӑ.

## Колхосла суту-илӳ — колхоссене тӗреклетме пулӑшаӑ.

Хӑшпӗр йулташсем колхосла суту-илӳ колхоссене органисатсипе хуҫалӑх ӗҫӗсем йенҫен тата политтӗкла тӗреклетессипе нийепле те ҫыхӑнса тӑмасӑ, тесе шутлаҫҫӗ. Оппортунисла елементсем економӗкӗн ҫӗнӗ политтӗкӗн малтанхи картне кайса ларнн ҫинҫен калаҫма та хатӗр. Ҫипер тӑн-пуҫлӑ ҫын хаҫхи тапхӑра економӗкӗн ҫӗнӗ политтӗкӗн малтанхи тапхӑрӗпе йепле танаштарма пултартӑр!? Економӗкӗн ҫӗнӗ политтӗкне куҫнӑранпа мӗн тери тапхӑр иртрӗ. Ҫак политтӗкӗн никӗсӗ ҫинҫе вӗт епӗр петтилеткӑн виҫҫӗмӗш татӑклӑ ҫулӗнҫе сотсиалисӑмла економӗкӗн никӗсне хывса ҫитертӗмӗр. Совхоссемпе колхоссем йалхуҫалӑхӗнҫе тӗпренех ҫӗнтерҫӗҫ. Совет сойусӗ сотсиалисӑмла ҫул ҫине татӑкӑнах тӗрекленсе тӑҫӗ. Колхос йухӑмӗнҫи ҫӗнгерӳ рапоҫҫи класпа ӗҫхресҫенӗсем хушшинҫе происвотствӑ йенпе пыракан ҫыхӑнӑва татах хытӑ ҫирӗплетрӗ. Колхосла суту-илӳ ҫак ҫыхӑнӑва тавар ҫавӑрнӑш йенӗпе татах ҫирӗплетмелле. Апла пулсан, колхосла суту-илӳ колхоссене органисатсипе хуҫалӑх йенҫен тӗреклетес ӗҫӗн уйӑрлми пайӗ пулса тӑраӑ.

Кунпа пӗрлех ҫакна пӗр минутлӑха та манмалла мар. Колхос суту-илӳне сарса йарас ӗҫ уйрӑм йӑвӑрлӑхсемсӗр, кулакла етемсем хусканма тытӑнмасӑр пулма пултараймасӑ. Ӑна халех курмалла. Тӑшман колхос суту илӳпе хӑйне кирлӗ пек усӑ курма тӑрӑшма пӑхнине пӗр минутлӑха та манмалла мар. Тепӗр йенҫен колхоҫнӗк колхоса кӗрсенех сотсиалист пулса тӑмасӑ. Вӑл патшалӑх хатӗрлевӗпе пӗрлех хамӑн тырра пасарта сутсан авантарах пулмалла, тесе шутлаӑ. Уйрӑм хуҫалӑхпе пурнакан ӗҫхресҫенӗ пушшех те ҫакӑн пек шухӑшлама пултараӑ. Паллах, кулак ҫак туртӑмсемпе усӑ курма, тырпула патшалӑх хатӗрлевӗсене тултараҫҫен ҫпеккуҫантсем тӑрӑх салаттарса йама тӑрӑшаӑ. Ҫакна халех тасан курса, ҫинҫех тӗпрен пӗтермелле.

Епӗр мӗн пур ҫӑмӑллӑхсене колхоссене, колхоҫнӗксене паратпӑр: машшинсем, таварсем, налок тӑрӑх, кивҫен укҫасем т. ыт. те. Апла пулсан патшалӑх хатӗрлевӗсене тултарасси колхоссен, колхоҫнӗксен ҫи малтан тумалли ӗҫ пулса тӑраӑ. Ҫакна колхоҫнӗксене, вӗсене ҫеҫ те мар, вӗсемпе пӗрлех ӗҫхресҫенӗсене те ӑнлантарса памалла.

Калӑпӑр, ыран-виҫмине авӑн ҫапма тытӑнатпӑр, кунпа пӗрлех тырпул хатӗрлеме тапрататпӑр. Кулак, ҫпеккуҫант ҫывӑрмаҫҫӗ, вӗсем те хатӗрлеме тапратаҫҫӗ вӗт. Вӗсем ӗҫхресҫенӗн тырри патне аллисене ҫӑсма темӗн ҫухлӗ майсем тупаҫҫӗ. Колхос тырри патне алӑ ҫӑсма йӑвӑртарах конешнӑ. Анҫах кунта та хӑй тӗрлӗ хӑрушлӑх пур. Ӑна халех курмалла. Калӑпӑр пӗр-пӗр кол-

хоçнĕк спеккуӆантпа çыхăнаť. Áна колхоçнĕксен пĕтĕм масси хĕтĕрме тытăнаť. Колхоса нумай пулмасť кĕнĕ колхоçнĕк хăшпĕр ђух вара: „Уйрăм хуçалăхпа пурăннă пулсан, хамăн тырра кама кирлĕ, ăна сутаттăмђĕ. Халĕ апла тума çук, пĕтĕм колхос ун çинђен пĕлме пултараť“, тесе калаçма пултараť. Çак никĕс çинђе хăшпĕр çĕрте уйрăм елементсем колхосран тухма та пултараççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенђен çирĕплетес ĕçрен пĕр минутлăха та пăрăнма йурамасť. Колхос суту-илўне сарнипе пайанхи çак тĕп сатађа пурнăçлас тĕлĕшпе усă курмалла. Кам çакна çине тăрсах тумасť, унта кулак, спекуӆант хăйсен ĕçне ăнăçлăн туса пыма пултараççĕ.

Колхосăн пурлăхĕшĕн ответлă пулса тăнине ўстермелле. Колхос пурлăхне, тырпуллине салатакансене, çаратакансене хĕсĕрлес политтĕке вăйлатмалла.

Спеккуӆантсемпе, колхоса салатса йама хăтланакансемпе, колхоçнĕксене хĕстерекенсемпе хайаррăн кĕрешмелле. В. И. Ленин екканомĕкĕн çĕнĕ политтĕкĕ пуçланнă ђухне спеккуӆантсене малтанхинђен виçĕ хут çирĕпрех, айăпшăн хĕн кăтартмалла, тенĕ.

Спеккуӆантла елементсем ђĕрĕлме пултараççĕ, ăна курсах тăмалла. Çак пулма пултаракан хăрушлăхсем çинђе уйрăмăнах хытă асăрхаттарса, вĕсене çинђех сирме сирĕн шухăша мопилисатсилессишĕн епĕ.

Комуниссен, комсомолĕссен класла сисĕмлĕхне нихçанхинђен ытла ўстермелле. Колхос активне, тата колхоçнĕксене çирĕп орканисатсилемелле. Ĕçхресђенĕсен ђи лайăххисене колхос йенне çавăрмалла.

## Кĕраки—ответлă сатађ.

Колхоссене орканисатсиллĕ ĕçпе хуçалăх йенђен çирĕплетес, тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе илсен, кĕраки çĕнĕ пусăм пулса тăраť. Пирĕн çак ĕçре каллех пысăк çитменлĕхсем пур. Ирхи çĕртме тăвас плана пĕр район та пурнăçламан. Ирхи çĕртме мар, хăшпĕр çĕрте çĕртме (хытă сухана) халĕ те пĕтермен. Çĕртмен пахалăхĕшĕн кĕрешесси пĕре те çителĕклĕ мар. Сăмахран, Канашпа Йĕпреç МТС-сем хăшпĕр колхоссенђе çĕртме сухине шăйăрлђăклă, ăшăх тунă. Халĕ колхоссем тепĕр хут сухалама шутлаççĕ. Ку машшинпа трактăр стантсисене ђыс тумасť.

Кĕракине хатĕрленес ĕçре пирĕн çуракинђе, тата халĕ тырпул пухса кĕртес çĕрте пулнă çитменлĕхсене хисепе илмелле. Ђăн та çитменлĕхсем пур ĕçре те пĕр пек, пĕр тĕслĕ пулмаççĕ. Çуракипе тырпул пухса кĕртес ĕçсенђи çитменлĕхсене илсен çакăн пек пĕр тĕп вывăт пулмалла, вăл—ĕçе тĕплĕн хатĕрленсе илменни, колхоссене витĕр пĕлменни пулаť.

Çуракинђе хăшпĕр колхоссем ака планне тултарма пултарайман хăрушлăх умĕнђе тăђĕç. Ђăн та Опком пўровĕн ђленĕсене, тата Шупашкар хулинђи пĕтĕм актива вырăнсене кăларса йарса çак хăрушлăха вăхăтра сиртĕмĕр. Мĕншĕн çавнашкал пулса тăђĕ? Мĕншĕн тесен районсем колхоссен ђăн-ђăн пурăнăçне пĕлмен.

Вырăнĕ-вырăнĕпе ĕçлекенсем, лашасем çителĕклĕ пулман. Ку колхоссене вăхăтра пулăшу памалла пулнă, пулăшăва çинђех паман. Ун вырăнне „мĕнле те пулин акса хăвараççех“, тесе лăпланса ларнă. Машшинсене йусаса çитермен пулнă. Суха-акана тирпейлĕ туман, вăрлăха пур çĕрте те тасатса акман т. ыт. те.

Халĕ пĕр вăхăтра темиçе пысăк кампанисем пыраççĕ. Пĕр вăхăтра тенĕ пекех тырпул пухса кĕртесси, тырпул хатĕрлесси, кĕракине иртересси т. ыт. те пыраççĕ. Çак пысăк ĕçсене пурне те вăхăтра, ăнăçлăн туса иртерес тесен ĕçе, тĕрĕс орканисатсилемелле. Тырпул пухса кĕртме, авăн çапма кĕракине тума мĕн-мĕн кирлине, ăçта мĕн ђухлĕ вăй кирлине тĕплĕн шутласа хумалла.

Кĕракинђе мĕн тумаллине, мĕнле иртермеллине партти Опкомĕн пўровĕ татăклăн кăтартса пађĕ. Вăхăта уссăр сайа йамалла мар. Çак кăтартăва пурнăçлама çанăсене тавăрсах тытăнмалла. Кăçал пирĕн 250 пин кектар акса хăвармалла. Çав шутран кĕрхи тулă 378 кектар, иртнĕ кĕркунне 40 кектар акса хăвармалла, тата 600 кектар хĕвелçавăрăнăш акса хăвармалла. Ку пирĕншĕн çĕнĕ ĕç. Хăçан, мĕнле акмаллине акрономсен колхоçнĕксене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Кĕраки тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн, акротехнĕккăла ĕçсене пурнăçлассишĕн кĕрешес лосăнксемпе иртмелле. Çакна кĕракинђе тĕп вырăна хурса пуринђен малтан çак ĕçсене тумалла. Ака-сухана пит те тĕплĕн тумалла. Ыраша пĕтĕмпех тасатса машшинпа акмалла. Тулăна пĕтĕмпех тасатса çуса акмалла. Суртлă вăрлăхсемпе акас плана пĕр сăмахсăр пурнăçламалла. Çурçĕр йенђи районсенђе авкустăн 15-ђен, кăнтăр йенђи районсенђе авкустăн 20-ђен кайа мар вăрлăха тасатас ĕçе пĕтермелле. Вăрлăх тасатмалли, тырă акмалли машшинсене пурне те йусаса хатĕрлесе лартса, вĕсемпе мĕн май килнĕ таран ытларах ĕçлемелле.

Респуплĕкпе вăрлăх фонђĕ кĕраки вађђи 140,374 ђентнĕр, çураки вађђи 255,540 ђентнĕр пулмалла. Страхла фонта планпа кăтартса панине пухмалла. Страхла фонтра тăракан тырра çĕнĕ тырăпа улăштармалла.

Уйар çанталăкпа, тырпула сийен тăвакан хурт-кăпшанкăсемпе, çум куракăсемпе кĕрешес çĕрте çуртри тыррисене акмалли çĕре кĕркунне сухаласа хăварасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăçал 190 пин кектар сухаласа хăвармалла. Каллех каламалла, çак ĕç тавра акротехнĕккăлă ĕçсене пурнăçлассишĕн акитатсилени çукпа пĕрех. Кĕрхи суха тăвассине пит те ансăрăн ăнланаççĕ, ăна тырпул тухăçлăхне хăпартас сатађпа çыхăнтарма пĕлмеççĕ. Иртнĕ çул нумайăйĕшĕсем çĕр шăнас умĕн çеç сухаласа хăварђĕç. Çапла хăтланнине кĕрхи суха тăвас ĕçрен мăшкăлани пулать тенисĕр пуçне урăхла йат пама çук. Ку сухана ыраш вырса пуçтарсанах тытăнмалла. Кĕр-икĕ çул кайарах хресђенсем çак ĕçе сыхланарах, „инкек-синкек ан пултăр“, тесе тытăннă пулсан, халĕ нумайĕшĕсем кĕрхи суха уссине ăнланса илђĕç. Пирĕн йенђен çак ĕçе орканисатсилеме пĕлни кирлĕ. Ĕçе кирлĕ пек орканисатсилесен плана пурнăçлатпăр. Кĕрхи суха тырпул тухăçлăхне ўстернисĕр пуçне, çуракинђи ĕçе çăмăллатать, ăна вăхăтра туса пĕтерме май парать.

Çуркунне акана ир туни тырпул тухăçлăхне 20—25 ÿстерет.

Кашни происвотствăллă прикатăна уйрăм уҫҫасткăсем çумне çыпăçтармалла. Прикатăн тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешес ĕçе çĕре хăйĕн çумне çыпăçтарнă уҫҫаскăра ĕçлеме тытăнниңҫен, акма вăрлăх хатĕрлениңҫен пуçласа пиçнĕ тырра пуçтарса кĕреҫҫен туса пымалла.

Епĕ çакăнтах çалос çинҫен пĕр-икĕ сăмах каласа хăварасшăн. Çилос каллех пĕҫĕк ыйту мар. Çилосшĕн кĕрешни сотсиалисăмла выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетессишĕн кĕрешни пулаť. Кăçал 93 пин тоннă çилос хывса хăвармалла, пĕлтĕр 45 пин тоннă хывнă. Çак плана тултарма кирлĕ условисем пурĕш те пур, çине тăрса ĕçе тытăнасси çеç кирлĕ.

## Колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетесси тĕп сатаҫ пулаť.

Ку таранҫҫен епĕ мĕнле ĕçсем çинҫе ҫарăнса тăтăм, вĕсем пурĕш те колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен çирĕплетес ыйтăва кулленхи ĕçрен уйăрма май çук, вĕсене епĕр кулленхи ĕçпе кĕрешĕвре тĕреклетсе пыратпăр. Çавăнпа çÿлерех асăннă сатаҫсене; тырпул пухса кĕртес, тырпул хатĕрлес, кĕракине иртерес, тата тупăша валеçес ĕçсене ăнăçлăн пурнăçланинҫен ĕнтĕ колхоссене тĕреклетесси килет. Колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетессишĕн кĕрешесси, петтилеткăна тăвать çулта тултарассишĕн кĕрешни пулаť. Çапла ĕнтĕ колхоссене тĕреклетессишĕн ҫăнласах кĕрешнине çÿлерех асăннă сатаҫсене ăнăçлăн пурнăçланине пăхса пахалатпăр.

Колхоссенҫе ĕçе йĕркелесси тĕп сатаҫ пулаť. Епĕр ĕçе çĕнĕ технĕккăна сарса пынă никĕс çинҫе сотсиалисăмлă йĕркепе орканисатсилетпĕр. Хресҫен уйрăм хуçалăхпа пурăннă ҫухне 2—3 кектар çинҫе мĕн тумаллине аван пĕлнĕ. Мĕншĕн тесен вăл çав çĕр çинҫе ĕмĕртенпе ĕçленĕ, ăна пур йенҫен вĕренсе, ĕç оппăтне ĕмĕрĕпе, пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка пухса пынă. Уйрăм хуçалăхăн хуçалăх йĕркисем шултра хуçалăхсемшĕн йурăхлă мар. Колхоçнĕк хуçалăха 200—500—1000 кектар çĕр çинҫе тăваť. Халĕ суха тăвас, ака тăвас, вырас, капан-сĕкĕрт тăвас, авăн çапас ыйтăвсем пĕтĕмпех урăхла тăраççĕ. Хăшпĕр колхоссенҫе 400—500 хуçалăх шутланаççĕ. Ку вăл пĕр пысăк савăт. Ăна пысăк савăтпа танаштарма май çук. Савăта оппăтла çынсем йертсе пыраççĕ, унта иншенерсемпе технĕксем теçеткăшерĕн шутланаççĕ, çултан çул оппăт пухса пынă рапоҫҫисем ĕçлеççĕ. Колхосра мĕн? Колхоса ĕнерхи мушик йертсе пыраť, акрономĕ те çулталăкра 2—3 хут кăна пырса кайаť, харпăрлă туртăмсем те хăйсене хытă сисĕнтереççĕ. Колхосра оппăт халĕ çеç пуçланаť. Çаксен çумне тата кулак урса кайсах кĕрешнине хушмалла. Йулташсем çак ыйтăва тĕпрен ăнланса илмен. Ĕçе йĕркелессине кирлĕ пек лартмаççĕ. Ĕçе йĕркелес çĕрте прикатă тĕп вырăнта тăраť. Партти Тĕпкомĕ

ҫалта пыракан колхоссен оппӑтне хисепе илсе пӗр йышпа, пӗр уҫҫаскӑра ӗҫлекен происвотствӑллӑ прикатӑсем пулмалла, тесе кӑтартса паҫӗ. Мӗншӗн ҫакӑн пек тумалла? Мӗншӗн тесен пӗр йышпа пӗр уҫҫаскӑра ӗҫлекен прикатӑ ӗҫе аванрах тума, хӑйӗн ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ лашасене, ӗҫ хатӗрӗсене лайӑхрах пӑхса усрама тӑрӑшать. Колхосӑн, колхоҫнӗксен тупӑшне ӳстерес йенҫен илсен, пӗр йышпа пӗр уҫҫаскӑра ӗҫлекен прикатӑ колхоҫнӗксемшӗн те килӗшӗвле формӑ пулса тӑрать. Тепӗр йенҫен ҫакӑн пек происвотствӑллӑ прикатӑ колхоҫнӗксен харпӑрлӑ туртӑмӗсемпе кӗрешессине, ӗҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗрентессишӗн кӗрешессине ӑнӑҫлӑнрах туса пыма май парать.

Ҫылай орканисатсисем прикатӑсене ҫирӗплетес сатаҫа хӑйсен ӗҫӗнҫе тӗп вырӑна хумаҫҫӗ. Ҫавӑн пирки те прикатӑсем улшӑнса пыраҫҫӗ. Шупашкар р-ҫе ҫураки хыҫҫӑн происвотствӑллӑ прикатӑсем саланса кайнӑ. Кун пеккисем ытти районсенҫе те пур. Саланса кайма пама мар, прикатӑсене орканисатсилес оппӑта пур йенҫен вӗренсе, вӗсене татах ҫирӗплетмелле. Пирӗн уйрӑмӑнах прикатирсене ҫитӗнтерес ыйту ҫине вирлӗн пӑхмалла. Халӗ прикатирсене ҫитӗнтерессии пысӑк ыйту пулса тӑнине тивӗҫлипе хак памаҫҫӗ. Хӗрлӗҫутай Райколхоссойус „прикатирсене уйӑхне 4—6 ӗҫкунӗ памалла“, тенӗ кӑтарту парать. Ку кӑтарту прикатир ҫи лайӑх утарнӗкрен кайа мар ӗҫкунӗ илмелле тенине никӗш йенҫен те ҫыхӑнмасть. Кун пеккисем пӗр Хӗрлӗҫутай районӗнҫе ҫеҫ мар. Тутаркас районӗнҫе те хӑшпӗр колхоссенҫе прикатирсем уйӑхне 6—8 ӗҫкунӗ ҫеҫ илеҫҫӗ.

Колхос претҫетаттӗлӗсене, прикатирсене вырӑнӗ-вырӑнӗпе йӗркесӗр улӑштарса пыраҫҫӗ. Йанвар уйӑхӗнҫен пуҫласа хаҫхи вӑхӑта ҫитеҫҫен 7—8 претҫетаттӗле ҫитнӗ колхоссем те пур. Шупашкар р-ҫе тырӑ вырма тухас умӗн пӗр колхосра нимӗн сӑлтавсӑр претҫетаттӗле ӗҫрен кӑларнӑ. Колхоҫнӗксем „Партти Тӗп комӗ, тата Опком кӑтартнисене шута илсе, епӗр претҫетаттӗле нимӗн сӑлтавсӑр ӗҫрен кӑларнине хирӗҫ“, тесе хут ҫыраҫҫӗ. Елӗк районӗнҫе пӗр колхос претҫетаттӗлне районри Колхоссойус инструктӑрне района кайма лаша паманшӗн ӗҫрен кӑларнӑ. Мӗне йурӑхлӑ ҫавӑн пек хӑтланни? Ҫавӑн пек хӑтланакан пӳрократсене хытӑ айӑпламалла. Унсӑрӑн ҫирӗп катӑрсем хатӗрлеме ҫук. Колхоса йертсе пыракан катӑрсем хатӗрлессине, вӗсене ӗҫре ҫирӗплетессине мӗн пур вӑйпа туса пымалла. Ҫак сатаҫа мӗн ҫухлӗ хӑвӑртрах пурнӑҫлатпӑр, колхоссене ҫавӑн ҫухлӗ хӑвӑртрах тӗреклететпӗр, вӗсен хуҫалӑхне аванлататпӑр, колхоҫнӗксен пурнӑҫне тата хӑвӑртрах аванлататпӑр. Прикатира районри Ҫӗр пайӗпе Колхоссойус пӑхса тухмасӑр, колхос претҫетаттӗлне Ҫӗрӗҫ кӑмиссариаҫӗпе Ҫӑвашколхоссойус пӑхса тухмасӑр ӗҫрен никам та кӑларма пултараймасть. Ӗҫре ҫак йӗркене ҫирӗп тытса пыни кирлӗ.

Колхоссем ҫирӗп пулҫҫӑр тесен пирӗн шут ӗҫне йӗркелес пулать. Уҫҫотсӑр колхос хуҫалӑхӗ тупӑшлӑ пулма та пултараймасть. Унсӑрӑн шултра хуҫалӑхра ҫухалса, пӑтранса кайасси те инҫетре мар. Уҫҫот ҫук ҫӗрте шултра хуҫалӑх та пулма пултараймасть. Хӑшӗсем кӑна ытлашши каламанши, тейӗҫ. Пӗре те

ытлашши мар, вăл çаплах пулаť. Ленин акă мĕн каланă: „Ĕç шуђĕпе протуктăсем валеççе тăнине шута илсе, тата тĕрĕслесе пырасси—сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетес ĕçĕн никĕсĕ пулаť". Ленин—„Сотсиалисăма вăл—уђђот" тесе пĕрре çеç мар каланă.

Уђђот нађарри пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ђи пысăк ђирĕ пулаť. Çав ђирпе кĕрешме колхоçнĕксен пĕтĕм массине, пĕтĕм колхос активне пĕрлештермелле. Çак майпах колхоссене ĕçлеме пултаракан оппăтлă сђоттовотсемпе çирĕплетмелле.

Уђђотсăр тупăша валеçме те хĕн. Тупăша тĕрĕс валеçменни пĕрлешӳллĕ хуçалăха салатса йама, вăл колхоçнĕксен ĕçе хăвăртрах та авантарах тăвас интересне сӳрĕлтерме кăна пулăшаť. Тупăша валеçесси колхосра ђи ответлă тапхăр. Иртнĕ çул тупăша йетак тăрăх валеçнĕ колхоссем те ђылай пулђĕç. Йетак тăрăх валеçни сийенлĕ йапала пулни çинђен çĕршер тĕслĕх кăтартса пама пулаť. Тупăша пĕр тан, йетак тăрăх валеçнĕ çĕрте тăрăшса ĕçлекенĕ тивĕçлĕ тупăша илеймесĕр йулаť. Çав хушăрах çын ĕçĕпе пурăнма йуратакан кахал çын ĕçлемесĕрех тупăш илсе выртаť. Çакăн пек колхосра кулак вађђи колхоспа кĕрешме çăмăл майсем темĕн ђухлех. Кулак утарлă ĕçлекен колхоçнĕке: „Мĕншĕн вăйа хурсах ĕçлетĕн, пур пĕр мĕн ĕçленине памаççĕ. Ĕç ухмахсене кăна йуратаť," тесе пăшăлтатаť. Çав вăхăтрах кахалне: „ĕçлеме ан васка, есĕ пур пĕрех хăвна тивĕçлинђен ытлашши илетĕн", тесе йĕкĕлтет.

„Сулахай "оппортуниссем: „Мĕнле-ха апла. Сотсиалисăм тапхăрне кĕтĕмĕр, сотсиалисăмра пур те пĕр тан илмелле. Халĕ тупăша кам мĕн ђухлĕ, тата кам мĕнле ĕçленине пăхса памалла", тесе тĕлĕнеççĕ. Кăна хирĕç çапла тавăрса каламалла. Епĕр кам мĕн ђухлĕ ĕçлеме пултарнă, кашни çын хăйне кирлĕ таран илме пултарас тапхăра çитмен-ха. Ун пекки комунисăм опђĕствинђе çеç пулма пултараť. Епĕр çавăншĕн кĕрешетпĕр те ĕнтĕ. Анђах халĕ кама мĕн кирли пурне те çителĕклĕ мар. Халĕ ĕç те çынсен ђи кирлĕ йали пулса тăрайман-ха. Пĕри пĕтĕм вăйа хурса утарлăн, тепри „сахалтарах ĕçлес те, нумайтарах илес", тесе ĕçлет. Хуçалăх тытăнса тăма çеç те мар, вăл пођшевикла хăвăртлăхсемпе тĕрекленсе ӳссе пытăр тесен, ĕçхалăхне хăйĕн ĕçне тивĕçлипе тӳлессишĕн интересленсе тăни кирлĕ.

Çавăнпа та тупăша валеçес çĕрте „кам ытларах, тата лайăхрах ĕçлет—вăл нумайрах илет, кам ĕçлемест—вăл нимĕн те илмест" тенĕ йĕрке пулмалла. Çак йĕркепе тупăша валеççен çеç, епĕр тырпула та васкавлăн, тăкаксăр пуçтарса кĕме, йалхуçалăх тухăçлăхне те ӳстерме пултаратпăр. Хăшĕсем тупăша çак йĕркепе валеçетпĕр теççĕ те, анђах ђăннипе илсен çак йĕркепех мар. Нумай çĕрте кам мĕн ђухлĕ ĕçленине çеç шута илсе пыраççĕ, кам мĕнле ĕçлени çине çаврăнса пăхмаççĕ. Ку пире килĕшӳллĕ йапала мар. Ку йалхуçалăхĕн тупăшне ӳстерме, йалхуçалăхĕнђе çухатупа кĕрешме пулăшакан йапала мар. Çавăнпа ĕнтĕ ССРС Халăх кăмиссарĕсен канашĕпе Партти Тĕпкомĕ:

„Колхоссенђе ĕçе лайăх орканисатсилени кашни прикатана, çав шутах—уйрăм колхоçнĕке, хăйсен ĕçне кура, пĕлтĕрхинђен те ытларах интереслентермелле. Çакна май вара

пур çĕрте те, пур колхоссенҫе те прикатăллă (ушкăнлă) çтелшҫĕнă тумалла, çакăн пек тунипе, колхос правлени прикатăпа прикатирĕн ĕçкунне (йе ĕçлесе тунă ĕçе кунĕ хисепне) прикатă ĕçĕн пахалăхĕ тăрăх (тăкак мĕнле пулнă, тырпул пуçтарса кĕрес вăхăт мĕн ҫул вăхăта пынă, авăна мĕнле çапнă, тырпула мĕнле турттарнă) 10—20 проҫҫăн хушшинҫе ўстерсе, йе ҫакарса хак хурса памалла пултăр", тесе кăтартса паҫĕ.

Пирĕн çак йĕркене çирĕп тытса пымалла. Кунпа пĕрлех ĕçкунĕ хисепĕнҫен иртерсе ĕçленĕ колхоçнĕксене тупăшран тивĕçлĕ пайне тыррăн парассине ҫакармалла тунă йĕркесене пăрахăçа кăлармалла. Утарлă ĕçлекен колхоçнĕк тыррăн та, укçан та ытларах илмелле.

Тепĕр пысăк ыйту, вăл—выҫăх апаҫĕсене валеçсе парасси. Иртнĕ çул ертеле çирĕплетсе çитермесĕр тўррех комуна ҫăмма йуратакан вĕри пуçсем колхоçнĕксене хăйсен аллинҫи выҫăхҫĕрлĕхсем ваҫҫи апат-çимĕçсем памасăр кутăнланса тăҫĕç. Паллах, пирĕн ҫи малтан пĕрлештернĕ выҫăхсем ваҫҫи апат-çимĕç çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла. Кунпа пĕрлех колхоçнĕксене ĕне, вак-тĕвек выҫăхсем, ҫăх-ҫĕпсем ĕрҫетме пулăшас тетпĕр пулсан, вĕсем ваҫҫи апат-çимĕç тăратасси çине те тивĕçлĕн пăхмалла. Калăпăр, пĕр колхоçнĕкĕн выҫăх нумайрах, теприн сахалтарах. Мĕнле тумалла? Парттипе правиттĕлствă акă мĕнле тума хушаť:

„...выҫăх апаҫĕ илмен, йе сахал илекен колхоçнĕксем выҫăх апаҫĕ вырăнне ытти çимĕçсем илме пултарҫҫăр, анҫах кун пек тусан та, паллă колхосри ĕçкунĕ çине тивекен протукси хисепĕнҫен иртмелле мар".

Атминистратсипе тытăм расхуҫĕ ҫылай колхоссенҫе 10—15% çитет. Ку ҫăтма çук йапала вĕт. Ку расхут темле пулсан та, мĕн пур пек тупăшран 3 проҫҫăнран ытла пулмалла мар. Атминистратсипе тытăм аппаратĕнҫе ĕçлекенсем тыррăн илесси колхоçнĕк илекен вăтам виçерен иртмелле мар.

Партти Тĕпкомĕ малтан çапса илнĕ тырăран ĕç кунĕ тăрăх 10—15 проҫҫăн аванс памалла, тесе кăтартса паҫĕ. Çак кăтартăва пурнăçа кĕртме пĕр район та тытăнман-ха. Аванс парассине тĕрĕс органисатсилени тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн кĕрешнине пĕлтерет. Аванс парассине опесаттĕлнă тумалла, ăна пурнăçланă ҫух партти кăтартса панинҫен тухмалла мар.

Сотсиалисăмла ăмăртăва, утарнĕҫҫĕствăна сарса йарасси, ку ĕçе йертсе пырасси çине уйрăмăнах çаврăнса пăхмалла. Тĕп çитменлĕх—утарлă ĕçе акротехнĕккăна вĕренсе ăнланса илес сатаҫа çыхăнтарма пĕлменни пулаť. Çавă ҫăн-ҫăн утарнĕк, кам пĕрлешўллĕ пурлăх çине упраса пăхаť, кам пĕтĕм вăйпа акротехнĕккăна вĕренсе ăнланса илме тăрăшаť, кам поҫшевикла хăвăртлăхсемпе ĕçлет, пĕр пуçарнă ĕçе вĕçне çитерет.

Пĕрлешўллĕ хуçалăха йĕркеллĕ туса пырасси çăмăл ĕç мар вăл. Кунта вăхăтлăха ĕç ăнманни те пулма пултараť, йăвăрлăхсем те сахал мар. Колхосра пĕр ик-виçĕ çул тăракан, ушкăнлă происвотстăра пиçĕнсе тăракан колхоçнĕк колхос тăвасси уйрăм йăвăрлăхсемсĕр пулманнине тивĕçлĕн ăнланса илнĕ. Вăл вăхăт-

лăха ĕç ăнманнинђен хăраса ӳкмест. Вăл йăвăрлăхсене çĕнтерме мĕн пур вăйпа кĕрешет. Колхоса нумай пулмасӑ кĕнисем тепĕр ђухне йăвăрлăхсен умĕнђе алăсене усаççĕ. Пирĕн колхос активĕ урлă колхоçнĕксен пĕтĕм массине йăвăрлăхсене çĕнтерме пĕрлештермелле. Уйрăм хуçалăхпа пурăнаканĕ, йапăх ĕçлекен колхоссене пăхсса: „Иртнĕ çул тыррине те тирпейлĕ пуçгарса кĕреймерĕç, тăхтам-ха колхоса кĕме, кăçал мĕнле ĕçлĕç," тесе шухăшлаӑ. Кулак ăна: „пăх ĕнтĕ колхоçнĕксем мĕнле ĕçлеççĕ, колхоса кĕрес тетĕн, пуçна çухатман пулсан пăрăн айаккарах" тесе йĕкĕлтет. Çавăнпа та колхоссен хăйсен ĕçне питех çыпçуллăн, йĕркеллĕн туса пымалла. Тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕмелле, тупăша тĕрĕс валеçмелле, патшалăх умĕнђи опесаттĕлствăсене вăхăтра татмалла, кĕракине аван иртермелле, пĕрлештернĕ выђăхсене аван пăхмалла, ĕçе тĕрĕс орканисатсилемелле.

Машшинпа трактăр стантсисем çур тыррисем акса хăварнă çĕр лаптăкĕ пĕлтĕрхипе танаштарсан икĕ хут ӳсрĕ. Кăçал МТС-сем пĕлтĕрхинђен аванрах ĕçлеççĕ пулсан та, вĕсен ĕçне аван теме пултараймастпăр. Канаш, Çĕрпӳ, Вăрнар районсенђе тырпул пухса кĕртес ĕç нађар пыраӑ. Вĕсенђе МТ стантсисем пур. Паллах, тырпул пухса кĕрес ĕç нађар пынишĕн МТС-сем ђылай ответлă пулаççĕ.

Трактăрсемпе, тата ытти машшинсемпе кирлĕ пек усă курасси пит те пысăк сатађ вăл. Трактăрсемпе, ытти машшинсемпе халĕ мĕнле усă кураççĕ? Трактăрсене тирпейлĕ тытмаççĕ, ђасђасах çĕмĕреççĕ. Канаш МТС-ђи улттăмĕш номĕрлĕ трактăрах илер. Ку трактăр 2—3 кун сиктерсех пăсăлаӑ: потшипнĕк ирĕлет, шаттун шаккама тытăнаӑ т. ыт. те. Çак йапала мĕнрен килет? Паллах, трактăрисран килет. Трактăрис машшина тăрлавсăр тыткалаӑ.

Теприсем машшинпа ђăрсăрланса ĕçлеççĕ, реккорт парасшăн. Машшина талăкра 24 сехет ĕçлеттерсе ăна кĕске вăхăтра пăрахăçа кăларни пулмалла мар. Кашни трактăрпа, кашни машшинпа мĕнле пулсан та ытларах вăхăт ĕçлеме тăрăшмалла. Машшинсене çĕмĕрес мар, вĕсемпе мĕнле пулсан та ытларах вăхăт ĕçлес тесен, технĕккăна çине тăрсах вĕренсе çĕнсе илмелле. МТС-ђе уйрăмăнах ĕç пахалăхне аванлатас тĕлĕшпе хытă ĕçлемелле.

МТС колхос строиттĕлствинђе пуç пулса йертсе пыраканĕсем пулмалла. Кашни МТС çапла туса çитерессишĕн пирĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешмелле. МТС тырпул пухса кĕртес ĕçре те йертсе пырас вырăна йышăнмалла. Тырпул пухса кĕрес хăвăртлăха кунран кун ӳстерсе пымалла.

Колхосăн тухăçлăхне ӳстересси тĕп сатађ пулаӑ. Колхоссем малтанхи икĕ çул хушшинђех уйрăм хуçалăхран тупăшлăраххине кăтартрĕç. Анђах ку тĕлĕшпе сахал ĕçлетпĕр-ха. Колхоссен тупăшне ӳстерме кирлĕ майсем пурĕш те пур. Йулашки икĕ çул хушшинђе колхоссене кивçен укça нумай патăмăр. Пирĕн респуплĕкре 8 МТС ĕçлет. Машшинсемпе ĕçлесси çултан çул ӳссех пыраӑ.

Пĕрĕмĕш, пирĕн умра тăракан вирлĕ сатађ, вăл—тырпул тухăçлăхне, выђăх-ђĕрлĕх протуксине ӳстерессипулаӑ. Çакна май

йалхуҫалăхĕн пур уђђаскинђе те ҫухатупа кĕрешесси уйрăмăнах пысăккăн тухса тăраť. Тырпула тăрлавсăр пухнă май, акротехнĕккăлă ĕҫсене ҫине тăрсах пурнăҫламан пирки, ҫум куракĕсемпе нађар кĕрешнипе, выђăх-ђĕрлĕхе кирлĕ пек пăхманнипе епĕр йалхуҫалăхĕнђе тĕрлĕрен ҫимĕҫсем шутсăр нумай ҫухататпăр. Ҫавăнпа епĕр ҫухатусемпе кĕрешме пĕтĕм вăйа пухмалла, тетпĕр.

Иккĕмĕш, тĕш тырпул хуҫалăхне ӳстерсе пынипе, сотсиалисăмлă выђăх ђĕрлĕхе ĕрђетнипе пĕрлех кайăк-кĕшĕк, кролĕксем ĕрђетесси, пахђа ҫимĕҫсем тăвасси, пыл хурђĕсем ĕрђетесси, уйрăмăнах аласти промыслисене вăйлатасси ҫине те вирлĕн ҫавăрăнса пăхмалла. Ку тĕлĕшпе колхоссен пуҫарăвне мĕн пур пек майсемпе хавас тумалла.

Виҫҫĕмĕш, колхоҫнĕксен пĕрлештермен хуҫалăхне (ĕне, вактĕвек выђăх, ђăх-ђĕпсем, килти пахђа) тытса пырасси. Хăшĕсем ҫакна тăвасран шутсăр хăраҫҫĕ, вĕсем „колхоҫнĕксене хăйсен пĕрлештермен хуҫалăхĕсене тытса пыма ирĕк парсан, колхос саланса каймĕ-ши“, тесе шутлаҫҫĕ. Ку кирлĕ мара калаҫнинђен урăх нимĕн те мар. Кунтан хăрамалли ҫук, мĕншĕн тесен ĕҫ тумалли хатĕрсене пĕрлештернĕ, ҫĕре пĕрлештернĕ. Кунта ђăн та пĕр хăрушлăхран сыхланма кирлĕ. Колхоҫнĕксем хăйсен пĕрлештермен хуҫалăхĕ ҫине тĕп хуҫалăх ҫине пăхнă пек пăхса, колхос хуҫалăхне иккĕмĕш вырăна хурасран сыхланмалла. Пирĕн колхоҫнĕксене колхос хуҫалăхĕ ҫине тĕп хуҫалăх, хăйĕн тăван хуҫалăхĕ ҫине пăхнă пек пăхма вĕрентмелле. Ку тĕлĕшпе ђăн та нумай ĕҫлемелле. Колхос хуҫалăхĕ тĕп хуҫалăх, колхоҫнĕксен пĕрлештермен хуҫалăх ҫак тĕп хуҫалăх ҫумне хушса тăвакан хуҫалăх—акă мĕнле сатаđ тăраť пирĕн умра.

Ҫак майпа выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ыйту уйрăмăнах ҫивĕђђĕн тухса тăраť. Вырăнĕ-вырăнĕпе хăшĕсем икĕ тĕслĕ йăнăш тăваҫҫĕ. Пĕрисем колхосра выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетессине хирĕҫ пыма хăтланаҫҫĕ. Теприсем колхоҫнĕкĕн ĕнине мар, пăрушне те, ђăххиђĕппине те пĕрлештерме хатĕр. Паллах, вĕсемпе иккĕшĕпе те хытă кĕрешмелле.

Ĕҫре пулнă пăрăнђăксене тӳрлетнипе кулак хăйне кирлĕ пек усă курма тăрăшаť. Вăл пĕрлештернĕ выђăхсене кайалла тавăрттарса партарассишĕн хытă кĕрешет.

Пĕтĕм вăйпа ҫакна каламалла. Выђăх-ђĕрлĕх ыйтăвне шултра сотсиалисăмла выђăх-ђĕрлĕх происвотствине—совхоссене, таварлă фермăсене тĕреклетсе сарса пынă йенĕпе кăна татса пама пулаť. Таварлă фермăсене ҫирĕплетесси, вăл рапођђисене аш-какай, сĕт-ҫу тăратассине аванлатнине кăна мар, вăл ҫавăнпа пĕрлех колхоҫнĕксен тупăшлăхне ӳстернине, колхоссен хăйсен хуҫалăхне тĕреклетнине пĕлтерет. Ҫакăнпа пĕрлех пирĕн колхоҫнĕксене ĕне выђăхсем, вак-тĕвек выђăхсем, ђăх-ђĕпсем ĕрђетме мĕн пур майсемпе пулăшмалла. Ҫапла ĕнтĕ колхос пурнăҫне колхоҫнĕкĕн хăйĕн пурнăҫ интересĕсемпе ҫыхăнтарма пĕлни кирлĕ.

Йулашкинђен, колхос пурлăхне вăрланипе, ҫаратнипе, унталла-кунталла салатнипе, ĕҫе хуҫасăрлăхлă, пуҫтарусăр туса пынипе вирлĕн кĕрешмелле. Ҫакăн пек киревсĕр ĕҫсем тăваканĕсене револђутсиллĕ саккунлăхăн мĕн пур хайарлăхĕпе тертлентермелле.

# Икĕ фронтпа кĕрешессине вăйламалла.

Ленинисăм пире хресѕенсене колхоса ирĕккĕн кӳртмелле, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем уйрăм хуçалăхсенѕен усăллăраххине ăнлантарса памалла, ăна ĕçпе, оппăтпа кăтартмалла, тесе вĕрентет. Партти Тĕпкомĕ „колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенѕен тĕреклетес сатаѕ хаљхи вăхăтра, пуринѕен малтан, колхоссен ертеллĕ формине çирĕплетес сатаѕ пулаŤ", тесе кăтартса пани те ленинисăм тĕп вĕрентĕвĕнѕен тухса тăраŤ. Пирĕн партти колхос строиттĕлстви çинѕен йышăннă кашни решшенире пекех çакăн çинѕен [illegible]тă асăрхаттараŤ.

Сталин йул. „çитĕнĕвĕсемпе пуç çавăрăнса кайни" йатлă статйара, акă мĕн калаŤ:

> „Колхос йухăмĕн тĕп сыпăкĕ, хаљхи вăхăтра пуринѕен ытларах палăракан форми—йалхуçалăх ертелĕ пулаŤ. Халĕ пирĕн çак сыпăка—йалхуçалăх ертелне йарса илмелле. Йалхуçалăх ертелĕнѕе происвотстза тĕп хатĕрĕсене пуринѕен малтан тĕш тырă хуçалăх тĕлĕшпе пĕрлештернĕ: ĕç, çĕрпе усă курасси, машшинсемпе ытти хатĕрĕсем, ĕç выљăхĕ, хуçалăхри çуртйĕрсем. Çурт вырăнĕсене (пĕѕĕк анкартисене, сатсене), пурăнмалли çуртсене, сĕт выљăхĕн пĕр пайне, вак выљăх-ѕĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке т. ыт. ертелте пĕрлештермеççĕ. Ертел, тĕш тыра проплемине (ыйтуне) татса паракан ѕи килĕшӳллĕ тĕп форми пулаŤ. Çавăнпа та, ертел колхос йухăмĕн тĕп сыпăкĕ пулса тăраŤ".

Малалла, „колхоçнĕк йулташсене панă ответсем" йатлă статйара Сталин йул. çапла калаŤ:

> „Шултра тата тĕреклĕ комунсем оппăтлă катăрсем, шанѕăклă рукковотиттĕлсем пур пулсан кăна пурăнма, малалла кайма пултараççĕ. Ертелсене васкаса комун уставĕ çине куçарни хресѕенсене колхос йухăмĕнѕен сивĕтме кăна пултараŤ. Çавăнпа та, çак ĕçе пĕр васкамасăр тимлесе тумалла. Ертел тăвасси—çăмăлтарах ĕç, тата вăл хресѕен массишĕн пулсан ăнланса илме çăмăлрах ĕç. Çавăнпа та ертел хаљхи вăхăтра колхос йухăмĕн ѕи нумай сарăлнă форми пулаŤ".

Партти Тĕпкомĕ колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенѕен йышăннисене вуласа тухсан çакна аван ăнланса илме пулаŤ. Вĕсем пурте маркçисăм-ленинисăм вĕрентнинѕен тухса тăраççĕ, вĕсем партти Тĕпкомĕн малтанхи решшенисене тата ытларах тарăнлатса пыраççĕ. Халĕ нумай пулмасŤ „Правда" хаçат Çĕрĕç кăмиссарĕн Йаккăвлев йул. „Колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенѕен тĕреклетессипе колхоссен сутуилӳне сарса пырасси çинѕен" йатлă статйине пиѕетлесе кăларѕĕ. Ку статйа çине пĕр пĕѕѕен çын çырнă статйи çине пăхнă пек пăхмалла мар. Çак статйа урлă партти пире колхоссене тĕреклетес ыйту мĕнле тăнине татах тепĕр хут асăрхаттараŤ.

Пайан ку ыйту çинѕе татах тепĕр хут ѕарăнса тăма лекрĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен ленинисăм вĕрентнине практĕкла ĕçре пăснисем пĕтĕмпех пĕтмен-ха, çитменне вĕсем сайра хутра çеç те мар.

Сылтăм хăрушлăх ҫи пысăк хăрушлăх пулнă, халĕ те ҫаплах йулаť. Сылтăм оппортуниссем халĕ „пирĕн респуплĕкре колхос тума пулмасť", тесе уҫҫăнах калама пултараймаҫҫĕ. Колхос строиттĕлствинҫи ҫĕнтерӳсем ку теорийе пуҫпех ҫапса ҫĕмĕрҫĕҫ. Халĕ сылтăм хăрушлăхăн уйрăмлăхĕ ҫакăнта пулаť. Халĕ сылтăмрисем „ку таранҫҫен ҫакăн пек ҫитĕнĕвсем турăмăр, малашне ĕҫ хăй тĕллĕнех пулса пымалла", теҫҫĕ. Ҫакăнтан вара сылтăмрисем йалхуҫалăх уставне пурнăҫа кӳртессишĕн, колхосра ĕҫе орканисатсилессишĕн, тырпула пĕр тăкаксăр пуҫтарса кĕрессишĕн, колхоссене орканисатсипе хуҫалăх йенҫен тĕреклетессишĕн кĕрешмеҫҫĕ. Вăрмар районĕнҫе лашасене 40% кăна пĕрлештернĕ, Хĕрлĕҫутай районĕнҫе т. ыт. ҫĕрте пĕрлештернĕ лашасене калла тавăрса пани, Шупашкар, Елĕк, Тутаркас районĕсенҫе происвотствăллă прикатăсем саланса кайни, акротехнĕккăла ĕҫсене пурнăҫа кӳртменни мĕнрен килҫĕҫ пулаť-ха? Вĕсем ниҫта та мар—ĕҫ хăй тĕллĕн пуласса шанса тăнинҫен килнĕ йапаласем.

Сылтăм оппортуниссем кулак колхоса шал йенҫен аркатма хăтланнипе кĕрешмеҫҫĕ. Ҫавăнпа та ĕнтĕ уйрăм колхоссенҫе кулакла етемсем йава хывма пултарнă. Кунта епĕ хăш пĕр тĕслĕхсем ҫинҫе ҫарăнса тăратăп. Тĕслĕх Ҫуманкасси колхосне (Тутаркас р-нĕ) илер. Ҫак колхоса Ваҫҫилйĕв П. кулак сĕрĕнсе кĕнĕ пулнă. Ҫак кулак колхоса кĕреҫҫен ҫĕр тара илсе, ҫын вăйĕпе пурăннă. Вăл кăҫал та Елĕк районĕнҫен ҫăнăх илсе килсе, ҫăкăр пĕҫерсе сутма Хусана ҫӳренĕ. Вăл ҫухăнсемпе вăтамсене колхосран тухма текех илĕртнĕ, хăй колхосран тухма сайавлени паман. Ҫапла 12 хуҫалăх колхосран тухма сайавленисем панă. Колхосран тухаканĕсем ыйтнипе, Ваҫҫилйĕв кулак „вăтам хресҫен", тесе ĕнентерекен хута илсе Мускава кайнă. Мускавран тавăрăнсан: „Мускаврисем колхосран тухаканĕсене ҫĕр касса пама хушрĕҫ" тесе сăмах сарнă. Ҫăннипе Мускавра ăна: „Колхосран тухакансене колхос ҫĕрĕнҫен ҫĕр касса памаҫҫĕ", тесе ăнлантарнă. Кулак суйине тăрă шыв ҫине кăлараҫҫĕ. Кун хыҫҫăн 8 хуҫалăх колхоса кайалла кĕреҫҫĕ, Ваҫҫилйĕв кулака колхосран кăларса сирпĕтеҫҫĕ.

Вăрмар р-ҫи Кĕтеснер колхосĕ. Колхоса сĕрĕнсе кĕнĕ кулаксем—арман хуҫисем паранкăна, тырра ăнăшсах ҫĕртсе йанă, колхос претҫетаттĕлне ҫаплах сăра-ерех ĕҫтернĕ, ҫухăнсенҫен темĕн тĕрлĕ тăрăхласа мăшкăланă. Кулаксене колхосран тасатсан, колхос паттăрăн ĕҫлеме тапратнă.

Акă мĕн патне илсе пыраť вăл сылтăм оппортунисла ĕҫлени, клас сисĕмлĕхне ҫухатни. Сылтăм оппортунисла ĕҫ кулаксене колхоспа кĕрешме пулăшаť, вăл колхоса салатса йарасси патне илсе пыраť. Ҫавăнпа ĕнтĕ епĕр сылтăм хăрушлăх тĕп хăрушлăх тетпĕр.

Ҫак ҫӳлерех кăтартса панă тĕслĕхсемех районти оркăнсем колхоссен шалти пурнăҫĕпе ҫитĕлĕклĕ интересленменнине те пит те аван кăтартса параť ĕнтĕ.

Сылтăм оппортуниссем уйрăм хуҫалăхсем хушшинҫе ĕҫлессине хак памаҫҫĕ. Ку хăрушлăха хирĕҫ хытă ҫапмалла. Пĕҫҫеншерлĕ хуҫалăхсемпе ĕҫлеме пăрахни политтĕкла сатаҫран—кулака хирĕҫ

колхоссен, ҫухӑнсен, тата вӑтамсен пӗрлӗх фронтне орканисатсилессинҫен пӑрӑннине пӗлтерет. Каламалла, ҫылай районсенҫе уйрӑм хуҫалӑхсенҫе тырӑ вырса пуҫтарасси кайа йулса пырат̆. Ку хӑрушлӑха сирсе пӑрахмалла. Уйрӑм хуҫалӑхра пурнакан ӗҫхресҫенӗсем хушшинҫе ӗҫлессине оппортунисла хак паманнине пӗтермелле. Пирӗн тӗп сатаҫ халӗ колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх ӗҫӗсем йенҫен тӗреклетессине, вӗсен тупӑшлӑхне ӳстерессине куллен ҫине тӑрса туса пырса, ҫак никӗс ҫинҫе ҫухӑнсемпе вӑтамсене колхоса кӳртессине орканисатсилессинҫе тӑрат̆.

Сылтӑм оппортуниссем ӗҫ хӑй тӗлӗнех пуласса шанаҫҫӗ пулсан, „сулахай“ оппортуниссем ӗҫе атминистраттивлӑ меслетсемпе, вӑтама ирӗксӗрлесе тума пулат̆, тесе шутлаҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтҫенех коллективисатсин вӗрсе ӳстернӗ ҫыхвӑрӗсем хыҫҫӑн ҫупни, вӑтама ирексӗрлени, ирӗксӗрлесе ӗҫлени уйрӑм орканисатсисен ӗҫӗнҫе вырӑн йышӑнса тӑрат̆.

Елӗк районӗнҫи практӗккӑра пӑрӑнҫӑклӑ ӗҫсем уйрӑмӑнах нумай пулнӑ. Район рукковотиттӗлӗсем пӑрӑнҫӑксемпе кӗрешес ҫухне хӑйсем „сулахайлӑ“ пӑрӑнҫӑксем тунӑ. Сӑмахран, райӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ Каҫкков Вырӑс Сурӑмӗнҫе тырпул хатӗрлес тӗлӗшпе 9 вӑтам ҫине ҫирӗп сатани хунӑ. Ҫӗрпай пуҫлӑхӗ Маҫтсӗв Аслӑ-Шетмӗ йалсоветӗнҫе ҫухӑнсемпе вӑтамсем ҫинҫен 31 акт ҫырнӑ. Райколхоссойус претҫетаттӗлӗ Кӑмсаккӑв „колхосран тухакансене вирлӗн кӑларса сирпӗтмелле“, тесе сӗннӗ вырӑнти рапотнӗксене. Партти Опкомӗ Елӗк районӗ тӑрӑх хайаррӑн ҫапрӗ. Вӑрнар райӗҫтӑвкомӗ иртнӗ ҫул тырпул хатӗрлевӗ тӑрӑх: „вӑтамсем ҫине ҫирӗп сатани хумалла мар, вӗсене самоопесаттӗлствӑ йенӗпе хытӑ туйтармалла“, тенӗ кӑтарту парат̆. Ку вӑтамсене ирӗксӗрленине пӗлтермест-и? Лӑп та шайах ҫавна пӗлтерет. Вӑтамсене ирӗксӗрлес ӗҫе кунта витӗнерех ҫеҫ тӑваҫҫӗ. Анҫах вӑл уҫҫӑмӑн хӑтланнинҫен те хӑрушӑрах йапала.

Партти пире „хаҫхи тапхӑрта колхос йухӑмӗн тӗп форми — йалхуҫалӑх ертелӗ“, тесе вӗрентет. Вӗри пуҫлӑ „урра-револютсионерсем“ хресҫенсене ертелтен комуна прикаспа куҫарма хӑтланаҫҫӗ, колхос йухӑмӗн хаҫхи тапхӑрти тӗп сатаҫне—колхоҫнӗксенҫен сотсиалисӑмлӑ опҫӗствин хастарлӑ строиттӗлсем тӑвассине пӗр самантра пурнӑҫлама пӑхаҫҫӗ. Проккурорӑн помошнӗкӗ Вавилӑв „колхоҫнӗксен мӗн пур пӗтӗм выҫӑхӗсене пӗрлештерме вӑхӑт ҫитнӗ, пӗр калаҫусӑр пӗрлештермелле“, тесе вӗрентет.

Ҫакӑн пек киревсӗр ӗҫсене текех ҫӑтма пултараймастпӑр. Партти орканисатсисем умӗнҫе ҫеретре тӑракан пысӑк сатаҫсенҫен пӗри, вӑл—ҫак киревсӗр ӗҫсене хӑвӑртрах пӗтересси пулат̆. Унсӑрӑн колхоссене тӗреклетме пулмаст̆. Икӗ фронтпа кӗрешессине, йухӑмран кайа йулакансемпе, кунпа пӗрлех массӑран хӑпса мала ҫупса кайаканӗсемпе кӗрешессине татах вӑйлатмалла. Сылтӑм сулӑнҫӑк тӗп хӑрушлӑх. Анҫах „сулахай“ оппортуниссемпе кӗрешсе пымасӑр сылтӑм оппортуниссемпе ӑнаҫлӑн кӗрешме пулмаст̆.

„Мӗншӗн тесен колхос йухӑмӗнҫе „сулахайрисен“ йӑнӑшӗсем парттире сылтӑм сулӑнҫӑка вӑйланма, ҫирӗпленме

лайăх условисем туса паракан йăнăшсем пулаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вăл йăнăшсем партти çулйĕрне пăсса урăхла кăтартаççĕ,—çапла вара вĕсĕм партти йатне вараласситие çăмăллатаççĕ,—çавăнпа та вĕсем сылтăмсем партти руккоюотствине хирĕç кĕрешес ĕçе çăмăллатаççĕ. Парттин руккоюотстви варланнă никĕс çинҙе анҙах—сылтăм оппортунистсен парттипе кĕрешесси пуçланма пултарат̆". (Сталин).

Респуплĕкри районсенҙен çурринҙе ытла коллективисатси проҙҙăнĕ пĕр вырăнта тăрат̆. Хăшпĕр районсенҙе коллективисатспроҙҙăнĕ пĕҙĕккĕн пулсан та ўссе пырат̆. Вырăнĕ-вырăнĕп колхосран тухнисем пулҙĕç. Колхосран тухнисем парттин çул йĕрне пăсса ĕçленĕ районсенҙе пулҙĕç.

Партти орканисатсин XVI-мĕш конферентсинҙе Опком отҙотĕнҙе çапла каланă:

„Парттин тĕп çулйĕрне пăсни, сылтăм оппортунисла ĕçсем туни, колхосра ĕçе йĕркене лартма пĕлменни, кивĕ колхоçнĕксемпе çĕнĕ колхоçнĕксене пĕтĕçтерме пĕлменни—çаксем пур те хăшпĕр вырăнсенҙе колхосран тухасси патне илсе пыраççĕ, клас тăшманĕн арманĕ çине шыв йараççĕ".

Конферентсиренпе епĕр ҙылай малалла карăмăр. Çураки кампанинҙе колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенҙен тĕреклетес тĕлĕшпе çĕнĕ пусăм турăмăр. Пысăк çитĕнўвĕсемпе тырпул пухса кĕртес кампанийе кĕртĕмĕр. Колхоса тухма панисем нумайĕшĕсем сайавленисене калла илсе çуракине колхосра турĕç, халĕ мĕн пур паттăрлăхпа тырпул пухса кўртессишĕн кĕрешеççĕ.

Кунпа пĕрлех хăшпĕр районсем конферентси кăтартса хăварнисене тивĕçлипе хисепе илмерĕç, йăнăшсене поҙшевикла тўрлетни пулмарĕ. Ун вырăнне хăшĕсем конферентси иртнĕ хыççăн пăрăнҙăксем татах та турĕç. Паллах, Опкомăн вĕсене мĕн пур хайарлăхпа çапмалла пулҙĕ. Тĕрĕс ĕçлесе пынă çĕрте, ушкăнлă хуçалăха йĕркеллĕ тытса пынă çĕрте кулак ваҙҙи колхоса хирĕç кĕрешме май та çук. Парттин çулйĕрне пăсса ĕçленĕ çĕрте кулак ваҙҙи колхоса хирĕç кĕрешме кирлĕ условисем темĕн ҙухлех. Парттин çулйĕрне пăсса ĕçлени кулак поçитсине вăйлатат̆ кулака колхоспа кĕрешме çăмăллатат̆. Вырăнĕ-вырăнĕпе колхоса вăтамсене çирĕп сатанисем парса, ирĕксĕр налок хурса хăратса кўртнĕ. Кун пек ҙухне колхоса кулакла етемсем те кĕрсе кайма пултарнă. Кулак хăйĕн çине хунă çирĕп сатанийе, йе налока каçарсанах колхосран тухат̆, хăйĕпе пĕрле ҙухăнсемпе вăтамсене те колхосран тухма илĕрттет. Йулашки вăхăтра кулакла, контрреволюутсиллĕ етемсем пирĕн ĕçсене хирĕç кĕрешни вăйланни сисĕнет. Ку ĕнтĕ пирĕн колхоссем тĕрекленсе пынине кăтартса паракан паллă пулат̆. Кунтан çапла сатаҙ тухса тăрат̆. Пирĕн, кулакпа кĕрешессине татах вăйлатмалла. Кулак колхоссене тĕреклетес ĕçе, тырпул пухса кĕртессине, тырпул хатĕрлессине пĕҙиккăх та пулин канçĕрлеме, сийенлеме пăхнине те татăклăн путарса пымалла. Колхосра ĕçе йĕркеллĕ туса пынă, кулаксемпе татăклăн кĕрешсе пынă, массăлă поллитĕклă ĕçе вирлĕн сарса йанă, революутсиллĕ саккунлăхшĕн кĕрешнĕ никĕс çинҙе ĕçхресҙенĕ-

сене колхоссем йенне йавăçтармалла. Колхоссен ĕçхресƌенĕсемпе пĕр фронтпа кулакпа, çпеккуƌантпа пĕтĕм хайарлăхпа кĕрешмелле.

## „Çĕнĕлле ĕçлемелле, çĕнĕлле йертсе пымалла."

Колхос строиттĕлствине татăклăн йертсе пырассине лайăхлатасси колхоссене органисатсипе хуçалăх ĕçсем, тата политтĕк йенƌен тĕреклетессишĕн кĕрешес çĕрте ĕçе татса паракан тĕп тĕвĕсенƌен пĕри пулса тăраť. Хăшпĕр районсем мĕншĕн çураки планне тултараймарĕç? Мĕншĕн техниƌƌĕски куƌттурăсем тăрăх план тулаймарĕ? Мĕншĕн тырпул пухса кĕртес ĕçе çителĕклĕ хатĕрленсе илеймерĕмĕр? Мĕншĕн хăш колхоссенƌе ĕç йапăх пыраť? Тĕп сăлтав—пирĕн ĕçлесси, йертсе пырасси умра тăракан сатаƌсемпе тан пулса пыманни. Нумай çĕрте ĕнерхи меслетсемпе ĕçлеççĕ, ĕнерхи меслетсемпе йертсе пыраççĕ. Ку меслетсем ĕнер йурăхлă пулнă пулсан, пайан, çĕнĕ условисенƌе вĕсем пăрахăça тухаççĕ, пайан вĕсем малалла кайма ƌăрмантарса тăраççĕ.

Паллах, тырпул пухса кĕртес ĕçе епĕр пурĕш те хатĕрленнĕ. Тырпула васкавлăн, пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе кашни мĕн тунă, тесе ыйтсан, каласа пама пултараймаççĕ. Аван плансем, своткăсем тăрататççĕ, анƌах вĕсем ƌас-ƌасах ĕç мĕнле пынине, ƌĕрĕ ĕçе хупăрласа лартакан пĕркенƌĕк вырăнĕнƌе пулаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен своткăсем тăрăх пăхсан ĕç йап-йака пыраť темелле, ƌăннипе илсен ун пек мар. Кăна тунă, ăна туман, тесе каласа пама пурĕш те пултараççĕ. Мĕншĕн ăна туман, мĕншĕн план тулман, йе тырпул пухса кĕме хатĕрленмен, çав колхосра, çав йалсоветĕнƌе мĕн тăваççĕ, мĕншĕн пĕри лайăх ĕçлет, тепри унтан йулса пыраť—пĕлмеççĕ. Çакăнтан йăвăр айăплани пулма та пултараймасť.

Партти райкомĕн çекреттарĕсемпе контроƌ комиççин претçаттĕлĕсем районра ĕç мĕнле пынине районри ытти оркăнсенƌен лайăхрах пĕлеççĕ. Апла пулсан та мĕншĕн-ха вара тырпул пухса кĕртес кампанийе çителĕклĕ хатĕрленсе илмен, тырпул хатĕрлев кампанине хатĕрленес ĕç наƌар пыраť? Мĕншĕн тесен партти райкомĕсен йенƌен те татăклăн йертсе пырасси, йышăннă решшенисене пурнăçланине тĕрĕслесе пыни çук. Мĕншĕн тесен вĕсем те кашни йалăн, кашни колхосăн уйрăм условисене наƌар пĕлеççĕ.

Халĕ тата районри çĕр пайĕсене, колхоссойуссене илер. Вĕсем район лару-тăруне пĕлмеççĕ. Колхос активĕнƌен, колхоçнĕксен массисенƌен хăпса тăраççĕ. Вĕсем колхоссен, йалсен шалти пурнăçĕпе сахал интересленеççĕ, çара своткăсем тăрăх ĕçлесе пыраççĕ. Шутпала йалхуçалăхне, колхоссен пурнăçне вĕсен аван пĕлмелле, мĕншĕн тесен вĕсем çак ĕçсем çинƌе лараççĕ. Халĕ пирĕн вĕсен тумалли ĕçсенƌен ƌылайĕшне партти райкомĕсем туса пыраççĕ.

Ĕçе пĕлмесĕр, формă йенƌен кăна пулса пытăр, тесе туса пыни йертсе пырас çĕрте тĕп çитменлĕх пулса тăраť. Пурĕш те

тирективă параççĕ, пурĕш те ресољутси çыраççĕ. Çурçĕрпе ыйăхран вăратсан хитре ресољутси çырса пама пултараççĕ. Анђах колхосра тырпул тухăçлăхне мĕнле хăпартма пулаť, тырпула пĕр тăкаксăр мĕнле пухса кĕмелле, ăна тума мĕн-мĕн кирлĕ, машшинсене çĕмĕрес мар тесен мĕн тумалла, кам çĕмĕрет, мĕншĕн çĕмĕрет, кун пирки мĕнле мерăсем йышăннă, хăш çĕр çинђе мĕнле тырă акса тума пулаť, мĕнле утопрени тăкмалла—çак ыйтусемпе çителĕклĕ лармаççĕ, вĕсене кирлĕ пек пĕлмеççĕ.

Ресољутси мĕнле пулсан та сахалтарах та, вĕсене пĕђĕккĕрех çырмалла. Ресољутси çырасси ђи çăмăл ĕç вăл. Епĕр татăклăн, тĕплĕн йертсе пымалла тетпĕр. Вăл мĕне пĕлтерет? Вăл ђи малтан кашни районăн, кашни колхосăн уйрăмлăхĕсене, еккономĕкпа политтĕк условисене тарăнăн та тĕплĕн пĕлме, вĕсене уђђота илме пĕлме кирлине пĕлтерет. Пурне те «пĕр турапа турассине», плана пурĕшне те «пĕр тан» валеçсе парассине, уйрăмăнах патшалăх хатĕрлевĕсем тăрăх тăвакан плансене пĕртанлă йĕркепе валеçсе парассине пуçпех пăрахăçа кăлармалла.

Татăклăн йертсе пырасси вăл,—пĕр пуçарнă ĕçе вĕçне çитерме кирлине пĕлтерет. Çакăнтан вара пĕр пуçарнă ĕçе тĕрĕслессине орканисатсилесси пысăккăн тухса тăраť.

> «Йышăннисене пурнăçланине тĕрĕслессине халĕ: сотсиалисăм строиттĕлствин хăвăртлăхсене малалла ӳстерес ыйту та, ĕçĕн технĕккĕне алла илес ыйту та, йертсе пырассине татăклăн тăвас сатађ та пырса тĕкĕнеççĕ. Пурнăçлассине тĕрĕслесси пĕре те орканисатсипе технĕккăлă ыйту мар, вăл питĕ пысăк, принтсĕпла, политтĕкла ыйту пулса тăраť». (Постышшĕв).

Йышăннисене тĕрĕслесси, вăл пĕр контрољ комиççисен, ревиçи комиççисен ĕçĕ кăна мар. Мĕншĕн тесен, вĕсен ĕçе темĕн пекех лайăх туса пырсан та пурне те туса çитерме йăвăр, тата вăхăђĕ те çитеймест. Йышăннисене тĕрĕслессине патшалăхăн кашни вырăнĕнђе, кашни уйрăм ĕçлекенĕн туса пымалла. Вăл пирĕн ĕç йĕрки пулса тăмалла. Пĕр-пĕр орканисатсине, йе пĕрпĕр çыннăн хăйне панă сатаниййе пĕтĕмĕшпе пурнăçласа çитеређђенех тĕрĕслесе пымалла. Çак тĕлĕшпе пирĕн çитменлĕхсем питĕ нумай вара.

Йышăннисене пурнăçланине тĕрĕслесси пирĕн катăрсене пољшевикла вĕрентсе пырас çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăраť. Пурнăçланине тĕрĕслемен условисенђе ответлăха туйни те пулма пултараймасť. Ун пек условисенђе кирлĕ пек ĕçлемесен, йе йăнăш тусан ђас-ђасах «йепле те пулин иртсе кайĕ-ха», тесе ĕçлеççĕ.

Пурнăçланине тĕрĕслесе пыманни оппортунисла, пӳрократла етемсене киревсĕр ĕçсем тума çăмăллатаť. Вăл ĕçĕн паха оппăтне, лайăх ĕçлекенсене палăртма ђармантараť. Акă мĕншĕн ĕнтĕ партти ку ыйтăва пирĕн умма шутсăр çивĕђђĕн лартаť.

Татăклăн йертсе пырасси, вăл пĕтĕм сатађсенђен тĕп сатађа уйăрса илсе, ун хыççăн мĕн пур ытти ĕçсене илсе пыма пĕлнине пĕлтерет. Пирĕн ђас-ђасах вак-тĕвек ĕçсем тăрăх сапаланса кайаççĕ. Вара шăрђăк пек ĕçрен ĕçе сиксе çӳреме, ĕçе штурмăлама

тытăнаççĕ, йулашкинҫен хăйсем те арканса кайаççĕ. Тепĕр ҫух ĕçе штурмăлани кирлĕ. Анҫах вăл пирĕн ĕçре тĕп меслет пулма пултараймасť. Ĕçе штурмлă меслетсемсĕр, пĕрре ҫăрсăрланса кайса, тепре сӳнсе лармасăр, пĕр пуçланă ĕçе вĕçне çитерме пĕлни кирлĕ.

Шултра хуçалăх происвотствине, акротехнĕккăна вĕренсе ăнланса илмесĕр татăклăн йертсе пыма пулмасť. Ку пуриншĕн те паллă пулмалла. Сăмахран, Сталинкратри трактăр савăтне ăнăçлăн туса пĕтерҫĕç пулсан, ăна ĕçе йарассишĕн, çĕнĕ технĕккăна вĕренсе илессишĕн нумай вăхăт кĕрешрĕç. Çавăн пекех йулашки çулсенҫе орканисатсиленĕ йышлăн шутланса тăракан колхоссене йертсе пырас çĕрте те йăвăрлăхсем сахал мар. Акротехнĕккăна вĕренсе çавăрса илессине ансăрăн çеç, купăста-хăйар мĕнле лартмаллине вĕренни пек çеç (вĕсене вĕренме кирлĕ) ăнланса илмелле мар. Акротехнĕккă çинҫен калаçнă ҫух, ăна епĕр йалхуçалăхĕн пĕтĕм ыйтăвĕсене пĕрле илнĕ йенĕпе ăнланатпăр. Вăл çеç те мар. Акротехнĕккă ĕçĕсене халĕ епĕр шултра происвотствă тĕрекленсе, машшинлă технĕккă анлăн сарăлса пынă никĕс çинҫе пурнăçласа пыратпăр. Акротехнĕккă ĕçне пĕрлешĕвле хуçалăхăн тупăшлăхне ӳстерессине пăхăнтармалла. Çакна май пусу çавăрнăшне мĕнле тумаллине, хăш колхосра хуçалăха мĕнле йенпе йамаллине (тĕш тырă, выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетесси, ăçта сысна ĕрҫетмелле, ăçта сĕт выҫăхĕсене ĕрҫетмелле, пахҫа çимĕç, алăсти промысли т. ыт. те), хăш çĕр çинҫе мĕнле тырă акса тума пулассине т. ыт. те аван пĕлни кирлĕ. Çакăнтан вара хуçалăха план тăрăх туса пырасси пысăккăн тухса тăраť. Шултра хуçалăха плансăр туса пыма нимĕпле май та çук. Плансăр шултра хуçалăх та пулма пултараймасť. Йала йертсе пырассине акрономи, технĕккă, тата екøkономĕк сатаҫĕсене пурнăçланипех нимĕнле те иртерсе йама май çук. Екkономĕкпе политтĕк условисене пурне пĕрле хисепе илсе ĕçлесе пымалла.

> «Районăн, йалăн, колхосăн мĕн пур екkономĕкпе политтĕк условисене пĕтĕмпех пĕрле хисепе илсе ĕçлесе пымалла. Çак ĕнтĕ вăл колхоссене орканисатсилес, вĕсен тупăшĕсене ӳстерес, тупăшĕсене тĕрĕс валеçес ыйтусем, çакă ĕнтĕ ĕç пахалăх, тырпул тухăçлăх, тырпул пухса кĕртес ыйтăвĕ, çакă ĕнтĕ катăрсене хатĕрлес ыйтăвĕ, çакă ĕнтĕ, йулашкинҫен, колхоссен лару-тăру ыйтăвĕ, колхоçнĕк ăс-ăнлавне çĕнетес ыйтăвĕ пулса тăраť“. (Кaкaновиҫ).

Çак майпах епĕ акрономсемпе, йалхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен ытти спетсиалиссемпе ĕçлес ыйтăва кăларса тăратасшăн. Халĕ акрономсен сăн-сăпаҫĕ курăнмасť темелле. Вĕсене кĕнҫелерисене хупса лартнă. Акрономсене, йалхуçалăх спетсиалисĕсене кĕнҫелеринҫен уйа, колхоса кăлармалла. Вĕсен пире йалхусалăх технĕккĕне çавăрса илес ыйтăва татса пама вирлĕн пулăшмалла. Пирĕн йенҫен спетсиалиссене пур майсемпе пулăшни кирлĕ.

Çакăнтанах тепĕр ыйту тухса тăраť. Вăл—ратсионалисатси, исопреттени ыйтăвĕсем. Хапрăк-савăтсенҫе çак ĕçсене мĕнле паха вырăна хуратпăр. Йалхуçалăхĕнҫе çак ыйтусемпе ларма кирлĕ мар-и вара? Йе йалхуçалăхĕнҫе нимĕнле ратсионалисатсиллĕ ĕç

те пулма пултараймасӗ? Ҫук, ыйту пӗре те ун пек тӑмасӗ. Каламалла, ку ӗҫе йалхуҫалӑхӗнҙе тытӑнманпа пӗрех. Йалхуҫалӑхӗнҙе ратсионалисатси, исопреттени ӗҫӗсене пуҫарса йарас ыйту уй пек сарлакан тӑрат. Сӑмахран, тырӑ вырмалли машшинсемпе сӑрт тайлӑмӗпе аналалла вырма пулмасӗ, теҙҙӗҫ. Пӗр колхосра сӑрт тайлӑмӗпе вырма май тупса кӑларнӑ. Капан-сӗкӗрт тӑвас ӗҫех илер. Халӗ кӗлтесене сенӗкпе йашт-йашт капан тӑрне вӑрӑнтараҫҫӗ. Мӗн ҙухлӗ тырӑ сапалантарса тӑкаҫҫӗ. Кунта ӗҫе механисатсилеме май килмест-и? Ман шугпа май пур, ӑна тума йӑвӑр та мар. Лупас витнӗ ҙух вӗрлӗксенҙен тараса туса улӑм хӑпартаҫҫӗ вӗт. Ман шутпала ҫӗмел тунӑ ҫӗрте те кӗлтесене ҫапла майпа хӑпартма пулат. Тӳррипех каламалла, йалхуҫалӑхӗнҙе ратсионалисатси, исопреттени, механисатси тутине илеймен-ха. Ҫак тӗлӗшпе спетсиалиссен, колхоҫнӗксен пултарулӑхне ҙӗртсе йарса орканисатсилесен тӗлӗнмелле ӗҫсем тума пултаратпӑр.

Йулашкинҙен, уполномоҙҙӑннӑйсем, ҫҙотсем ҫинҙен. Вырӑнсене уполномоҙҙӑннӑйсем темӗн ҙухлех йаратпӑр. Анҙах вӗсенҙен нумайӗшӗсем реппорторсен, „хӑнасен“ вырӑнҙе ҫеҫ.

Акӑ Ҫӗрпӳ райкомӗн уполномоҙҙӑннӑйӗ Руссӑв йул. илер. Вӑл колхоссенҙе пулнӑ. Анҙах тырпул пухса кӗртесси мӗнле пынине, ку ӗҫре мӗн ҙӑрмантарнине, колхоссем мӗнле ӗҫленине нимӗн те пӗлмест. Вал партти Тӗпкомӗн постановлени ҫинҙен те нимӗн те пӗлмест. Ҫапла вара вӑл, колхосра хӑнара пулнӑ пек ҫеҫ пулнӑ.

Акӑ тепӗр тӗслӗх. Канаш райкомӗн уполномоҙҙӑннӑйе Похаттырев. Похаттырев тырпул пухса кӗресси мӗнле пыни ҫинҙен своткӑсене Канашран тухмасӑрах, телефон тӑрӑх пухса ларат. Ҫак ҫветӗнисем тӑрӑх «тырпул пухса кӳртме хатӗр» тесе хӑйуллӑн ҫаптарат. Ийулӗн 16-ҙе пӗр йала каҫпа 5 сехетре ҫитсе йалти актива пухма хушат. Актив пухӑнмасӗ. Вара йалканаш преҫитиумне, тата колхос правленине пӗрле пухса шыв пулли пек шӑкӑл-шӑкӑл калаҫат те, района вӗҫтерет.

Малашне уполномоҙӑннӑйсем пирки ыйтӑва урӑхла лартмалла. Ӗҫе вырӑнсене, колхоссене куҫармалла. Районри оркӑнсен йенҙен татӑклӑн йертсе пырассине вӑйлатмалла. Партти райкомӗсемпе йаҙейккисен вырӑнти актива: йалсоветҙӗсене, колхос правленисене, копператив правленисене, комсомол йаҙейккисене мопилисатсилемелле. Вырӑнти актив ҫине тайанса, вӗсен урлӑ йал умӗнҙе тӑракан сатаҙсене пурнӑҫламалла. Питӗ кирлӗ пулсан ҫеҫ вырӑнсене уполномоҙҙӑннӑйсем йамалла. Вырӑнсене уполномоҙҙӑннӑйсем йамалла пулсан та оппӑтлӑ, пысӑк квалификкатсиллӗ рапотнӗксене ҫеҫ йамалла.

Ҫҙотсем парттин политтӗкне ӑнлантарса парас, актива ҫав политтӗка пурнӑҫлама пӗрлештерес ҫӗрте нумай пулӑшаҫҫӗ. Анҙах районсенҙе тӗрлӗрен ҫҙотсене йӗркесӗр нумай пухаҫҫӗ, тепӗр ҙухне ҫҙотсем миттӗнк пек пулса кайаҫҫӗ. Ҫҙота активиссем 70—80% пухӑнаҫҫӗ. Ҫак хастарлӑхпа усӑ курма пӗлмеҫҫӗ. Йалти активиссем канашлӑвсене, ҫҙотсене ҫӳресе уйӑхра сахалтан та 10 кун иртереҫҫӗ. Ку йӗркене пӑрахмалла. Ҫҙотсене район ҙентӑрне сахалтарах пухмалла та, вӗсене лайӑхрах хатӗрленмелле.

Кашни çђот парттилĕ шкул вырăнђе пулмалла. Ун вырăнне тĕрлĕрен çђотсене кустăсенђе ытларах пухмалла. Районри рапотнĕксен хăйсен колхос, йал патне çывхармалла, колхос мĕнпе сывланине пĕлмелле.

## Парттин йалти ĕçĕсем çинђен.

Йулашкинђен парттин йалти ĕçĕсем çине куçатăп. Токлатра ђаранса тăнă ĕçсем вĕсем пӳрĕш те партти тумалли ĕçсем. Анђах парттин тата массăллă ĕç пур. Какановиђ йул. сăмахĕсемпе каласан çав ĕçе пĕр совет оркăнĕ те туса пымасť, ăна туса пырасси пĕтĕмпе парттин орканисатсисем çинђе тăраť.

Парттин Ђăваш орканисатсийĕ парттин ленинла çулйĕршĕн, парттин натсиллĕ политтĕкĕшĕн кĕрешсе пынă никĕс çинђе политтĕклă тĕлĕшпе те, орканисатсилĕ йенпе те ӳссе çирĕпленсе пыраť. Çакна кăтартакан пĕрĕмĕш политтĕклă паллăх, вăл—орканисатсин йышĕ ӳсни. 1932-мĕш çулăн малтанхи çур çулĕнђе кăна парттине çĕнĕрен 1024 çын илтĕмĕр. 1932-мĕш çул йанварĕн 1-мĕш тĕлне партти орканисатсинђе 5.611 çын шутланнă пулсан, халĕ вăл хисеп 6.272 çынна çитрĕ.

1931-мĕш çулăн пуçламĕшĕ тĕлне йалта 1.876 парттийтсă пулнă пулсан, çак çулăн ийулĕн 1-мĕш тĕлне 2.511 çынна çитрĕ. Комуниссем йала коллективисатси çулĕ çине куçарас çĕрте ђăнђăн паттăрлă ĕçлекен утарлă прикатă пулса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн çĕнтерӳсен орканисаттăрĕсем пулђĕç. Йалти комуниссене хапрăк-савăтсенђен колхоссем орканисатсилеме йанă комуниссем-рапођђисем, респуплĕк ђенттăрĕнђен, тата район ђенттăрĕсенђен хуçалăхлă-политтĕклă кампанисем иртерме йала йанă комуниссем пулăшрĕç. Комуниссем, комсомолĕссем хыçĕнђен çĕнĕ колхоçнĕксем—активиссем колхосшăн кĕрешме тытăнђĕç.

Анђах епĕр ку таранђђен тунă çитĕнӳсемпе нихăçан та лăпланса лармастпăр, иртĕхсе каймастпăр. Пирĕн ума кашни çĕнĕ тапхăрта çĕнĕ сатађсем тухса тăраççĕ. Çак сатађсем пире пĕтĕм ĕçе тата лайăхрах туса пыма хушаççĕ. Çакна май пирĕн пур орканисатсисен: совет, хуçалăх, копператси, комсомол, тата партти орканисатсисен ĕçне, йертсе пырассине урăхлатса çĕнетмелле.

Йалта пĕрĕмĕш, тата ĕçе татса паракан поçитсийе çавăрса илтĕмĕр. Совхоссемпе колхоссем йалхуçалăхĕнђе тĕпренех çĕнтерсе илђĕç. Йалхуçалăхĕ сотсиалисăмла çул çине татăклăнах тĕрекленсе тăђĕ. Халĕ пирĕн умра колхос хуçалăхне татăклăн йертсе пырас, татăклăн йертсе пырассипе кашни совхоса, МТС-не, колхоса уйрăмăн çавăрса илес сатађ тăраť. Ку ђăн та йăвăр сатађ, анђах ăна пурнăçламасăр малалла кайасси çинђен шухăшламалли те çук.

Райкомсен умĕнђе тăракан сатађсем, ĕçсем виçесĕр ӳсрĕç. Хађхи район—хуçалăхла пысăк кăмпинат. Хăшпĕр районра колхоссен хисепĕ 100 те иртет. Хуçалăх тĕлĕшĕнђен илсен, вĕсен кашни ăрасна уйрăмлăхсем пур. Пĕрин хуçалăх пуринђен малтан сыснасем ĕрђетес йенĕпе сарăлса пыраť, теприн ĕнесем ĕрђетес йенĕпе, виççĕмĕшин пахђа çимĕçсем тăвас йенĕпе. Пĕр колхосра актив вăйлă, тепринђе актив вăйсăр, çителĕклĕ мар.

Ђылай районсенђе колхоссемсĕр пуçне МТСтантси, совхос, копхос пур. Тепĕр районсенђе çаксемсĕр пуçне тата ђукун çулне, хапрăк-савăтсене, вăрман промышлĕннăçне йертсе пымалла. Çак условисене татăклăн, тĕплĕн йертсе пымасан ĕç малалла кайма пултараймасť. Тĕплĕн йертсе пырасси, вăл йалăн, колхосăн екко-номĕкпа политтĕк условисене пĕрле хисепе илсе ĕçлеме кирлине пĕлтерет. Райкомăн район лару-тăруне, районра мĕн тунине лайăх пĕлмелле, района йертсе пымалла. Анђах ку райкомăн пуриншĕн те ĕçлеме кирлĕ тенине пĕлтермест. Çĕрĕç, колхос оркăнĕсене йалхуçалăх йенелле питпе ђăнђăн çаврăнмалла. Йалхуçалăх, колхос строиттĕлстви ыйтăвĕсемпе райкомăн кăна мар, йађейккăн çеç те мар, вăл ыйтусемпе кашни комунисăн куллен лармалла. Комуниссен, комсомолĕссен акротехнĕккăна, колхос происвотствин технĕккинę, машшинла технĕккăна вĕренсе çĕнтерсе илмелле.

Партти райкомĕсенђен ђылайĕшĕсем йалхуçалăх ыйтăвĕсене сахал сўтсе йаваççĕ. Сăмахран, Йетĕрне райкомĕ çур çул хушшинђе 9 ыйту кăна сўтсе йавнă, вĕсенђен выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетесси çинђен мĕн пурĕ те пĕр ыйту кăна.

Умра тăракан сатађсене май епĕр парттин орканисатсиллĕ ĕçĕсене те урăхлатса çĕнетсе пыратпăр. Орканисатсиллĕ ыйту, вăл пĕђĕк ыйту мар, вăл ĕçе татса паракан ыйту. Çак тĕлĕшпе епĕр паллă çитĕнĕвсемех турăмăр. Сăмахран, 1931-мĕш çул пуçламĕш тĕлне йалсенђе 137 йађейккă пулнă пулсан, кăçал ийулĕн пĕрĕмĕш тĕлне вĕсен хисепĕ 174 çитрĕ. Кăнтитатсен ушкăнĕсен хисепĕ 30-тан 73 çитрĕ. 1931-мĕш çулăн пуçламĕшĕ тĕлне йалти йађейккăсем пуринђен ытла йалсенђе пулнă пулсан, халĕ колхос йађейккисем нумайланђĕç. Колхоссенђи йађейккăсен хисепĕ 19-тан халĕ 109 йађейккăна çитрĕ. Иртнĕ вăхăтра 15—20 парттийтса пĕрлештерсе тăнă йађейккăн 20—30 йала, 20—25 колхоса йертсе пымалла пулнă. Паллах, çак условисенђе темелех лайăх ĕçлес тесен йађейккă „пĕтĕмĕшпе“ кăна йертсе пыма пултарнă. Халĕ çак çитменлĕхе пĕтернĕпе пĕрех темелле. Халĕ партти йађейккисене колхоссем патне çывхартрăмăр. Йулашки çулсенђе вырăнсемпе тухса çўресе çыхăну тытасси те аванланђĕ. МТС, совхоссем, шултра колхоссем çумĕнђе оппорлă йађейккăсем орканисатсилерĕмĕр. Анђах епĕр ку ĕçе вĕçнех çитермен-ха. Ку ĕçре çитменлĕхсем те нумай. Йађейккăсен ĕç пахалăхне ўстерес, аванлатас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. Йађейккăсем хушшинђе хăйсен колхосĕсене тĕплĕн пĕлменнисем те пур. Хăшĕсем орканисатсиллĕ ĕçе урăхлатса çĕнетессине ансăрăн ăнланаççĕ. Вĕсен шуђĕпе çектăрсем туса тултарсан ĕç те пĕтмелле. Вăрнар районĕнђе хăшпĕр йађейккăсенђе парттийтсăсем 8—10 çын, тĕрлĕрен çектăрсем 10—12. Епĕр хамăр ĕçе, йертсе пырассине, вăл шутранах парттин орканисатсиллĕ ĕçĕсене урăхлатса çĕнетсе пыратпăр пулсан, епĕр ăна умра тăракан сатађсене ăнăçлăнах пурнăçлас шутпа тăватпăр.

Парттин массăллă ĕçĕ çинђен. Ку ĕçе мĕн-мĕн кĕрет? Парттин массăллă ĕçне акитатси, ĕç халăх масси кăларса тăратнă ыйтусене татса парасси кĕрет. Партти йађейккисен умĕнђе тăракан

тӗп сатаҕ, вӑл партти влийанипе кашни колхоҫнӗке, кашни ӗҫхресҕене ҫавӑрса илесси пулаӗ. Колхоҫнӗксен куҕттурӑлӑхӗ ӳссех пыраӗ. Ҫакна асра тытмалла. Епӗр респуплӗке талкӑшпе хут пӗлекен ҫӗршыв туса ҫитертӗмӗр. Тепӗр йенҕен ҫамрӑксен пӗр пайӗ, вӗсем колхос ҫамрӑксен шкулӗнҕен вӗренсе тухнисем. Ҫав хушӑрах ӗҫҫыннисенҕен ҕылайӗшӗсем кивӗ тӗшмӗшлӗхсенҕен те хӑпайман.

Вӗсене ӗҫре пиҫӗнтермелле, пӗҕӗк ыйтӑвсенҕен пуҫласа вӗрентмелле. Йулашкинҕен, теприсем ӑҫта та пулин мӗн те пулин ҫаклатма пулмӗ-ши, „сахалтарах ӗҫлес те, ыгларах ҫаклатас“ текеннисем. Ҫаксене тӑрӑ шыв ҫине кӑлармалла. Ҫапла ӗнтӗ пурӗшӗн патне те пӗр виҫепе пыма май ҫук. Парттиллӗ ӗҫе ӑнӑҫлӑн туса пырас тесен, партти йаҕҕейккин хӑй йертсе пыракан ҫынсен составне тӗплӗн вӗренсе илмелле. Ҫак йенҕен илсен пирӗн йаҕейккӑсем ҫителӗклӗ ӗҫлемеҫҫӗ.

Партти йаҕейккисен партти лосӑнкӗсене массӑ патне ҫитерсе, массӑна ҫав лосӑнксене пурнӑҫлама орканисатсилемелле. Политтӗклӑ акиттатсийе ҫӳлӗ сыпӑка хӑпартмалла. Ӗҫхалӑх массине тӑнланмалла, ӑна ҫывӑх ҕӗлхепе парттин лосӑнкӗсене, совет влаҫӗн саккунӗсене тӗплӗн ӑнлантарса памалла. Сӑмахран, парттине правиттӗлствӑ колхосла суту-илӳ ҫинҕен йышӑннӑ постановленийе илер. Ҫак ыйту тавра ӑнлантарса парас ӗҫе массӑллӑ акиттатсийе пит те анлӑн туса пымалла.

Парттиллӗ-массӑллӑ ӗҫе колхоҫнӗксен хушшине, прикатӑна куҫармалла. Комуниссене, комсомолӗссене прикатӑсем тӑрӑх тӗрӗс вырнаҫтарса тухасси, вӑл пысӑк ӗҫ. Комунисӑн, комсомолӗсӑн происвотствӑллӑ прикатӑра хӑйӗн паттӑрлӑ ӗҫӗпе колхоҫнӗксене ӗҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхма вӗрентмелле. „Пур комуниссем те, комсомолӗссем те—уйа, прикатӑна“, тенӗ лосӑнка ҫине тӑрсах пурнӑҫламалла. Ку тӗлӗшпе каллех ҫитменлӗхсем нумай. Сӑмахран, Нӗркӗҕ йаҕейккинҕе (Патӗрйел р-нӗ) 17 парттийтсӑ. Происвотствӑра мӗн пурӗ те 7 парттийтсӑ кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Ыттисем клатовшҕӗксем, сторӑшра т. ыт. ҫӗрте. Прикатӑсенҕе парторканисаттӑрсем ҫук. Хӑшпӗр ҫӗрте комуниссем сысна пӑхассине намӑслӑ ӗҫ ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ. Вӗсем „епӗр парттине кӗрсе сысна пӑхма кӗрӗшмен“, теҫҫӗ.

Малалла парттин вӗренӳ ыйтӑвӗ ҫинҕе, теориллӗ вӗренӳ ҫинҕе ҕарӑнса тӑма лекет. Умра тӑракан сатаҕсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлас, массӑ умӗнҕе тӑрса, ӑна ҫирӗп йертсе пырас тесен комуниссен маркҫисла-ленинла пӗлӗве ӳстерессишӗн ҫине тӑрсах кӗрешмелле. Политвӗренӗве сарса пырасси ҫинҕен ҫеҫ мар, вӗренӗве вӑл мӗн ҕухлӗ анлӑ пулма пултарнӑ таран сарасси ҫинҕен сӑмах пыраӗ. Парттиллӗ вӗренӳ хисепне политвӗренӳ шкулӗ те, йаҕейккӑсен пухӑвӗ те, партти историне вӗренесси те, ҕеретре тӑракан хуҫалӑхла-политтӗклӗ сатаҕсене пурнӑҫласси те, тырпул пухса кӗресси мӗнле пынине сӳтсе йавасси те, екномӗкӑн теориллӗ ыйтӑвӗсене вӗренесси те, т. ыт. те кӗреҫҫӗ.

Парттийтсӑсен теориллӗ пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе епӗр хӑшпӗр ҫитӗнӗвсем турӑмӑр. Халӗ Шупашкарта, Илйинккӑра тӗрлӗрен курӑссем пыраҫҫӗ. Анҕах ҫак курссене пухса ҫитересси на-

ҫар тăрать. Хăшпĕр райкомсем йенҫен курăссене хак паманни хытах сисĕнет. Ҫылай райкомсем хăйсене панă расверсткăна тултарса пымаççĕ.

Тепĕр йенҫен харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси парттийтсăсен масси хушшинҫе те, актив хушшинҫе те наҫар тăрать. Патĕрйел районĕнҫе район активĕ 19 çынран (ку шута райком пўровĕн, РКК преçиттиумĕн ҫленĕсем, т. ыт. район рукковотиттĕлĕсем кĕреççĕ) Сталин йул. нимĕҫ писаттĕлĕ Лҫутвикпа калаçнине 3 çын кăна вуланă, Какановиҫ йул. Мускав Опкомĕн пленăмĕнҫе каланă сăмахне 7 çын вуланă. Ҫылай районсенҫе партти йаҫейккисенҫе „Ленин çулĕпе“ шурнал çук. Вулав çурҫĕсенҫе çĕнĕ литтераттурă йĕркесĕр сахал. Револҫутсиллĕ теорипе вăйсăр хĕçпăшаланнă пиркийех епĕр ҫасҫасах çакăн пек комуниссем тĕл пулатпăр.

„Ку комуниссем пĕр-пĕр йăвăрлăха пырса тĕкĕнсенех пуçĕсене çухатаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен вĕççене вĕçсемпе çыхса лартма итейлăх пакашĕ çитеймест. Вĕсем орканисатси орутийĕнҫен, хастаррăн кĕрешме ҫĕнекен кĕрешўçĕсенҫен, хăйсем хыççăн массăна йертсе пыраканскерсем—ирĕлсе кĕсел пулса тăраççĕ, ĕçе ҫăрмантараканĕсем пулаççĕ“.

Револҫутсиллĕ теорийе вĕренсе ăнланса илмен полҫшевик, вăл сотсиалисăм строиттĕлствин çулĕнҫе хыпашласа пырать, вăл сотсиалисăм строиттĕлствин уйрăм, сапаланҫăк фактăсене пĕрле илсе çыхăнтарма пĕлмест, вăл револҫутсин малашлăхне курмасăр оппортунисăм поçитсисем çине шуса анасси те инçетре мар. Пирĕн парттийтсăсенҫен хăйсене тума хушнă ĕç, вăл кĕрик те мĕнле пĕҫĕккĕ пулсан та, пролеттариатăн класла, патшалăхлă пĕтĕм сатаҫĕсемпе çыхăнса тăнине курма пĕлекен, хăйсене хушнă ĕçе вĕçне çитиҫҫенех туса çитерме пĕлекен, вĕсен умне лартнă сатаҫсене пурнăçлас çул çинҫе пур тĕрлĕ ҫăрмавсене те çĕнтерме пĕлекен, орканисатси хушнă кашни ĕçшĕнех пысăк ответлăх туйакан, сотсиалисăм строиттĕлствин халҫхи сатаҫĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пыракан вăйлă кĕрешўре массăсен пуçне тăма, вĕсене йертсе пыма пултаракан полҫшевиксем тумалла. Çакна тума револҫутсиллĕ теорине, полҫшевисăм историне вĕренни, вĕренес ĕçе револҫутсиллĕ практĕккăпа таҫҫăн çыхăнтарни кăна кирлĕ пек вăй парать.

Хăшпĕр рукковотиттĕлсем, комуниссем пур ĕçе те хамăр вăйпах тума пултаратпăр, тесе шутлаççĕ.

„Пирĕн парттин историйĕ те, колхос строиттĕлствин иртнĕ тапхăрĕ те çапла шутлани тĕпĕ-йĕрĕпех тĕрĕс мар иккенне палăртаççĕ. Комуниссем хăйсен хуплашки ăшне кĕрсе ларса, парттире тăманнисемпе хăйсен хушшинҫе çтена хывса уйăрăлнă пулсан, вĕсем ĕçе пĕтерсе хунă пулĕҫҫĕ. Сотсиалисăмшăн кĕрешес ĕçре комуниссем мухтава тухрĕç пулсан, комунисăм тăшманĕсем ишĕлсе анҫĕç пулсан, вăл ыттисенҫен пуçне, комуниссем ĕç патне парттире тăман ҫи лайăх çынсене хутшăнтарнинҫен, парттире тăман сийсенҫен вăй пухма пултарнинҫен, вĕсем партти тавра парттире тăман актив орканисатсиленинҫен килет. Халĕ, парттире тăманни-

семпе ĕçлес çĕрти çитменлĕхе тĕппипех, пуçпех пĕтермелле". (Сталин).

Колхос активне хатĕрлес, çитĕнтерес ĕç çине уйрăмăнах пикенмелле. Çак ĕçе вырăнсенђе çителĕклĕ туса пымаççĕ, йе манса хăварнă. Хăшĕсем питех те ансаттăн пуплеççĕ: „ђухăнсемпе вăтамсем колхоса кĕђĕç пулсан, вĕсем сотсиалиссем пулса тăђĕç, вĕсене политтĕк йенђен вĕрентни кирлех мар", теççĕ. Вĕсем ĕçхресђенĕсене çĕнĕлле вĕрентесси вĕсем колхоса кĕнĕ хыççăн уйрăмăнах пысăккăн тухса тăнине манса кайнă.

Çынсене пĕлес пулаť, вĕсемпе пур майсемпе те çыхăнса тăрас пулаť. Райкомсен лайăх ĕçлекен прикатирсене, колхоçнĕксене питрен пĕлсе тăмалла. Вĕсене ĕçре пулăшмалла, вĕсемпе пухăнса калаçмалла, вĕсене вĕрентсе, çитĕнтерсе пымалла. Ку тĕлĕшпе ни вăхăта, ни вăйа хĕрхенмелле мар.

Пирĕн пĕтĕм акитатси ĕçне, колхоçнĕксене вĕрентес ĕçе пĕтĕм колхос пурнăçĕпе çыхăнтармалла. Колхоçнĕка вăл хăй колхосăн хуçи пулнине вĕрентсе хăнăхтармалла. Вăл хăй колхосăн хуçи пулнине хăйĕн ĕçĕн кашни пусăмĕнђе туймалла.

Пĕтĕм çак ĕçсене пурнăçлас çĕрте комсомол орканисатсисем шутсăр пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Комсомолăн йалти орканисатсийĕ, вăл пысăк вăй. Комсомол йађейккисем кашни колхосра тенĕ пекех пур. Йалти комсомола пулăшмалла, вĕрентмелле, кулленхи ĕçре йертсе пымалла, вĕсен хаваслăхне хăпартмалла. Ырантан комсомол пилетне улăштарас ĕç пуçланаť. Ку вăл политтĕкла пысăк кампани. Çак кампанирен комсомолăн пођшевикла татах пиçĕнсе тухмалла. Çак кампани комсомол орканисатси партти орканисатсине тырпул пухса кĕртес, тырпул хатĕрлес, сайом сарас ĕçре пулăшассине татах ӳстермелле. Çак пысăк кампанийе комсомол пĕр хăй вăйĕпе çеç ăнăçлăн иртерме пултараймасť. Çак ĕçре комсомол нихçанхинђен ытла пулăшмалла, йертсе пымалла.

Пиђет çинђен. Колхос происвотствине йĕркелес, йалхуçалăхне хăпартас ĕçре пирĕн пиђет, уйрăмăнах районри хаçатсем, çтена хаçађĕсем хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăмаççĕ. Ĕçйалкорĕсемпе çыхăну нађар. Малта пыракан колхоссен, прикатăсен опăтне çутатасси çукпа пĕрех. Районри хаçатсем литсотрутнĕкрен пуçласа ретактăра çитеђђен уйра, колхосра, прикатăра ђас-ђасах пулмалла. Колхоссем, колхоçнĕксем мĕнпе сывланине, мĕнпе интересленнине вĕренсе пымалла. Хаçатăн акиттатсиллĕ ĕçе, киревсĕр ĕçсене, клас тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас ĕçе туса пынипех çитмест. Кăна вирлĕн туса пымалла. Вĕсемсĕр пуçне хаçатăн хăйĕн корреспотенђĕсемпе çыхăну çирĕп пулмалла, унăн районăн кашни кĕтесĕнђех, кашни йалтах, кашни колхосрах корреспотентсем пулмалла. Вăхăтран вăхăта çак корреспотентсемпе пухăнса калаçмалла. Хаçат вăл коллективлă проппакантист, коллективлă акиттатăр, коллективлă орканисаттăр. Пĕрине туса пырса, теприсене тумасăр хăварсан хаçат ђĕрĕ, интереслă пулма пултараймасť. Çак йĕркене çирĕп тытса пырса хаçатăн йалхуçалăхне йертсе пырас çĕрти çитменлĕхссене пĕтерессишĕн, колхоссене прикатăсене тĕреклетессишĕн, тырпула пĕр тăкаксăр пуç-

тарса кĕрессишĕн, тырпул хатĕрлес, кĕраки планĕсене ăнăçлăн тултарассишĕн, колхосла суту-илĕве сарса йарассишĕн, сайома вырнаçтарса пĕтерессишĕн, колхоçнĕксене çĕнĕлле вĕрентессишĕн кĕрешмелле. Кулаксемпе, çпеккуђантсемпе, вĕсен политтĕкла акĕнђĕсемпе—тĕрлĕ оппортуниссемпе кĕрешессине вăйлатмалла.

Парттин массăллă ĕçне йалта колхосра туса пыракан пĕтĕм ĕçсемпе, самокриттĕка тата парттин шалти темократтине сарса пынипе çыхăнтармалла. Самокриттĕка епĕр çур çулта, йе çулталăкра пĕрре тухса харпăр хăйне вĕтсе илни пек мар ăнланатпăр. Ĕçри çитменлĕхсене, ђирђĕрсене куллен палăртса пĕтерсе пымалла. Иртнĕ тапхăрта Елĕк, тата ытти хăшпĕр районсенђе киревсĕр ĕçсем пулђĕç пулсан, вĕсем çав районсенђе самокриттĕкă çуккипе кăна пулма пултарнă. Ĕçри çитменлĕхе пĕтерес, пўрократтисăмпа вирлĕн кĕрешес тесен, самокриттĕка вирлĕн сарса пымалла, тишкĕрўн пĕтĕм йăвăрлăхне вырăнсене куçармалла, ĕçхалăхĕн йышлă масси тишкĕрессине орканисатсилемелле.

* * *

Йулташсем! Епĕ токлата пĕтеретĕп. Сотсиалисăмла йалхуçалăхĕнђе тырпул тухăçлăхне, выђăх-ђĕрлĕх тухăçлăхне ўстерме çĕнĕ, ку таранђђен курман майсем уçăлаççĕ. Пирĕн умра ĕç хăвăртлăхĕсене татах вăйлатас, ĕçĕн пахалăхне татах аванлатас сатађ тăрать.

Анђах çакна пĕр минутлăха та манмалла мар. Çĕнĕ çĕнтерўсем тума пур майсем те пурри, вăл ĕç хăй тĕллĕнех, пĕр кĕрешўсĕр, лăпкăн пулса пыма пултарать тенине пĕре те пĕлтермест. Çĕнĕ çĕнтерўсене клас кĕрешĕвĕ урлă, пролеттари тиктаттурĕне çирĕплетни урлă кăна илме пултаратпăр. Кулакпа, унăн политтĕкла акĕнђĕсемпе—тĕрлĕ тĕслĕ оппортуниссемпе полђшевикла хайарлăпха кĕрешсе пыни пирĕн çĕнтерўсен татăклă услови пулать.

Иккĕмĕш петтилеткăрах йалхуçалăхĕнђе тăракан ђи пысăк сатађ, вăл тырпул тухăçлăхне ўстересси пулать. Çак сатађа пурнăçлассишĕн кашни пусăмрах кĕрешмелле. Епĕр Ђăваш респуплĕкне талкăшпе хут пĕлекен çĕршыв туса çитерсе, ĕçхалăх массин куђттурлăхнĕ хăпартас тĕлĕшпе пĕрĕмĕш, ĕçе татса паракан утăм турăмăр пулсан, халĕ йалхуçалăхĕнђе технĕккăна çĕнсе илес ĕçе çине тăрсах тумалла. Унсăрăн йалхуçалăх тухăçлăхне ўстерме пулмасть.

Епĕ тырпула ăнăçлăн, пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕрессине, тырпул хатĕрлев планне вăхăтра тултарассине, кĕракине ăнăçлăн иртерессине, çакна май колхоссем татах тĕрекленсе пырассине шанса тăратăп. Çак пысăк сатађсене пурнăçлама кирлĕ условисем пурĕш те пур. Тĕп услови, вăл—пирĕн партти орканисатси çирĕппи, партти ленинла çулйĕрĕшĕн кĕрешме пултарни. (*Хытă алă çупаççĕ*).

*ХУШÇА ÇЫРНИ*

# Тырпул пуçтарса кĕрес кампани мĕнле пынипе тырпул хатĕрлевĕпе кĕраки кампанисене хатĕрленесси çинҫен, тата колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклетесси çинҫен

**ПСК(п)П Ҫăваш Опкомĕн 3-мĕш пленăмĕ 1932-мĕш çулхи ийулĕн 30-мĕшĕнҫе йышăннă постановлени.**

Комуниссен парттин тĕп комиттеҫĕ йертсе пынипе пĕрремĕш пилĕкçуллăха ăнăçлăн тултарса пыни, промышлĕннăçăн ҫылай йупписем тăрăх пилĕкçуллăха ытлашшипех тултарни—сотсиалисамла интустрин йалхуçалăхне çĕнетес ĕçри выранне хăпартрĕ, сотсиалисăмла йалхуçалăхĕ ваҫҫи технĕкла çирĕп никĕс туса паҫĕ, çакăн тăрăх вара пролеттари патшалăхĕ колхос хуçалăхĕсене çĕнĕ, лайăх йышши машшинсемпе пысăк хăвăртлăхсемпе çĕнетсе пыратĕ.

Клас тăшманĕсемпе, тата вĕсен акĕнҫĕсемпе—сылтăмпа „çуллахай“ оппортуниссемпе хайаррăн кĕрешсе пыни тăрăх Ҫăваш çĕршывĕнҫи ҫухăнпа вăтамсен ҫылай масси колхоса кĕни, колхоссем орканисатсиллĕ ĕçсемпе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклени, колхоссене çĕнĕ машшинсемпе хĕçпăшаллантарса пыни (сухапуçне пĕтерни, 8 МТС туни, йалхуçалăх пысăк машшинĕсемпе ĕçлеме пуçлани), акротехнĕккă ĕçĕсене туса пыни Ҫăваш йалхуçалăхĕн протуксипе таварлăхне ҫылайах хăпартрĕç; хуçалăха малашне тата вăйлăраххăн ӳстерсе пыма, колхоçнĕк массисен пурнăçне лайăхлатса, куҫттурлăхне хăпартса пыма пысăк майсем туса паҫĕç.

Кăçалхи иртнĕ çураки колхоссене орканисатсиллĕ ĕçсемпе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклетес, тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре тата тепĕр хут пысăк утăм туни пулҫĕ.

Партти Опкомĕн 2-мĕш пленăмĕ (кăçалхи ийулĕн 1—4 мĕшĕнҫе пулнă) çураки кампанинҫе тунă ĕçсене хисепе илсе тухса, колхоссене малашне тата ытларах тĕреклетсе пымалли, тырпул пуçтарса кĕрес кампанине иртгермелли майсене тĕллесе хăварҫĕ; вăл тырпул пуçтарса кĕрес ĕçе халех вăйлатса йама кирлине кăтартса паҫĕ, „вăй-хăвата—тырă, çĕрулми, технĕкла куҫттурсем пысăккăн тăкăнассине, тырпул пуçтарса кĕресси нумай вăхăта тăсăлассине, трактăрсемпе лашасене наҫар тыткалассине, ĕçе

наҫар орканисатсиленине пĕтерес ĕçе, „конвейĕрлă“ йĕркене, вырнă тырпула çĕмелсемпе суратсем тумасăр хăварассине пăрахăçа кăларас ĕçе хумалла,“—терĕ. Пленăм пĕтĕм акнă тырпула, уйрăмах—технĕкла куҫттурсемпе пахҫа çимĕçĕсене таса тытма кирлине, партти Тĕпкомĕпе Халăх кăмиссарĕсен канашĕ ийулĕн 5-мĕшĕнҫе йышăннă постановлени тăрăх тыр вырнă, кĕлте турттарнă, авăн çапнă ҫухне тырпул тăккаланса пĕтессипе кĕрешме кирлĕ ĕçсене туса пыма кирлине кăтартса хăварҫĕ; çак пĕтĕм ĕçе, пысăк машшинсемпе çеç мар, тата ахаҫ машшинсемпе те усă курнипе, пĕтĕм йалхуçалăх происвотствине лайăхлатнипе кĕске вăхăтра пĕтермелле,—терĕ.

Партти Опкомĕ вырăнсенҫе тырпул пуçтарса кĕрес ĕçе мĕнле хатĕрленнипе вăл мĕнле иртсе пынипе тĕрĕслесе тухни акă мĕн кăтартрĕ: тырпул пуçтарса кĕрес ĕçе поҫшевикла орканисатсиленĕ колхоссем те пур вăхăтрах, ҫылай районсенҫи орканисатсисем хăйсен ĕçĕсене партти Тĕпкомĕпе ХК канашĕ ийулĕн 5-мĕшĕнҫе йышăннă постановленипе партти Опкомĕн 2-мĕш пленăмĕ кăтартса хăварнă пек çĕнетмен, çак решшенисене хăйсен вăхăтĕнҫе пурнăçа кĕртме кирлĕ ĕçсене туман; çакăн пирки те вара ҫылай районсем тырпул пуçтарса кĕртес кампаниийе хатĕрленмесĕр, тата кайа йулса тухрĕç,—халĕ ĕнтĕ тырпул пуçтарса кĕрес ĕç орканисатсиленмесĕр пырат̆.

Плансене районсем патне хăй вăхăтĕнҫе çитернĕ пулсан та, ҫылай районсенҫе тырпул пуçтарса кĕрес кампаниийе иртерес тĕлĕшпе конкретлă плансем туман, ҫылай колхоссем тыр патне те ĕç планĕсĕрех тухнă.

Ҫылай орканисатсисем колхоссенҫи происвотствăллă прикатăсене тĕреклетес сатаҫа хăйсен ĕçĕнҫе тĕп вырăна хуман; çавăн пирки те прикатăсем улшăнса тăраççĕ, лашасене, инвентарсене тыткалас ĕçре хуçасăрлăх. Уйри ĕçе тухас умĕн прикатăсене усă курмасăр тăракан ĕç вăйĕ (хĕрарăмсем, çамрăксем) хушса памалла пулнă, çакна хăшпĕр колхоссенҫе туман; уйрăм колхоссенҫе ыраш акнă çĕрсен уҫаскисене прикатăсем çумне çыпăçтарман. Ҫылай колхоссенҫе тата ĕç нормисене ҫакарни сисĕнет, çакăн пирки вара ĕç кунĕсем уссăр саланса пĕтеççĕ. Уйрăм орканисатсисем (Хĕрлĕҫутай) партти Тĕпкомĕпе Опком прикатăллă (ушкăнлă) çтелшҫĕнă тăвасси çинҫен кăтартса панисене ăнланман, ун вырăнне—утă çулнă, тата тыр вырнă ҫухне пĕҫҫенлĕ çтелшҫĕнă туса пĕтернĕ; кун пек туни вăл çарансемпе анасене колхоçнĕксен хуçалăхĕсем тăрăх уйăрса парасси патне илсе пырат̆. Ҫылай районсенҫе прикатирсене хак памаççĕ, прикатирсене суйласа илесси çине кирлĕ пек пăхманнисем те тĕл пулаççĕ, вĕсене вĕрентсе пыни çук. Вĕсене ĕç кунĕсем тăрăх тĕрĕс тӳлеменнисем те пулнă, вăл уйăхлăха нормă туса панисенҫе курăнат̆.

Партти Опкомĕ лашасене пĕрлештерсе çитерессипе çинҫен кăтартса панисем ҫылай районсенҫе пурнăçа кĕмен. Уйрăм орканисатсисем, тата колхоçнĕксен кайра пыракан пайĕн харпăрла шухăшĕсемпе кулакла шухăшсем хыççăн кайнипе çуртри акса пĕтернĕ хыççăн лашасене колхоçнĕксен аллине таварса пама тытăннă; çапла тунипе вара вĕсем лашасемпе кирлĕ таран усă

курассине, вĕсене лайăх пăхмалла тăвассине хăрушлăх умне кăларса тăратнă.

Машшинсене пăхса усрасси, вĕсемпе ĕçленĕ ђухне тыткаласси типтерсĕр. Уйрăм колхоссенђе йалхуçалăх машшинĕсене йусаман, кулакла акитатсине пула вырмалли машшинсемпе тырă вырассине хирĕç тăнисем те пулнă. Йалхуçалăх снапшени тата машшин пайĕсене хăй вăхăтĕнђе кўрсе килсе çитереймен, кунсăр пуçне тата машшин пайĕсем хăш колхоссене питрех кирлине хисепе илмесĕрех салатса панипе йăнăш тунă.

Ђылай районсем тырпул тăккаланђăкĕпе кĕрешес тĕлĕшрен халапа çаптарнипех иртерсе йанă, нимĕнле конкретлă ĕçсем те пулман: пуђахсене пуçтарман, тăкăнакан пĕрђĕсене тытмалли машшинсемпе усă курман.

Тутаркас, Йетĕрне, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсем çум курăксене пĕтерес тĕлĕшпе акротехнĕккă ĕçсене пурнăçа кĕртесси çине, çум çумлэс кампанийе иртересси çине тўсме çук йапăх пăхнă; çакăн пек пăхнă пирки вара çĕрулмисене, пахђа çимĕçсене çилоспа тата ытти куљттурсене пĕтĕмпе çум пусса илнĕ.

Утă пуçтарса кĕресси уйрăм районсенђе çителĕксĕр пулса пынă. Уйрăм районсем ку таранђђенех çаран утине çулса пĕтерермен, уйрăмах—хура пусса акнă утăлăх виккăна пултарасси кăна йулнă. Çакăн пек пулни вăл ыраш акма кирлĕ çĕрсене хатĕрлесе хурассине хăрушлăх умне кăларса тăратать. Районри уйрăм орканисатсисем уйрăм колхоссенђи кулакла туртăмсене çĕмĕрсе пыман, çавăн пирки колхосри пĕрлештернĕ выђăхсем вађђи кирлĕ таран апат хатĕрлесе хумасăрах колхоçнĕксене аларан валеçсе пама тытăннă (Çĕрпу, Елĕк).

Сайра хутра пулнисене шутламасан, колхоссенђе уйри ĕçсене пуçтарса кĕрес вăхăтра пурнăç ĕçĕсемпе куљттур ĕçсем парса пулăшасси çителĕксĕр. Колхоссенђе пĕрле апатланмалла тăвассипе ађа уђрештенисем орканисатсилес ĕçсемпе çителĕксĕр çыхăннă. Çутĕçпе сывлăх оркăнĕсем куђттурлă ĕçĕсене уйа—прикатăсем патне кăларас ыйтусем çине конкретлă пăхман.

Хăшпĕр совхоссем акнă тырпула нађар пăхнă (Çĕрпў, Вăрнар), уйри ĕçсене пуçтарса кĕме нађар хатĕрленнĕ. Уйрăм совхоссенђе уйри ĕçсене пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе опператтивлă, конкретлă плансем те çук. Вĕсем çаплах хăйсене вађђи ĕç вăйĕ хатĕрлемен, çум çумламалли машшинсемпе уйри ĕçсене пуçтармалли машшинсем те çителĕклĕ мар.

Машшинпа трактăр стантсисем трактăрсемпе уйри ĕçсене пуçтарса кĕмелли инвентарсене йусассине нумай вăхăта тăсрĕç; çакăн пек пулнипе хăшпĕр МТ стантсисем (Канаш, Вăрнар) уйри ĕçе вăхăтра тухаймарĕç.

Ђăвашсойусăн копхоссен пĕрлешĕвĕ акнă тырпула хăй вăхăтĕнђе çум курăкĕсенђен тасатмалла тума пултарайман; çакăн пирки каллех копхоссенђи тырпула çум пусса илнĕ. Совхоссенђе, копхоссенђе, колхоссенђе çимĕçсем хурса усрамалли вырăнсене хатĕрлесе йусаса хурас ĕç çителĕксĕр пырать.

Çак пур çитменлĕхсем те вĕсем ĕçсем аван пыраççĕ тесе оппортунисла шанса ларнинђен, ђылай районсенђи орканисатси-

сем уйри ĕççене пуçтарса кĕме хатĕрленессипе колхоссене оркаписатсиллĕ ĕççемпе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклетес ĕççене практĕкла йертсе пырасси çителĕксĕр пулнинҫен, ĕçре йалхуçалăх ыйтăвĕсем çине çителĕксĕр пăхнинҫен килнĕ. Уйрăм оркаписатсисен рукковотствинҫе колхоссене конкретлă пулăшас вырăнне, вĕсене конкретлă йертсе пырас, сотсиалисăмла ăмăртупа утарлă ĕçе пысăккăн вăйлатса пырас вырăнне çаплах митинковшҫĕнă пулса пыраҫ-ха, конкретлă ĕçе тĕрлĕрен канашлусем тунипе иртерсе йараççĕ. Районри парттипе совет оркăнĕсенҫе ĕçлекен уйрăм рукковотиттĕлсем ĕçĕн ăшҫиккине тупма пĕлмеççĕ, происвотствăпа рукковотствă технĕккине алла çавăрса илес йенĕпе тума кирлĕ ĕççене тумаççĕ.

Тĕприпе районсенҫи уҫрештенисем йаракан уполномоҫҫăннăйсем вырăнсенҫе конкретлă ĕç тăвас вырăнне ҫасҫасах репорҫҫорла хăтланаççĕ, çветĕниссем илнипе лăпланаççĕ.

Çĕрĕçпе колхос оркăнĕсем ҫылай ҫухне çаплах йалхуçалăх происвотетвин орканисаттăрĕсем пулса тăрайман, йалхуçалăх ăстисен вăйĕсене орканисатсилеме пĕлеймен; çавăнпа йалхуçалăх ăстисенҫен ҫылайĕшĕ çĕрпе колхос происвотствин маçтăрĕсем пулса тăнине кăтартма пултарайман.

# I. Тырпула вăхăтра, тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕмелле.

Тырпула пуçтарса кĕресси пĕтĕм йалхуçалăх ĕçĕн ҫи ответлă пайĕ пулаҫ, ăна тĕрĕс орканисатсиленинҫен йалхуçалăх происвотствин йулашки ĕçĕсем курăнса тăрасси—пуçтарнă тыррăн хисепĕпе пахалăхĕ тухасси килет.

Пленăм пур йышши тырпулсене те, Опкомпа Халăх кăмиссарĕсен канашĕ кăçалхи ийулĕн 9-мĕшĕнҫе йышăннă постановленире кăтартса панă вăхăтсене пуçтарса кĕрсе пĕтерме хушаҫ, пĕтĕм ĕçĕн тĕп вырăнне—тырпула тăкаксăр пуçтарса кĕрес ĕçе хумалла.

Пленăм уйри ĕççене пуçтарса кĕмелли пур машшинсемпе те усă курмалла тăвас тĕлĕшпе татăклă ĕççем тума хушаҫ; машшинсене ĕçленĕ хушăрах йусаса пымалла, вырмалли машшинсемпе ыраш выраccине хирĕç пыракан кулакла хирĕçĕве çĕмĕрсе пымалла. Пленăм, колхоссемпе совхоссенҫи пĕтĕм инвентарсене, лаша хатĕрĕсене лайăх тытса тăма кирлине кăтартаҫ.

Пленăм тырпул тăккаланҫăкĕпе кĕрешес ĕçе питех те пысăккăн сарса йама хушаҫ: вырнă тырра çинҫех çыхса, çĕмеле йе сурата хывса пымалла, тырпула салатса пĕтерессипе хытă кĕрешмелле, авăна тĕплĕн çапмалла, ӳксе йулакан пуҫахсене пуçтармалла, пĕрҫĕсене тытакан машшинсемпе усă курмалла, т. ыт. те.

Пленăм, парттипе колхос оркăнĕсене авăнсене хăвăртрах çапса пĕтерме кирли çине асăрхаттарса пăхтараҫ, машшинсемпе пĕтĕмпе усă курмалла, кашни авăн çапакан машшин çумне авăн çапса пĕтериҫҫенхи вăхăта ответлă çынсем çыпăçтармалла.

Уйрăмах—пахҫа çимĕççемпе çĕрулми пуçтарса кĕресси çине пăхмалла.

Пленăм—Çĕрĕç кăмиссариатне, хатĕрлев орканисатсисене, тата районсенҫи парттипе совет орканисатсисене çаксене тума хушаť:

а) çитес кунсенҫех çĕрулми кăларакан машшинсене йусаса пĕтермелле, колхоссемпе копхоссене çĕнĕ йышши машшинсем çитермелле;

у) вырăнти орканисатсисем совхоссенҫе, копхоссенҫе, пахҫа çимĕçсемпе çĕрулми тытса усрамалли вырăнсем тăвас строиттĕлствă планĕсене тултарма мĕн таран хатĕр тăнине тĕрĕслесе тухмалла, çак строиттĕлствăсене вăхăтра туса пĕтерессишĕн ответлă рукковотиттĕлсем тумалла;

ы) вырăнти орканисатсисем совхоссемпе колхоссенҫи строиттĕлствăсене ĕç вăйĕпе строиттĕлствă маттериалĕсем çителĕклĕ тăратмалла тăвас пулаť;

ă) совхоссенҫе, колхоссенҫе, хула таврашĕнҫи хуçалăхсенҫе пахҫа çимĕçсене тăварлас, йӳçĕтес ĕçе орканисатсилемелле.

Опком пахҫа çимĕçсемпе çĕрулмисене кăларса кĕнĕ ҫухне ĕçе тĕрĕс орканисатсилессипе ĕç вăйĕсене тăратса тухасси çине уйрăмах хыттăн пăхма хушаť; машшинсемпе пысăккăн усă курмалла тăвас пулаť, колхоçнĕксен ĕç тухăçлăхне хăпартмалла; çапла тунипе тырпулсене кĕске вăхăтра, тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕмелле пултăр.

Пленăм технĕкла куҫттурсене пуçтарса кĕнĕ ҫухне иртнĕ çулта пулнă йăнăшсене тепĕр хут йахăнне те тума йураманнине кăтартса параť. Пĕлтĕр Улатăрпа Пăраҫкав районĕсенҫе йĕтĕн пĕр касси пуçтарса кĕмесĕрех йулнă пулнă, ăна çапассипе хутассине те питĕ кайа йулса тытăннă. Çавăнпа та йĕтĕн вăрлăхĕпе сӳс хатĕрлес плансем тулмасăр йулнă. Пленăм, колхоçнĕксемпе ҫухăнпа вăтамсен массине партти Крайкомĕ ийулĕн 25-мĕшĕнҫе технĕкла куҫттурсене пуçтарса кĕресси çинҫен йышăннă решшенийе пурнăçа кĕртесси тавра мопилисатсилеме хушаť.

Пленăм, акнă курăксене пуçтарса кĕресси кайа йулнине палăртса, вĕсене авкустăн 5-мĕшĕнҫен кайа йулмасăр пуçтарса кĕме хушаť. Пуçтарнă утăна лайăх пăхса усрамалла. Çак утăсене ҫималтан— колхоссенҫи таварлă фермăсем, колхоçнĕксен пĕрлештернĕ выҫăхĕсем ваҫҫи çителĕклĕ пулмалла, унтан тин колхоçнĕксен пĕрлештермен выҫăхĕсем ваҫҫи памалла. Колхоссенҫе утă валеçес ĕçре йăнăшсем тумалла мар; колхос утине салатса пĕтерекенсене ответ тыттармалла. Нумай çула пыракан курăксемпе пĕр çула пыракан курăксене опесаттĕлни йĕркепе вăрлăхлăх уйăрса хăвармалла.

Пленăм çилос хывас ĕçре хăвăртлăхсене вăйлатма хушаť, ку тĕлĕшпе çилос куҫттурсемпе, вăрманти, шурлăхри курăксемпе, çумкурăкĕсемпе, пахҫа тварашĕнҫи çимĕç курăкĕсемпе пĕтĕмпех усă курмалла; çапла тунипе 93.000 тоннă таран çилос хывас плана пĕтĕмпех тултармалла.

## II. Кĕраки кампанийĕ.

Пленăм Ҫăваш АССР Халăх кăмиссарĕсен канашĕпе партти Опкомĕн пӳровĕ 1932-мĕш çулхи ийулĕн 20-мĕшĕнҫе кĕраки

кампанине иртересси ҫинҁен йышăннă постановленийе ҫирĕплетсе, кĕраки кампани планне пĕтĕмпех тултарма хушат̆.

Пленăм кĕркунне акса хăвармаллли ҫĕрсене МТС районĕсенҁе те кирлĕ таран хатĕрлесе хуманнине палăртат̆ (ҫĕртме сӳрессй). Тислĕк, минерал ҫăнăхĕ тăкса пĕтермен. Кĕраки кампанипе тырпул тухăҫне малалла тата ытларах хăпартас тĕлĕшпе питĕ пысăккăн усă курмалла. Ҫак шутпа:

а) кĕркунне акса хăварма кирлĕ ҫĕрсене хатĕрлесе ҫитермелле, ку шутран—ытти куҁттурсем йышăнса тăракан ҫĕрсене те хатĕрлемелле (тислĕк тăкмалла, сухаласа пăрахмалла, сӳресе тухмалла);

у) совхоссемпе колхоссенҁе пĕтĕмпех суртланă вăрлăхсем акмалла, таса суртлă вăрлăхсемпе акни 23 пин кектартан кайа мар пулмалла;

ы) пусу ҫавăрăнăҫне тĕрĕс улшăнтарса пымалла тăвас пулат̆.

Опком акротехнĕккă ҫинҁен совхоссенҁе, колхоссенҁе, йалти ҁухăнпа вăтам хресҁенсем хушшинҁе пропакантă сарасси ҫителĕксĕр пулса пынине палăртат̆. Ҁылай орканисатсисем, тата парттипе совет оркăнĕсен рукковотиттĕлĕсем пур акротехнĕккă ĕҫĕсене те пĕр ҫĕрлĕнех туса пыма кирлине ăнланман. Ҫĕрĕҫ кăмиссариаҁĕпе Ҁăвашколхоссойуса, совхоссемпе МТС тиректăрĕсене акротехнĕккă пропакантине тырпул тухăҫлăхне хăпартас, уйар ҫанталăкпа, тырпул тăккаланнипе кĕрешес ыйтусем тавра сарса пымалла; ку тĕлĕшпе малта пыракан колхоссемпе совхоссен оппăҁĕсемпе усă курмалла.

Опком ҫакна кăтартса парат̆: тырпул тухăҫлăхне хăпартас, уйар ҫанталăкпа кĕрешес, йалхуҫалăхне сийен кӳрекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешес ĕҫре кĕрхи ҫĕртме пысăк вырăн йышăнса тăрат̆. Кăҫалхи ҫураки, тата иртнĕ ҫулхи ҫураки ĕҫĕсен оппăҁĕ кĕрхи ҫĕртме тырпул тухăҫне хăпартассипе уйар ҫанталăка хирĕҫ кĕрешессинҁе пысăк вырăн йышăнса тănине питех те лайăх кăтартса паҁĕ. Ҫакна тĕп вырăна хурса, тата малта пыракан районсемпе колхоссем оппăҁĕсене хисепе илсе, кăҫалхи кĕркунне 190.000 кектара пĕтĕмпех сухаласа хăвармалла.

Кĕраки кампанипе кĕрхи ҫĕртме уйри ĕҫсене пуҫтарса кĕрес, авăн ҫапас ĕҫсемпе пĕр вăхăтра килет. Пленăм, ĕҫе тĕрĕс орканисатсиленипе вăйĕсене тĕрĕс тăратса тухни тăрăх сотсиалисамла ăмăртупа утарлă ĕҫе вăйлатса йани тăрăх—уйри ĕҫсене пуҫтарса кĕрес, кĕракине иртерес, ирхи ҫĕртме тăвас, тырпул хатĕрлев планне тултарас ĕҫсене кăтартса панă срукенҁе пурнăҫа кĕртмелле пултăр.

## III. Тырпул хатĕрлевĕпе колхосла суту-илӳ ҫинҁен.

Ҁăваш респуплĕкне панă тырпул хатĕрлев планне пленăм пĕтĕмĕшпех тултарма йышăнат̆.

Колхоссем ӳссе, ҫирĕпленсе пынă, тырпулсем наҁар мар пулнă майĕпе парттин Ҁăваш орканисатси пĕлтĕрхипе танлаштар-

сан ђакарса йышăннă тырпул хатĕрлев планне кăтартнă срук-сенђе тултарма пур йенђен те пултарат̆.

Пленăм ак çакна астутарат̆: кăçал тырпул хатĕрлев планне ђакарни парторканисатсине ĕçе йăвашлатма сăлтав памаст̆. Кулакла елементсен йулашкийĕсем пурри, уйрăм хуçалăхсемпе колхăçнĕксен хăшпĕр сийĕсем хушшинђе кулакла туртăм пурри кулакла елементсем тырпул хатĕрлевне хирĕç тăрассине, партти орканисатсисен вĕсене çĕмĕрсе тырпул хатĕрлев планне тултармаллине кăтартса тăрат̆.

Пленăм тырпул харĕрлев планĕсене колхоссене, уйрăм хуçалăхсем йенĕпе йалсене çитерме, ку ĕçе авкустăн 10-мĕшђен туса пĕтерме хушат̆. Плансене йалсене, тата колхоссене валеçсе парас ĕçе йалсоветсемпе колхоссен претçетаттĕлĕсемпе пĕрле тумалла.

Плансем панă ђух уравнилăвккăна, колхоссем çине механиђђĕски пăхнине хыттăн пĕтермелле, çапла тырпул хатĕрлев планне пĕтĕмĕшпех тултармалла, тата лайăх акнă, аван пуçтарса кĕртнĕ, тырпул хатĕрлев планне пĕтĕмĕшпех тултарнă колхоссен аллинђе хăйсене тыткаламалли тырă та ытларах йулмалла тăвас пулат̆. Уйрăм хуçалăхсен тырпул хатĕрлев планне палăртнă ђухне акă мĕнле йĕркене пурнăçа кèртмелле: уйрăм хуçалăхсем кашни кектартан шутласан патшалăха тырпул колхоссенђен сахал мар пађђăр.

Пленăм Опком пўровĕ ийунĕн 21-мĕшĕнђе тырпул хатĕрлевне иртерме хатĕрленесси çинђен йышăннă решшенийе хатĕрлекен орканисатсисем пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртменнине, тырпулсене илме хатĕрленсе çитменнине паллă тăват̆. Уйрăмăн йлсен, малтанхи хĕрлĕ опоссене мĕнле кĕтсе илни тырă илекен пунктсем тырă илме пурте хатĕр маррине кăтартат̆. Çавна астуса пленăм ак çаксене тума хушат̆:

а) тырпул хăтĕрлевне иртермелли технĕккă никĕсĕ (склатсем тăвасси, йусасси, тарă—михĕ таврашĕсем, вессисем хатĕрлесси, тийес-пушатас ĕçсене механисатсилесси, т. ыг. те) ђи кĕске вăхăтра хатĕрлесе çитермелле;

у) тырпул хатĕрлевне иртермелли орканисатсиллĕ ĕçсене анлăн сармалла, хатĕрлев аппаратĕнђе ĕçлеме кирлĕ çынсене авкустăн 5-мĕшĕнђен кайа йулмасар тупса çитермелле, унђђенех йалсоветсем çумĕнђе тырпул хатĕрлевне иртерме пулăшакан комиççисем тумалла, пур колхоссенђе те йышăннă план тăрăх патшалăха тырă парассишĕн ответлă пулма правлени ђленĕсене уйăрмалла.

Пленăм тырă паракансем çине пўрократла пăхнисене, ђеретсене, рашђот вăхăтра паманнине, т. ыт. те хыттăн пĕтерме хушат̆.

Колхоссемпе хатĕрлев орканисатсисем хушшинђе укçасăрах рашђот тăвас йĕркене пăрахăç тăвас, Сакотçернопа МТС-сене колхоссемпе çинђех рашђот тума хушас; Патшалăх панкĕн канturĕн тырă илекен пунктăсем çумĕнђи кассăсене йышлăлатмалла.

Пĕлтĕр колхоссене вĕсем панă тырăшăн тўленĕ ђух хăйсем килĕшмесĕрех тĕрлĕрен тытса йулса, отђисленисем туса пĕтерни, ăна пула колхоссем укçине ытла та сахал илнисем пулнă,—вăл йапалана кăçал тăвас пулмаст̆.

Пленăм, тырпул хатĕрлевĕн тĕп планне тултарнипе пĕрлех кĕреçе тырри пухас, вăрлăх, кивçен панă тырăсене кайалла тавăрас, суртлă тырăсем хатĕрлес ĕçсене те тивĕçлĕ хак пама, плансене кирлĕ срукра тултарса пыма хушаť.

Пленăм ак çакна астутарса калаť: тырпулпа ним ђарусăр суту-илӳ туни, Тĕпкомпа правиттĕлствă йышăннă тăрăх, тырпул хатĕрлевĕн пĕтĕм планне тултарнă хыççăн йанварĕн 15-мĕшĕ хыççăн, тин пулма пултараť. Пленăм астутараť: кулакла елементсемпе çпеккуђантсем колхос суту-илӳне сарассипе хӳтĕленсе патшалăхăн тырпул хатĕрлев планне тултарас ĕçе пăсса пăрахма хăтланĕç. Çав майпа та тырпул хатĕрлевĕн ђи пуçламăшĕнђех тырпулпа çпеккуђатси тунипе пит хытă кĕрешни кирлĕ. Ку ĕçе ак çак лосăнкпа тумалла:

**„Колхоссен пĕр ђентнĕр тыррине те илсе сутакансене, çпеккуђантсене памалла мар“.**

Парторканисатсисен ђи пысăк сатађĕсенђен пĕри куллен кирлĕ таварсене мопилисатсилесси, вĕсене йалсене хăвăрт çитересси пулаť. Пленăм Çăмăл промышлĕннăç халăх кăмиссариатĕн претприйаттийĕсем, алăстипе промысла копператсийĕ, т. ыт. те куллен кирлĕ таварсем туса кăларнине тĕрĕслес ĕçе вăйлатма хушаť.

Партти, тата совет орканиçатсисене йала йамалли таварсене урăх çĕре йарса айăпа кĕрекенсене хыттăн айăплама хушас.

## IV. Тупăшпа тырпула валеçесси.

Тырпул лайăх пулни, тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕни „колхоссен ĕçне лайăхлатассинђе тĕп выранта тăракан—колхос тупăшне хăпартас вирлĕ сатађа“ (Какановиђ) пурнăçа кĕртме май параť.

Пленăм партти орканисатсисене çакăнта кăтартнă тĕп çитменлĕхсене пĕтерме кĕрешĕве татăклах вăйлатса йанипе, тырпул тăкаланђăкне, ĕç кунĕсене салатса йанисене пĕтернипе, çав шутах тата пур происвотствăллă мар тăкаксене татăклăн пĕтерсе пынипе ĕç кунĕн хаклăхне ӳстермелле тума хушаť. Парттипе колхос орканисатсийĕсен кунпа пĕрлех, пур колхоссенђе те тупăшсене валеçессине ĕç кунĕ тăрăх, прикатирсемпе колхоçнĕксем тунă ĕçĕн пахалăхне хисепе илнипе туса пыма хушаť: кунта пĕртанлăх, йатак тăрăх валеçни çтелшђĕнăна пăсни йахăнне те пулмалла мар.

Тырпул хатĕрлев планне тултарнă хыççăн, вăрлăх фонђĕсемпе выђăх апат фонђĕсем туса пĕтернĕ хыççăн ытти пĕтĕм тырпула колхоçнĕксем хушшинђе ĕç кунĕ тăрăх валеçмелле, ку тĕлешпе халиђђен ĕç кунĕ тăрăх тырран илмелли виçе туса панă йĕркесене пăрахăçа кăларас.

Партти Тĕпкомĕ ийулĕн 5-мĕшĕнђе йышăннă тăрăх çакăн пек тăвас пулаť: колхос патшалăха панă (сутнă) тырăшăн илекен укçаран тĕп пайне колхоçнĕксене аванс йĕркипе вĕсем ĕçлесе тунă ĕç кунĕсем тăрăх памалла.

Тырпула валеçес, тата аванссем парас умĕн колхос правленисен кашни колхоçнĕке мĕн ђухлĕ парасси çинђен хатĕрленĕ

татăклă плансене колхоçнĕксен пуххинҫе çирĕплетмелле тăвас пулаť.

Атминистратсипе тытăм расхуҫĕ ҫылай колхоссенҫе тупăша тӳсме çук нумай çисе йанине (хăшпĕр çĕрте 15% çитет) палăртса, Ҫăвашколхоссойуса, çав шутах тата вырăнти партти орканисатсисене, çак расхута колхоссем илекен валовой тупăшран 3 проҫҫăн ытла пулмалла мар тума хушас.

Çапла тăвас пулаť: атминистратсипе тытăм аппаратĕнҫе ĕçлекенсем тыррăн колхоçнĕк вăтамран илекен виçерен ытла илме пултараймаççĕ.

ÉХИ йалти оркăнĕсен ҫи пысăк сатаҫĕ вăл—колхоссенҫи ревиçи комиççисен ĕçĕсене йĕркелесе йарасси, колхоçнĕксене, ҫи малтан—колхос активне усăçăр расхутсем кăларассине, хуçасăрлăха пĕтерме кĕрешĕве мопилисатсилесси пулаť.

Партти райкомĕсен, районри йертсе пыракан рапотнĕксенҫен кашни 3—5 колхос çумне пĕререн кайа мар çыпăçтармалла—çак рапотнĕксен çак колхоссенҫе тупăшпа тырпула тĕрĕс, тата вăхăтра валеçсе пĕтерес ĕçшĕн ответлă пулмалла.

ÉХИ претçетаттĕлĕсемпе райколхоссойус претçетаттĕлĕсен колхоçнĕк хăйне ваҫҫи тупăш тĕрĕс илмен пирки панă шалăпăсене 3—5 кун хушшинҫе пăхса тухассишĕн хăйсен ответ тытмалла.

Ҫылай районсенҫе Партти Тĕпкомĕ малтан çапса илнĕ тыррăран ĕç кунĕ тăрăх 10—15 проҫҫăн памалла тесе кăтартса панисене пурнăçа кĕртменнине палăртса, партти райкомĕсемпе колхос оркăнĕсен пур колхоссенҫе те аванса опесаттĕлни йĕркипе памалла тума хушас.

Пленăм—тупăшсемпе тырпула валеçесси колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклетессинҫе тĕп ункăсенҫен пĕри пулнине асăрхаттарса, пленăм тырпула тĕрĕс, тата вăхăтра валеçсе пĕтерме хушаť; çак пĕтĕм ĕçе 1933-мĕш çулхи йанварĕн 15-мĕшҫен туса пĕтермелле. Пленăм тата çакна кăтартаť: çак вăхăт тĕлнех 1931-мĕш çулхи тырпула валеçнĕ ҫухне ĕç кунĕшĕн илеймесĕр йулнă колхоçнĕксене те пĕтĕм ĕç кунĕшĕн тӳлесе татмалла тăвас пулаť

Хуçалăхра йертсе пыракан тĕп пайсене малашне те хăпартса пынипе пĕрлех, пленăм партти орканисатсисене ытти тупăшлă пайĕсене, тата йалхуçалăх протуктисене ĕçлесе хатĕрлекен претприйаттисене вăйлатма кирли çине çивĕҫҫĕн пăхма калаť.

Пленăм колхос катăрĕсем хатĕрлессине, тата колхос активĕпе ĕçлессине вăйлатма кирлине кăтартса параť. Тĕпком колхос катăрĕсене çирĕплетесси çинҫен постановлени йышăннă хыççăн, хăшпĕр районсенҫе колхос претçетаттĕлĕсемпе прикатирсем улшăнса тăма ҫарăнманнине палăртса, пленăм Тĕпком решшенине пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме, çак решшенийе пăсма пăхакан районри оркăнсене ответ тыттарма хушаť.

Партти орканисатсисем хресҫен хĕрарăмĕсем хушшинҫе, уйрăмăнах калхоçнĕтсăсем хушшинҫе йапăх ĕçленине палăртса, пленăм мĕн пур колхоссенҫе телекаткăсен пуххисене (телекаткăсен ушкăнĕсене) орканисатсилеме, тата вĕсене йертсе пырас ĕçе ҫăннипех вăйлатса йама калаť.

Пленăм партти, колхос тата совет орканисатсисене колхоçнĕксемпе колхоçнĕтсăсен кулленхи нушисене витсе пырассишĕн тăрăшни колхоссене çирĕплетме пулăшакан паха майсенђен пĕри пулса тăнине кăтартса парат́.

Пленăм ađа йаçлисем, ađа плошђаткисем тăвассине, мунђасем хатĕрлессине, уйра апат çимелле тăвассине, колхоçнĕке хăйне ваđђи усă курма лаша парассине тата ыт. те вăйлатма хушат́.

Парттин районри орканисатсисен парттипе правиттĕлствă колхоссемпе колхоçнĕксене панă ђкоттăсемпе çăмăллăхсене пĕтĕмĕшпех, тата пур çĕрте те (хатĕрлевсенђе, налок панă ђухне, кивçенлĕх ĕçĕнђе, тавар тăратассинђе, хут вĕренме йарассинђе тата ыт. те) вырăна çитерессишĕн кĕрешмелле.

Пленăм уйрăм хресђенсене колхоса кĕртес тĕлĕшрен орканисатсипе парттиллĕ-массăллă ĕçе вăйлатасси çине хытă çавăрăнса пăхма хушат́.

Машшинпа трактăр стантсисем йалхуçалăх происвотствине орканисатсилес тĕлĕшпе çирĕп вырăн йышăнђĕç. Анђах, çапах та, МТС-сем çапла малта йертсе пынине пур çĕрте те татăклăн ăнланса илеймен-ха.

Пленăм парттипе совет орканисатсисене колхоссене хуçалăхпа орканисатси йенђен çирĕплетес, тата тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре МТС-сен вырăнне пысăклатма, МТС-сене лайăх ĕçлекенсем парса çирĕплетме хушат́.

## V. Колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенђен çирĕплетесси çинђен.

Партти Тĕпкомĕ хăйĕн 1931-мĕш çулти авкустăн 2-мĕшĕнђе йышăннă постановленинђе партти орканисатсисене „колхоссене вĕсен хађхи ертел тапхăрĕнђе хуçалăхпа орканисатси йенђен çирĕплетессине тĕп ĕç вырăнне хума“ хушнă. Ăна тума ĕçе тĕрĕс орканисатсилессине, колхоçнĕксен ĕçне шута илессине, çтелшђĕнăна пурнăçа кĕртессине, ĕç пахалăхĕшĕн кĕрешессине, пысăк таварлă колхос фермисем орканисатсилессине, катăрсем тăвассине çирĕплетсе пымалла. Çав вăхăтрах тата коллективисатси прођђăнне вĕрсе хăпартса ўстерсе йарассишĕн йурăхсăрла ăшаланнине хирĕç кĕрешсе пымалла. Анђах та, хăшпĕр районри орканисатсисем Тĕпкомпа Опком темиçе хутђен панă кăтартусене, тата парттин XVI-мĕш конферентси йышăнăвĕсене пăхăнмасăр парттин колхос строиттĕлствинђи çулйĕрне пăсса пыни пулнă. Вăл парттин хăшпĕр орканисатсисем колхос пурнăçĕнђе атминистратсилле йĕрке тытнинђен, колхоçнĕк çине лайăххăн асăрхамасăр, пўрократла пăхнинђен, ертел вăхăђĕ урлă сиксе каçнинђен, ĕнесемпе вĕтĕ выђăхсене вăйпа пĕрлештернинђен т. ыт. те курăнат́.

„Колхоçнĕк колхосра шултра пĕрлешўллĕ хуçалăх уссине илеймест пулсан, вăл уйрăм пурнакан хресђен хăйĕн хуçалăхĕнђенех тупăша нумайтарах илнине тата нумайтарах ĕçлесе тупнине курат́ пулсан, унăн кăмăлĕ вара пăсăлат́, колхосран тухнинђе

май шырама пуçлаҫ" (Какановиҫ),—çакна партти орканисатсисем ăнланса илеймен.

Пленăм партти орканисатсисене колхоссене вĕсен ертеллĕ вăхăтĕнҫе орканисатсипе хуçалăх йенҫен çирĕплетес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлесе пыма хушаҫ. Колхоссен ĕçри пуçаруллăхне вăйлатмалла, колхоçнĕксен ĕç тухăçлăхне, тата вĕсен ĕç тистсиплинине хăпартмалла, колхоссенҫи йаланлăха тунă происвотствăллă прикатăсене çирĕплетмелле, колхос катăрĕсем хатĕрлессине, тата актив хушшинҫе ĕçлессине лайăхлатмалла, колхос происвотствинҫе опеслиҫкăна пĕтерсе лартмалла, колхоçнĕксен ĕçне пахалăхпа шут йенҫен хакласа, вăхăтра тырпул тупăшне валеçмелле, колхосра шут ĕçне çирĕплетсе çитермелле, т. ыт. те. Çаксем пурте колхос строиттĕлствинҫе хаҫ ĕçе татса панине асра тытса тăмалла.

Пленăм пĕтĕм партти, совет, колхос орканисатсисене колхосри выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçе хăвăрттăн вăйлатасси çине çивĕҫҫĕн пăхма хушаҫ. „Кашни колхоçнĕкăн хăйĕн ĕни, вĕтĕ выҫăх, ҫăх-ҫĕп пултăр" (Тĕпкомăн 1932-мĕш çулти февралĕн 26-мĕшĕнҫе йышăннă постановлениҫен),—колхоçнексене çакăнта та нумай пулăшса пымалла.

Пленăм Тĕпком лашасене пăхса усрассипе вĕсен йышне ўстерессн çинҫен йышăннине пурнăçа кĕртессине пысăк вырăна хураҫ. Лашана тĕрĕс пăхас ĕçе йĕркелесе йамалла, унтан та ытларах лашасене лайăхлатассишĕн, тата ўыхасене çитĕнтерессишĕн хытă кĕрешмелле.

## VI. Партти ĕçнэ йалта çĕнĕллэ йĕркелесси çинҫен.

Колхсссене тĕреклетессишĕн кĕрешесси колхос массисене вĕрентес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлесси, колхоссенҫе çĕнĕ, ҫăннипех сотсиалисăмла тистсиплинă тăвасси партти орканисатсисенҫен уйрăмăнах пысăк политтĕкла активлăх, тата массăсемпе ҫи çывăх çыхăнса тăнине ыйтаççĕ.

Хăшпĕр районсенҫи партти орканисатсисем йалти партти йаҫейккисене наҫар йертсе пыни çине, çав майпа йалта йертсе пырассинҫе хуçасăрлăх пулса тăни çине пленăм тепĕр хут кăтартаҫ.

Пленăм кашни парторканисатси, кашни партги кăмиттеҫĕ, партти йаҫейкки, кашни йалта ĕçлекен комунис колхос происвотствине тĕплĕн пĕлмелле, унăн пур пайĕсене те ăнланмалла, ĕç шутне, тата хуçалăха орканисатсилессинҫе, ĕçе атминистратсиллĕ йĕркепе тăвассине хирĕç, колхоссемпе колхоçнĕксене каман-тăпа йертсе пынине хирĕç, тата вĕсен пурлăхĕпе тупăшне саккунсăр тыткалама хăтланнине хирĕç татăклăн кĕрешсе пырса, колхоссене татăклă пулăшу памалла тесе асăрхаттараҫ.

Партти райкомĕсен колхоссене йертсе пырас ĕçри тĕп çитменлĕхсенҫен пĕри тесе, пленăм партти райкомĕсем колхосра тăракан комуниссен итейлă политтĕкла пĕлĕвне хăпартассишĕн,

колхосри йађейккӑсен ӗҫне тӗреклетсе лайӑхлатассишӗн ђӑннипех кӗрешменнине, колхосри йађейккӑсене колхос строиттӗлствин практӗкла ыйтӑвӗсене пурнӑҫлассипе, тата колхос активне ӳстерес тӗлӗшпе нађар пулӑшса пынине, ђас-ђасах ҫакнашкал пулӑшӑва районри ђентӑртан уполномођђӑннӑйсем йарса улӑштарнине шутлаӑ.

Опком пленӑмӗ партти райкомӗсене колхоссенђи йеђейккӑсене йертсе пырас ӗҫе татӑклӑнах лайӑхлатма, тата колхосри йађейккӑсене ӗҫре ђӑн-ђӑн пулӑшу парассишӗн, колхосри йађейккӑн ҫекреттӑрӗпе куллен ӗҫлессишӗн колхоссем ҫумне ҫирӗплетнӗ йертсе пыракан рапотнӗксен ответлӑхне хӑпартма хушаӑ.

Парттипе комсомол орканисатиссен вӑйне пӗтӗмпех йалхуҫалӑх происвотствин татӑклӑн уђаскисенђе пӗтӗҫтермелле. Комуниссем, комсомолӗссем происвотствӑллӑ прикатӑсенђе ђӑн-ђӑн утарнӗксем пулса массӑсен орканисаттӑрӗсем, сатанисене тултарас ӗҫре пуҫарса пыракансем пулмалла.

Пленӑм йалсоветсемпе комсомол, тата ытти йалти орканисатсисене тата ытларах тӗреклетмелли, вӗсене йалхуҫалӑхпа колхос происвотствин ыйтӑвӗсем йенелле ҫавӑрмалли, хуҫалӑх пайӗсене уйрӑмӑн йертсе пымалли, тата парттипе правиттӗлсвӑ кӑтартӑвӗсене пурнӑҫланине тӗрӗслемелли ҫине кӑтартаӑ.

Пленӑм пиђет ӗҫӗ, уйрӑманах районрипе йалти хаҫатсен ӗҫӗ, колхос происвотствине йӗркелес, тата йалхуҫалӑхне хӑпартас ӗҫре сисӗмлӗ мар тесе паллӑ тӑваӑ. Пленӑм хаҫат ретаксисене пиђет ӗҫне лайӑхлатма хушаӑ. Хаҫат-шурналсем малта пыракан колхоссен, прикатӑсен, колхоҫнӗксен ҫитӗнӗвӗсене кӑтартнӑ майӗпе, массӑсене клас тӑшманӗсемпе вӗсен акенђӗсене хирӗҫ кӗрешӗве мопилисатсилесе, колхос происвотствине тата йалхуҫалӑхне йертсе пырас ӗҫри ҫитменлӗхсене тӗпренех пӗтерессишӗн, колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх йенђен тӗреклетессишӗн, прикатӑсене тӗреклетессишӗн, йалти колхосри ҫирӗп партти орканисатсишӗн кӗрешме тивӗҫлӗ.

ПСК(п) Партти Тӗпкомӗпе Крайкомӗ йертсе пынипе кулаксемпе вӗсен акӗнђӗсене хирӗҫ—сылтӑм оппортуниссемпе „сулахай“ пӑрӑнђӑксем тӑвакансене хирӗҫ, контр-револђутсиллӗ тротскисӑмпа ессершђӑнӑна хирӗҫ малашне те пӗр килӗшӳсӗр кӗрешсе пырса, партти тӗп йӗрӗнђен пӑрма хӑтланакансене татӑклӑ отпор парса, Ђӑваш партти орканисатсийӗ ђӑваш ӗҫхалӑхне сотсиалисӑм пӗтӗмпех ҫӗнтерессишӗн, 2-мӗш петтилеткӑн сатађӗсене пурнӑҫлассишӗн, классӑр сотсиалисӑм опђӗстви тӑвассишӗн кӗрешӳ ҫулӗпе илсе кайаӑ.

# ТУПМАЛЛИ

*Стр.*


1. Совет сойусĕнђе колхос хуçалăхĕ ӳсе çирĕпленсе пыраӗ . . . . . . . 3
2. Айакран йалхуçалăх протукси кӳрекен респуплĕкрен таварлă протукси кăларакан пулса пыратпăр . . . . . . . . . . . . . 5
3. Кашни пуђахшĕн, пĕрђĕшĕн кĕрешмелле . . . . . . . . . . . . 7
4. Тырпул пухса кӳртес кампанин малтанхи урокĕсем . . . . . . . . . 9
5. Тырпул хатĕрлев планне тулгарасси колхоссен ђи малтан тумалли ĕç 14
6. Колхосла суту-илӳ -колхоссене тĕреклĕлетме пулăшаӗ . . . . . . . 20
7. Кĕраки—ответлă сатађ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
8. Колхоссене органисатсипе хуçалăх йенђен тĕреклелессси тĕп сатађ пулаӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
9. Икĕ фронтпа кĕрешессине вăйлатмалла . . . . . . . . . . . 29
10. Çĕнĕлле ĕçлемелле, çĕнĕлле йертсе пымалла . . . . . . . . . . 33
11. Парттин йалти ĕçĕсем çинђен . . . . . . . . . . . . . . 37

**Хушса çырни:**

ПСК(п)П Ђăваш Опкомĕн 3-мĕш пленăмĕ 1932-мĕш çулти ийулĕн 30-мĕшĕнђе йышăннă постановлени . . . . . . . . . . . . . . . 43
1. Тырпула вăхăтра, тата пĕр такаксăр пуçтарса кĕмелле . . . . . . . 46
2. Кĕраки кампанийĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47
3. Тырпул хатĕрлевĕпе колхосла суту-илӳ çинђен . . . . . . . . . 48
4. Тупăшпа тырпула валеçесси . . . . . . . . . . . . . . . . 50
5. Колхоссене органисатсипе хуçалăх йенђен çирĕплетесси çинђен . . . . 52
6. Партти ĕçне йалта çĕнĕлле йĕркелесси çинђен . . . . . . . . . . 53


---


Послано в произв. 14|VIII—32 г.
Подписано к печати 7|IX—32 г.
Редактор П. Иванов
Техредактор Н. Степанов

Уп. Чувашлита № 1507. Заказ № 1183. Тираж 5100 экз.

Ст. ф. б. 260×185. Об'ем 3,5 п. л. 58000 п. з. в п. л.

цена 30 коп.

ОП—1

С. П. Петров

# ЗА УСИЛЕНИЕ РУКОВОДСТВА СЕЛЬСКИМ ХОЗЯЙСТВОМ

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

ЧЕБОКСАРЫ ◆ ◆ 1932